К63.3
Е71
Ч-41543

Нина Михайловна ЕРИЛЕЕВА

# УПАКАССИ - ТӐВАН АННЕ СӐПКИ...



Национальная библиотека ЧР
4-041543





45рис.

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К 63,3
Е 71

Нина Михайловна ЕРИЛЕЕВА

# УПАКАССИ - ТĂВАН АННЕ САПКИ...

Çĕрпӳ
2005

УДК 908
ББК 63.3 (2Рос. Чув)
Е 71

ДАРСТВЕННЫЙ ЭКЗ.

Çак кĕнекене кăларма пулăшнă хисеплĕ спонсорсене:

район администрацине,
район депутачĕсене,
«Сĕтел-пукан» ООО фабрикин пуçлăхне
Н.А. Корнилова,
Кушлавăш лесничествин лесничине Г.В. Ерилеева,
ĕçпе вăрçă ветеранне А.И. Илларионова,
Елдыревсен, Анисимовсен çемйисене,
М.С. Михайлова,
Г.Х. Петрова чĕререн тав тăватăп.

ч-41543
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
ПРОВЕРЕНО 2010 2 МАЙ 2017

Лицензия ЛР № 040992 от 28 июля 1999г.

Сдано в набор 07.11.2005г. Подписано в печать 29.11.2005г.
Бумага офсетная. Гарнитура Arial Cyr Chv FVI.
Формат 60x84/16. Усл. печ. листов 6,5.
Заказ № 3164. Тираж 700 экз.

Отпечатано в ГУП ЧР "Цивильский издательский дом"
Минкультуры Чувашской Республики.

429900, Чувашская Республика,
г. Цивильск, ул. Просвещения, 41.

© Оформление - компьютерный центр
ГУП ЧР «Цивильский издательский дом», 2005.

*Юратнӑ аттепе аннене халаллатӑп.*

*Упакасси – тӑван анне сӑпки.*
*Санран хакли мӗн пур-ши ҫӗр ҫинче?*
*Эс пурнӑҫ кӑвапи, чӗре таппи,*
*Сан сӑнару ялан куҫ умӗнче.*



# ТĂВАН ЯЛ

Çуралнă ял. Манми кĕтес,
Епле чечен, асамлă эс.
Мĕнпе туртатăн ху патна,
Ас илтерсе манми ятна?
Çак Кушлавăш уйĕнче
Мĕнпур ялсен хушшинче
Пуринчен те илемли -
Савнă ял Упакасси.
Сăваплă çĕрĕм, çакăнта
Чун парнелерĕн ман йăха.
Сĕткенӳпе вăй-хал пиллерĕн,
Анне пек юратса ӳстертĕн.
Çак Кушлавăш уйĕнче
Мĕнпур ялсен хушшинче
Ман чĕрешĕн чи хакли -
Тăван ял, Упакасси.
Вĕлтренĕн икĕ енĕпе
Ларатăн ешерен сад пек,
Пур кăмăлтан ентешсене
Телей кӳретĕн çĕр-аннем.
Çак Кушлавăш уйĕнче
Мĕнпур ялсен хушшинче
Ку таврара чи палли -
Манăн ял - Упакасси.

Асăрхаттарни: Вĕлтрен - ку тăрăхри юханшыв ячĕ.

## УМ CĂMAX

Шăпа çăмхи пурнăç çулĕ тăрăх ерипен куссах, кунсерен пысăкланса, йывăрланса пырать. Çак аслă та кăткăс тĕнчере хĕвел çути курма пуçланăранпа çур ĕмĕр иртрĕ ĕнтĕ. Пурнăçăм хам çуралнă çĕр çинче иртнĕрен-ши, те тăван вырăнсене кашни кунах курма пултарнăран, эпĕ иртнĕ çулсен йывăрлăхне питĕ туймастăп. Тăван çĕрĕм, малтан хаваслă ачалăхăмăн сăпки пулса, çуратнă аннемĕр пулса, хăй чĕрçи çинче вылятса-култарса ӳстерчĕ. Каярахпа, манми çамрăклăхра, хăйĕн илемĕпе чунри хĕлхемсене сĕртĕнсе, ачаш та таса туйăмсем çуратрĕ. Паянхи йывăр саманара мана çĕрĕм-шывăм кулленхи пурнăçра вăй-хал тата шанчăк кӳрсе тăрать. Авалхи çынсем çапларах калани пур: «Кам хăй çуралнă çĕр çинче ӳссе, хăй пурнăçне çавăнтах irттерет, кайран унтах çĕре кĕрет, çавă телейлĕ». Эпĕ те хама телейлисен шутне кĕртесшĕн.

Акă, кăштах çулсен виттине сиретĕп те, шавлă та савăнăçлă ачалăхăм куç умне тухса тăрать. Халĕ ĕнтĕ ачалăхри туссем нумайăшĕ çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсене саланса пĕтрĕç. Анчах вĕсемпе кунти улăх-çарансем çинче ывăннине, хырăм выçнине пĕлмесĕр чупнисене, вăйăсем вылянисене, кунне вĕçĕ-хĕррисĕр кунти пĕвесенче шыва кĕнисене астусах тăратăп. Тата ăçтан-ха манăн алла пурак йатса çывăхри çырмана çырлана чупнисене? Ун чухнехи сăнсем, тăван тавралăхăн илемĕ куçа яланах илĕртсе тăраççĕ. Тен, аякран килнĕ хăш-пĕр çынсене манăн Упакасси тăрăхĕ килĕшсех те каймасть пулĕ, анчах пирĕншĕн унран хаклăрах, çывăхрах кĕтес çĕр çинче çук! Тăван ялăн кашни сукмакĕ, кашни лупашкийĕ, çĕр лаптăкĕ чуна ачашлать, пурнăçăмăн тĕрлĕ саманчĕсемпе çыхăннăран-ши, хăйне манма памасть.

Çуралнă яла питĕ килĕштернĕрен-ши, тăван çĕрĕн пурнăçри пĕлтерĕшне ăс-тăнпа ăнланма пуçласан, манăн ун çинчен ытларах та ытларах пĕлес килетчĕ. Ватă кинемейсемпе

пурнăçра чылай хура-шур курнă шур сухаллă мучисенчен ыйтса-тĕпчесе чылай йăлăхтарнă пулĕ. Хаклă ентешĕн - Çемен Элкерĕн кĕнекисенчи сăнарсене, пулăмсене куç умне кăларма тăрăшаттăм, вĕсене паянхи кунра, хальхи вырăнсенче, ентешсенче шыраса тупма пикенеттĕм. Хăçан та пулин ытларах пĕлессе, пĕлнине вара çамрăксене каласа парасса е çырса хăварасса шанса пурăннă.

Хыçăмра - иртнĕ çулсен пĕчĕкех мар пуххийĕ, умăмра - ĕмĕр çамрăк та ялан савăк чунлă юратнă ялăм, çуралнă кĕтесĕм, унăн асамлă вăрттăнлăхĕ, виçĕ ĕмĕре тăсăлакан кăткăс кунçулĕ. Ял-йышсем, ентешсем, кулленхи ĕç-пуçран пушанса, хавхалануллă та тулли кăмăлпа тухар-и паян хамăр тавралăхăн сукмакĕ-çулĕсем çине: ял вăрттăнлăхне çĕнĕлле ăнланса илме, унăн илемĕпе чунран киленме, çамрăк ăру валли сăваплă сăмахсем тупса каласа хăварма. Хисеплĕ поэт-ентешĕмĕр - Çемен Васильевич! Сана ял-йыш ялан астуса тăрать, Санăн сăввăр-юррăра, кĕнекĕрсене юратса вулать. Эс пирĕншĕн - тăванран та тăван. Тен, санăн ăшри шухăш-ĕмĕтсем пурте хут çине ӳкеймерĕç, пурнăçу вăхăтсăр татăлнине пула, ху мĕн калас тенине пĕтĕмпех каласа ĕлкĕреймерĕн те пулĕ. Эс çырнисене, пĕтĕм кăмăлтан хакласа, санăн ĕмĕтӳсене ăша хывса çак пĕчĕк кĕнекене кăларма шутларăм.

## ТĂВАН ЯЛ ИСТОРИЙĔ

Чи малтанах эпир сирĕнпе, ваттисен йăлисене пăхăнса, Пумилкке çырминелле çул тытар. Вăл авалхи Малтикартиш урамĕнчен çурçĕр-хĕвелтухăçнелле вырнаçнă. Ĕлĕкрен çывăхри урамсенчи çынсем кунта çу иртеспе вилнĕ тăванхурăнташĕсене асăннă. Вилнисен ячĕпе ятарласа апат-çимĕç пĕçернĕ, сăра вĕретнĕ. Малтан çывăх тăванĕсене пуçтарса, килĕсенче асăнса илнĕ, ун хыççăн вара Пумилкке çырмине тухнă, апат-çимĕçпе чӳкленĕ. Юлашкинчен хăйсен вилнĕ тăванĕсене аса илсе, хурланса пумилкке юрри юрланă:

Шурӑмпуҫ килӗ шуралса,
Санӑн сӑну ҫук-ӗҫке,
Чӗкеҫ килӗ чӗвӗлтетӗ,
Санӑн чӗлхӳ чӗмсӗр-ҫке.
Ир тӑрсан та, каҫ пулсан та,
Санӑн вырӑну пушӑ.
Эпир сана асӑнатпӑр,
Эсӗ пире ан асӑн...

Ялти ват ҫынсем каланӑ тӑрӑх, Пумилкке ҫырмисем пирӗн татах та пур. Ҫавна пӗлес килет: мӗншӗн-ха пумилккене ҫырмасен хӗрринче урттернӗ? Тепри вара хальхи Шӑхча (Октябрьски) урамӗн ҫурҫӗр енче. Халӑх хушшинче ӑна ытларах «Вилнӗ ҫын ҫырми» тесе каланине илтме пулать. Кунта ҫывӑхри урамсем пумилкке ирттернӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн 1949 ҫулта унран ҫурҫӗр еннелле, ҫур ҫухрӑм аяккарах масар уҫӑлнӑ. Савкка урамӗпе Малтикартиш хушшинче, Аслати кӗперӗнчен пуҫласа, Пумилкке урамӗ те пулнӑ. Хӑш-пӗр ҫынсем ӑна Мӑталкка урамӗ тенипе пӗлеҫҫӗ. Ку урам 1925-47-мӗш ҫулсенче пулнӑ. Унта пурӗ те 7-8 кил ҫеҫ шутланнӑ. Хӑш-пӗр кил хуҫисем, ял айккинче юласшӑн пулманнипе-ши, шалалла кӗнӗ, теприсем кунтан кӳршӗ яла куҫни те пулнӑ, виҫҫӗмӗшӗсен кил вырӑнӗ ҫын юлманнипе саланнӑ. Вырӑнӗ-вырӑнӗпе пумилккене чиркӳрен тухсан,уяв ¯умӗсемпех, турӑшсемпе, апатҫимӗҫ чикнӗ хутаҫсемпе пуҫтарӑнса тӳрех кайнӑ. Унтах пӑтӑ пӗҫернӗ (япалисене малтанах хатӗрлесе хунӑ пулнӑ), чӳкленӗ, хурлӑхлӑ юрӑсем юрласа, чӗрисене пусарнӑ. Пирӗн тӑрӑхри малтанхи ҫынсем язычниксем пулнӑ. Христос тӗнне йышӑнманнипе ӗлӗкхи йӑласене пӑхӑннӑ. Пӗрремӗш Петӗр патша чиркӳ влаҫӗсемпе туслах мар пулнине историрен пӗлетпӗр, ҫавӑнпа кивӗ йӑласене тытса пыма пысӑк чӑрмавсемех пулман.

18-мӗш ӗмӗр пуҫламӑшӗнче 1-мӗш Петӗр патша Атӑл ҫинче пурӑнакан халӑха, ҫав шутра чӑвашсене те, ирӗксӗрлесе вырӑс тӗнне йышӑнтарнӑ. Чӑвашсенчен чылайӑшӗ ҫӗнӗ йӗркене хирӗҫ пулнӑ, вуншар ҫул хушши вӗсем тӗшмӗше те, Христоса та ӗненсе пурӑннӑ. Чиркӳсем лартма хресченсен килӗсенчен ҫӑмарта, сӗт-турӑх, укҫа-тавраш пухнӑ. Чиркӳсе-

не кашни ялтах тăвайман. «Чăвашсем чиркĕве малтанхи вăхăтра çурта çутма çеç çӳренĕ. Чиркӳрен таврăнсан вĕсем малтанхи турăсенех асăнса киреметре те çурта çутнă. Киремете пăхăр е кĕмĕл укçа параççĕ, шурă тата хура çăкăр татăкĕ, урхамах пĕремĕк, çăмарта хураççĕ. Чăваша укçа тем пек кирлĕ пулсан та вăл илмест - киреметрен кайса иличчен вăл вилме хатĕр»,- тесе çырать В.Магницкий хăйĕн «Тĕне хирĕçле ĕçсем» тĕрленчĕкĕнче. Часанисене е часавайсене лартассине, каларăмăр ĕнтĕ, чăвашсем вырăссенчен тĕслĕх илнĕ. Чăваш ялĕсенче часавайсем çурт пек мар, юпа евĕрлĕ пулнă. Пирĕн ялта та (чиркӳ пулманнипе-ши.) часавай юписем темиçе те пулнă. Вĕсенчен пĕри чи аслăраххи ял варринче (ĕлĕкхи шкул пахчи тĕлнелле) вырнаçнă. Юпан çӳлти пайĕнче пысăк турăш лартмалли вырăн хăварнă. Ял çыннисем ун патне пырса пуç тайнă, киремете чысланă пек часавая та чысланă. Пурнăçра пулса иртекен самантсенче часавай патне пырса пил ыйтнă. Часавая турă вырăнне хурса ырăлатма парне панă.

Ялти ытти часавай юписем: Якур Викторович килĕнчен инçе мар, Тури урамра - Степан Иванович Ивановпа Алексей Петрович Ерилеев хушшинче (унта хушă - пушă вырăн пулнă), Шепекече аннă çĕрте çул хĕрринелле, Çăл çырми çинче те часавай юписем лартнă. Ача-пăчана вĕсен çывăхĕнче выляма, унта пăрахнă укçасене е ытти япаласене тĕкĕнме хушман, инкек пулассипе хăратнă.

Пĕрремĕш Петĕр патша вилсен, çирĕм-вăтăр çултан вăрман хушшинелле тарнă чăвашсене те христиансем туса хунă. Çавăнпа та Кушлавăш ялĕнче 1748 çулта йывăçран пысăках мар чиркӳ тунă. Сăмах май, çав чиркӳ çинчен калани вырăнлă пулĕ тетĕп.Тĕп архиври документсем тăрăх ку-чиркӳ - храм Христос чĕрĕлсе тăнă ятпа уçăлнă. Кушлавăш тăрăхĕнче унччен чиркӳ таврашĕ пулман. Çавна пула пĕр вунă çула яхăн куçса килнĕ çынсем Çĕрпӳ чиркӳне ача шыва кĕртме, венчете тăма çӳренĕ. Çулĕ çывăх пулман пулсан та, Кушлавăшра храм уçăлсан та, тĕп вырăна юлнă тăван-пĕлĕшсемпе курса калаçас тĕллевпе çĕнĕкушлавăшсем Кивкушлавăш тăрăхне çӳренĕ, вĕсем патĕнче хăнара пулнă. Пĕр-пĕрин патне пырса çӳрессси чылай çулсене тăсăлнă.

Кушлавăш чиркӳне темиçе хутчен майланă,юсанă, анчах 1832 çулта,темĕн сăлтава пула, вăл çунса кайнă. Халăх хушшинче ăна аçа çапнă тесе шутлаççĕ. Н.А.Архангельский священник «Церкви и приходы» кĕнекипе Хусан епархийĕн справочникĕнчен çакна пĕлме пулать: 1841 çулта Кушлавăшра малтанхи çунса кайнă чиркӳ вырăнне çĕнĕ чиркӳ уçăлнă. Вăл, ялтан 3 çухрăмра вырнаçнăскер, Христос чĕрĕлсе тăнă ята (Воскресенская) официаллă майпа илнĕ,куллен чиркӳ уявĕсене 6 пин ытла турра ĕненекен çӳренĕ. Чиркӳре икĕ священник, икĕ псаломщик, тепĕр тиякăн пулнă. Священниксенчен пĕри Александр Сергеевич Ломоносов 1890-92 çулсенче утмăлти çын пулнă. Тĕн семинарине пĕтернĕскер, кунта шкулсем уçассине тата вĕсене тĕрĕслесе тăрассине тимленĕ, законо-учитель пулса ĕçленĕ. Вăл вăхăталла турă законĕсене вĕренесси тĕп предмет шутланнă. Вăл «Светая Анна» орденне тата ытти наградăсене те илме тивĕç пулнă. Тепĕр священникĕ Алексей Николаевич Поливанов, çамрăкскер, вăтăр çултан иртнĕскер, семинари курсĕсене пĕтерсе, Кушлавашра ĕçлеме пуçланă. Иккĕшĕ те çемьеллĕ пулнă. Священниксен ĕç укçи япăх пулман, уйăхне 300 тенке ларнă, вĕрентекенсем 3 тенкĕ ытларах çеç илме пултарнă. Çак Кушлавăш чиркӳне çĕнетме (ăна 1902 çулта халăх укçипе Светая Троица ячĕпе çĕнĕрен уçнă), каярахпа халăха вĕрентес ĕçе аталантарма Кушлавăш мăнастирĕ нумай пулăшнă. Вăл хĕрарăмсен мăнастирĕ пулнă. 1898 çулта пĕчĕк общинăран пуçланса кайнăскер, 1901 çултан патша арăмĕн ячĕпе Александринская мăнастирĕ пулса тăнă. Кунта игуменья, 8-9 монахиня валли 2 хутлă çурт, унсăр пуçне Святуй Гури ячĕпе шкул пулнă. Унта 26 ача вĕренме пултарнă. Игуменья пулса Анна Чепакина ĕçленĕ, хăй ĕçĕшĕн вăл светуй Хĕресе тивĕçлĕ пулнă. Мăнастирти чиркӳсем çинчен ахальтен аса илмерĕмĕр эпир. Вăл вăхăтра Упакасси çыннисем Кушлавăш ялĕсĕр пурăнма пултарайман. Кунта 1875 çулта земски училищи уçăлсан, каярахпа 1890 çулта грамота шкулĕ уçăлсан, Упакасси ачисем унта вĕренме çӳренĕ. Пирĕн ялта ун чухне шкул пулман. Унсăр пуçне Кушлавăш салинче кашни эрнекун шавлă та пуян пасар иртнĕ. Кушлавăш вулăсне хут çинче Байсубаково тесе

çырнă. 1839 çултан вăл пирĕн вулăс центрĕ пулса тăнă. Хуть те мĕнле ĕç тума та, Упакасси çыннисен Кушлавăша кайма тивнĕ.

Малтикартиш çыннисем чиркĕве Аслати кĕперĕпе каçса çӳренĕ. Чиркӳрен таврăннă хыççăн çырма хĕрринче пумилкке ирттернĕ. Çавăнпах-и, тен, Савкка вĕçĕнче Аслати кĕперĕ тĕлĕнче тăсăлакан урама Пумилкке урамĕ тенĕ. Кун пирки малтан та кăштах асăнтăмăр ĕнтĕ.

Каларăм-ха эпĕ пирĕн ялсем чиркĕве Кушлавăша çӳренĕ тесе. Унсăр пуçне çывăхрах пурĕ 5 чиркӳ пулнă: Аччара (вăл хăçан уçăлнине тупма май килмерĕ), Уравăшра 1897 çулта, Хапăсра 1863 çулта, Нурăсра 1889 çулта ĕçлеме пуçланă. Пĕр 40 çул каяллах ватă кинемейсенчен эпĕ çакна илтсеччĕ. Авалтан халăх туйсене ирттерме тĕплĕн хатĕрленнĕ. Çамрăк мăшăр чиркӳре венчете тăман пулсан, çав çемьене халăхра йышăнман. Хĕрупраçăн 2-3 çул хушши туй тумне çĕлесетĕрлесе хумалла пулнă. Хĕр хăйне валли салам, çураçмалли, венчет кĕписене акăш-макăш тĕрĕсемпе илемлетнĕ, туй пĕркенчĕкне çĕлесе, тĕрлесе капăрлатнă. Пулас упăшки валли, пулас хуняшшĕ-хунямăшне юрама, тăвансен кăмăлне çемçетме парне хатĕрленĕ. Пулас арăмăн арчи-çупçисем алă вĕççĕн çеç çĕленĕ, тĕрленĕ çи-пуçпа тулса ларнă. Çирĕпрех пурнăçпа пурăнакан çемьесем хăйсен ывăлĕ-хĕрĕсен туйне таврари ялсенче астуса юлмалла ирттерме тăрăшнă. Халăх хушшинче халĕ те «Çавăн туйĕ питĕ чаплă пулнăччĕ, туй пуçĕ Упакассине кĕнĕ пулсан, вĕçĕ вара Хура Çырмаран та тухайман», - тетчĕç. Кашни кил хăйĕн тăванĕ патне питĕ илемлĕ, эрешлесе пĕтернĕ кӳмесемпе кайма шутласа хунă. Çавăнпа туй кӳмисен шучĕ хăш чухне 30-40 те çитнĕ, теççĕ.

Хамăр ентешĕмĕр Çемен Элкер çырнинчен эпир çакна пĕлетпĕр: 17-мĕш ĕмĕрĕн вĕçĕнче хальхи Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ тăрăхĕнче пурăнакан хресченсен пурнăçĕ питĕ йывăрланса çитнĕ. Ку вăл Алексей Михайлович патша кăларнă Соборнăй Уложени ятлă законпа та, Степан Разин пăлхавĕ хыççăн хытарнă указсемпе те çыхăннă. Çавăнпа та вĕсем нушаран ирĕке тухас тĕллевпе çакăнти вăрман уçланкисене килсе пурăнма пуçланă. Хăйсен урамĕсене, ял ячĕсене - кам маларах килсе тĕпленнĕ, çавăн ятне панă (тĕслĕхрен, Маття, каярах-

па Савкка кассисем) ялсене Алмантай, Упакасси, Кушлавăш, Кушниково, лери, тĕп вырăнти ятсене манас мар тесе хăварнă. Паянхи кун та вĕсем Сĕнтĕрвăрри енче чылай тĕл пулаççĕ, Упакасси ял çеç 5-6 тĕрлĕ. Ватă Упакасси (Алмантай Упакасси), Тури Упакасси (Верхние Ирх-Сирмы), Çĕнъял Упакасси (Верхние Синьялы), Анатри (Лапри) Упакасси (Нижние Ирх-Сирмы) тата ытти те Кушниково ят та Сĕнтĕрвăрри районĕнче çеç пур.

Аса илтĕмĕр ĕнтĕ 18-мĕш ĕмĕрте чăвашсене ытларах кив ятпа çеç чĕннĕ: Тĕрек, Тимук, Ярчи, Ярмук, Сăмкки, Тимак тата ытти те. Каярахпа 19-мĕш ĕмĕртен чылай çынсем икĕ ятпа усă курнă: хут çинче вырăс ячĕпе, халăхра тĕрлĕрен чĕрчун, кайăк ячĕсемпе: Кайăкки, Шăнкăрч, Курак, Чĕкеç, Хурчка.

Вăрман касса хăртас ĕç çăмăл мар. Уçă вырăнсем часах пĕтнĕ, анчах халăх ку еннелле килме чарăнман. Пĕрремĕш Петĕр патшан уйрăм указĕпе халăх шутне тепĕр хут пăхса тухнă (перепись тунă). Ку вăл 1721-мĕш çулта пулнă.

Пысăк Упакасси тăрăхне чи малтан килсе ларнă çын вăл Маття пулнă. Вăл хăйĕн ывăлĕсемпе Вĕлтрен шывĕн çурçĕр енне ытларах кăмăллană пулас, тăварах çĕрпӳрт чавса пурăнма пуçланă. Ывăлĕсем унăн патвар та ĕçчен пулнă. Çынсем каланă тăрăх, ывăлĕсен шучĕ икĕ тĕрлĕ: çиччĕ е виççĕ. Ман шутпа, Маттян виçĕ ывăл пулнă. Пĕчĕк Упакасси ялне пуçласа янă Эрхит – савăкăн 7 ывăл пулнă. Ку вăл 1690 çулсен варринелле пулнă. Çапла вара Упакасси ялĕсем пуçланса кайни 300 çул ытла пулать. Маття урамĕ чи малтан пуçланса кайнине тепĕр тĕрлĕ те çирĕплетме май пур. Шупашкарти тĕп архивра пирĕн ялăн 1880 çулхи планĕ пур. Пĕтĕм ялĕпе те ун чухне 140-е яхăн кил çеç шутланнă, чылай урамсенчи килсен шучĕ хальхипе танлаштарсан çурри анчах, хăшĕсем, паллах, ун чухне пулман та. Маття урамĕнче вăл вăхăталлах 27 кил шутланнă, уйрăмлăхĕ те ытлах пысăках мар, вĕсем хальхи пекех икĕ енĕпе ларса тухнă. Çапла вара, ман шутпа, Маття касси ялти чи ватă касă шутланать. Урамсем çинчен калаçу пуçарсан, çакна палăртмалла: 1850-мĕш çулсенелле Афанасий Никитич (Архип Илларионович аслашшĕ) – Тумик йăхĕнчи çирĕп хуçалăхпа пурăннă хресчен,

уесран, Етӗрнерен, ҫӗр виҫекене чӗнтерсе илсе хӑй ят ҫӗрӗ ҫине хуҫалӑхӗпе тухса ларнӑ. Ун ҫумне Федор Филиппов (Типпи Ҫитӑр ашшӗ) пырса кил ҫавӑрать. Хальхи Исаев Николай вырӑнӗнче Зиновий Капитонов, Авдотья Ивановӑна качча илнӗскер, хӑйӗн Андрей, Йӑкӑнат, Куҫма, Роман ятлӑ ывӑлӗсемпе пурӑннӑ. 1880 ҫулта ял планне туса пӗтерсен, Боголюбов агент-техникпа Зиновий Капитонов ун ҫине алӑ пуснӑ (вӑл ун чухне ял старости пулса ӗҫленӗ). Ӗлӗкхи мӑн ҫултан тӑвалла хӑпаракан ҫӗнӗ урама ун чухне Вырӑсла урам тенӗ, каярахпа – Тури урам, халӗ вара Элкер урамӗ тесе чӗнетпӗр. Ҫапла вара урамсенчен чи малтан йӗркеленсе ларни – Тури урам шутланать. 18-мӗш ӗмӗрте кассем - 4-5 е 6-7 хуҫалӑхран тӑнӑ пулсан, майӗпен пӗчӗк кассемпе пурӑнма хӑрушӑ пула пуҫланӑ. Ҫак 18-мӗш ӗмӗр вӗҫӗнче, Емельян Пугачев пӑлхавӗ хыҫҫӑн ку тӑрӑхра таркӑнсем чылайланса кайнӑ, уйрӑмрах пурӑнакан кассем ялалла, шалалла кӗнӗ. Ҫакӑ та урамсене йӗркеленсе кайма пулӑшнӑ. Урамсем йӗркеленсе кайиччен кашни йӑх чӑмӑртанса пӗр вырӑналла пурӑннӑ. Йӑх пуҫӗ варринче, йӗри-тавралла хутшӑнса пыракан ҫемьесем. Упакасси ялӗнчи тӗп йӑхсем: Тӗрек, Тумик, Тимак, Ярчи, Маття, Савкка, Ериле, Хветки. Ыттисем вара сайрарах, кӗҫӗнрех. Илер-ха Тӗрек таврашне.

## ТӖРЕК ТАВРАШӖ

Тӗп Тӗреке, хут ҫинче Терентий тесе ҫырнӑ, тенӗччӗ ун пирки ҫак ӑрӑва тӗпчекенсем.Тӗрек авалхи ят пулнӑ пирки ӑна Трахвин ятпа та улӑштарма пултарнӑ . Ҫак ӑрун пӗр сыпӑкӗ ҫинчен 1886 ҫулта кӑларнӑ «Посемейный список села Ильдемяшево» ӗҫре ҫапла ҫырса панӑ. Тӗрекӗн аслӑ ывӑлӗ, Василий Трофимович 1780 ҫулта ҫуралнӑ пулсан, Тӗрек вара 1753-1755 ҫулсенче ҫуралнӑ пулать пулӗ. Ваҫили вӑл Тӗрекӗн аслӑ ывӑлӗ пулнӑ.

Тӗрек ҫинчен халӑх асӗнче ҫакӑн пек калани юлнӑ. Кӗлетке енчен вӑл ҫирӗп те тӗреклӗскер пулнӑ. Тен, ҫавӑнпа халӑхра «Тӗрек» тесе чӗннӗ. Ҫамрӑклах тӑлӑха юлнӑскерӗн,

кĕтӳç хутаçне çакма та тивнĕ. Ун чухнехи вăхăтра кĕтӳçĕ чи кирлĕ çын шутланнă. Авалхи йăлапа кĕтӳçе кашни килĕн черетпе апат çитермелле пулнă. Кил хуçи хĕрарăмĕсем, хăйсене кĕтӳçĕ ан хурлатăр тесе, ăна тутлăрах çитерме, лайăхрах пăхма тăрăшнă. Тĕрек тăван ялĕнче çеç мар, кӳршĕри ялсенче те кĕтӳ пăхнă. Ăна Кушлавăш тăрăхĕнче пĕлмен çын та пулман пулĕ. Амăшĕнчен вырăсла вĕренсе юлнăскер, вăл çак чĕлхене самаях чухлакаланă.

Çулсем иртнĕ. Тĕрекĕн авланма та вăхăт çитнĕ. Кĕлетке енчен такам та ăмсанма пултарнă каччă пулин те, упакассисем те, кӳршĕ ялсем те хăйсен хĕрĕсене мулсăр, тăлăх кĕтӳçе парасшăн хыпăнман. Унăн ирĕксĕрех хĕр шыраса хир енне, хăйне пĕлмен çĕрелле каймалла килсе тухнă. Пĕр ял хĕрне Тĕрек куç хывнă. Анчах çав ялти каччăсем хăйсен хĕрĕсем патне ют çынна çывăха та ярасшăн пулман. Виçĕ куштан каччă Тĕреке «хăлха чикки» парса илме шут тытнă. Вĕсем ун çине ăнсăртран, кĕтмен-туман çĕртен тапăннă. Инçетрен килнĕ каччă хăраса ӳкмен, хăйĕн тĕреклĕ аллисемпе пĕрре сулса янипех виççĕшĕнчен пĕрне, çӳллĕскерне, урараn ӳкерет. Çакна курса ыттисем патвар кĕлеткеллĕ ют каччăпа тупăшма хăранă, аяккалла тапса сикнĕ. Ют ялта çапăçу пуçарнă тесе, Тĕреке судпах айăпласси патне çитнĕ. Анчах çак ĕç кайран ырăпа вĕçленнĕ. Тĕрек палламан каччăсемпе кĕçех мирлешнĕ. Куç хывнă хĕре çураçса, Тĕрек туй тăвать, авланса ярать. Туйне



пётём ял халăхĕ пулăшнипе ирттернĕ. Хăйĕн хуçалăхне вăл халĕ Вăтакас урамĕнче пурăнакан Максим Сергеевич Михайловăн анкартийĕ тĕлнелле çавăрнă. Тĕреке вырăсла та аванах чухланине кура, часах ял старостине суйласа лартнă.

Тĕрекĕн ывăлĕсем виççĕн пулнă: асли Ваçили, вăталăххи Макçăм, кĕçĕнни Кĕпитун. Архиври Ваçилин (вăл 78 çул пурăннă, 1858 çулта вилнĕ) ывăлĕсем çинчен çырнине тупма май килчĕ. Асли - Петĕр Мария Димитриевăна качча илнĕ, вĕсен Варвара ятлă хĕрĕ тата 5 ывăл пулнă. Петĕр ывăлĕн, Ефимăн, пĕрремĕш арăмĕ - Ирина Кондратьева, илемлĕ, тирпейлĕ хĕрарăм пулнă, анчах çамрăклах вилсе кайнă. Иккĕмĕш арăмĕ - Фекла Григорьева. Вăл 3 хĕр çуратнă. 1863 çулта çуралнă ывăлĕ - Мĕкĕте. Çитĕнсен вăл Агафья Ивановăна качча илнĕ. Вĕсен 2 ывăл çуралнă: Унеçĕм тата Йăван. Унеçĕмĕн ывăлĕсен шăпи кĕске пулнă. Якурпа Лекçей иртнĕ вăрçă хирĕнче выртса юлнă, тепри киле таврăнсан вилсе выртнă. Тăваттăмĕш ывăлĕ те нумай пурăнман.

Архиври Ваçилин Симун ятлă ывăлĕ çинчен калакан документсене курма май килчĕ. 1887-мĕшĕнче Семен Васильев хăйĕн Архип ятлă ывăлне салтакран каялла тавăрас пирки ĕç пуçарни пур. Архип салтака кайни 4 çул çитсе пынă. Ялта унăн çамрăк арăмĕпе - Пелагея Петровăпа 3 çул тултарнă Акулина ятлă пĕчĕк хĕрĕ юлнă. Ашшĕпе ялта Архипăн аслă пиччĕшĕ - Сильвестр - хăйĕн арăмĕпе - Фаина Андреевăпа тата 4 ачипе пурăннă. Кĕтмен çĕртен 34 çулхи Сильвестр вилсе каять. Унăн ачисем ураланайман-ха: асли Ваçили - 13-ре, Тарье - 11-те, Çемен - 4-ра, кĕçĕнни - Микула 2-ре çеç. Семен Васильев хăй хутла пĕлмен, прошенине кӳршĕ урам çыннине Степан Павлова (вăл Кушлавăш шкулĕнче виçĕ çул пĕтернĕ, ялта хута лайăх пĕлекен çын шутланнă (вăл Павăл Степанч ашшĕ пулнă)) çыртарнă.

Çак ĕçе татса пама пас пӳрне хулăнăш тĕрлĕрен справкăсем пуçтармалла пулнă. Семен Васильев, Сильвестр ывăлĕ вилнипе самаях вăйран кайнăскер, тата хăй 74 çулхине палăртса, килте пысăк çемьене тăрантарма вăйпитти арçын юлманнине тĕпе хурса, ывăлне каялла тавăрма кирлĕ документсене пуçтарнă-мĕн. Çĕнĕ çул иртсен,1890 çулта Архип

Семенов 3-мĕш гренадер полкĕнчи 4-мĕш ротăран Упакассине таврăнать.

Çавăн пекех Пысăк Упакасси çынни Ефим Тимофеев (сăмах май, Ехим Çемен Элкерпе выляса ÿснĕ. Юлташĕ çинчен поэт «Хурапа шурă» кĕнекере çырать). Хăйĕн Якку ятлă ывăлне салтака тĕрĕс мар илнĕ тесе çырса яни архивра пур. Çемьере ĕçлеме пултаракан çын çук пирки Яккуна хĕсметрен (çар службинчен) хăтарма йышăнни çинчен те пĕлтĕм.

Тĕрекĕн 3-мĕш мăнукĕ, Ваçилин ывăлĕ Çтаппан çинчен те кĕскен каласа памаллах пулĕ. Вăйлă, ĕçчен, çав хушăрах çăтăр-çатăр старикĕн 3 ывăл: Йăван, Уçăп тата Павăл пулнă. Уçăпăн арăмĕ Матрена Асонова, тирпейлĕ те пит калаçсах кайман хĕрарăм пулнипе палăрнă. Вĕсен çемйинче 7 ача - 4 ывăл та 3 хĕр ÿснĕ. Осип Степанов ялта хисеплĕ çынсенчен пĕри шутланнă. Ахальтен мар пулĕ ăна вулăс старостин кандидатне суйланă. 1886 çулхи документсенче (тĕслĕхрен, «Посемейный список села Ильдемяшева за 1886 год»), вăл алă пусни, унăн çемйи çинчен калани пур.

Уçăпăн аслă ывăлĕ, Ĕлĕкçи 1867 çулта çуралнă. Вăл манăн аттен аслашшĕ пулать, пурнăçра сахал мар хура-шур курма лекнĕ ăна. Ватлăхра та тертне чылай чăтнă. Аттен ашшĕ Униçĕм, пирĕн асатте, граждан вăрçи вăхăтĕнче вилнĕ. Асаттен тăванĕсем - хĕрсем: Марье, Тарье, Анна, Енькка пулнă. Марьепе Тарье Ершепуçне качча т̦хнă, Енькка - Мĕлĕше, Анни ялта çемье çавăрнă. Тĕрек таврашĕнчен граждан вăрçи вăхăтĕнче пуçне хунисем, иккĕн: тепри Ефим Михайлович Тряков, Капитонăн мăнукĕ. Уçăпăн Унтри ывăлĕ нумай пурăнман. Унăн тепĕр ывăлĕ - Сахар пирки акă мĕн паллă. Вăл 1878 çулта авăн уйăхĕн 3-мĕшĕнче, 1890-91 вĕренӳ çулĕнче Кушлавăш шкулĕнче аслă курс (3-мĕш клас пулать) пĕтернĕ. Çав çулсенче Кушлавăш вулăсĕнче 3 шкул пулнă: Мĕлĕшре, Ершепуçĕнче (çак ялсенче шкулсем1889 çулта уçăлнă) тата Кушлавăшра. Учительницăра Екатерина Архангельская ĕçленĕ. Шкулĕпе 60 ачана яхăн: кĕçĕн курсра 30 ача ытларах, вăтамминче 20, аслинче вара 10 ачана та çитеймест. Ман алла ачасем çуллахи экзаменсене мĕнле панипе паллаштаракан ун чухнехи ведомоç лекрĕ. Турă саккунĕпе, чиркӳ юррисене вĕрентнисĕр пуçне кунта шутлама, вула-

ма, тӗрӗс ҫырма хӑнӑхтарнӑ,6-7 предметпа экзамен тыттарнӑ. Захар Осипов экзаменсене «4» паллӑсемпе кӑна панӑ.

Унпа пӗрле пирӗн ялта Павел Степанович ашшӗ - Степан Павлов, вӑл та экзаменсене ӑнӑҫлӑ тытнӑ. Ун пеккисем ялта чи сумлӑ та хисеплӗ, ӑслӑ-тӑнлӑ ҫынсем шутланнӑ. Экзаменри ведомоҫсене пӗтӗм Етӗрне уесӗнчи шкулсем тӑрӑх пуҫтарнӑ. Зиновий Капитонович (Тӗрекӗн мӑнукӗ) ял старости пулни ҫинчен эпӗ ҫырнӑччӗ ӗнтӗ. Ҫапла вара ҫакӑн пек тӗслӗхсене пӗтӗмлетнӗ хыҫҫӑн акӑ мӗнле шухӑш патне пырса тухатӑп: Тӗрек йӑхӗнчен тухнисем авалтанах халӑх хисеплекен, паллӑ ҫынсем пулнӑ. Паянхи куна илсен Упакассинче Тӗрек таврашӗнчен тухнӑ 40 ҫемье пурӑнать. Ку йӑха ялти краеведсем, е урӑх ҫӗрте пурӑнакан ентешсем те начар мар тӗпченӗ. Ҫавӑн пек ҫынсенчен эпӗ Максим Сергеевич Михайлова палӑртас тетӗп. Ялта вӑл хисеплӗ ҫын, ялпа, унӑн ҫыннисен пурнӑҫӗпе питӗ кӑсӑкланать. Унӑн аллинче темӗн чухлӗ ӑру картти. Кун пирки хӑйне мухтасан, вӑл ҫавӑнтах: «Эпӗ Кирук мучирен вӗренсе юлтӑм», - тесе сӑпайлӑн хуравлать. Кирук мучи, вӗсемпе кӳршӗлле пурӑннӑскер, Кирилл Тимофеевич, Тӗрекӗн мӑнукӗн ывӑлӗ (Ҫемен Элкерӗн йыснӑшӗ). Тӗрек йӑхӗн карттине тума пуҫланӑ ҫын. Вӑл питӗ тӑнлӑ, ял историне лайӑх пӗлекен ҫын пулни ҫинчен каласа параҫҫӗ ӑна астӑвакансем.

Малалла эпӗ Элкерӗн ҫывӑх тӑванӗ (унӑн аппӑшӗн ывӑлӗ) - Андрей Игнатьевич Тряков ҫинчен каласа парасшӑн.

Ӑна Йӗпреҫ тӑрӑхӗнче пӗлмен ҫын сайра пулнӑ. Андрей Игнатьевич ӗҫпе вӑрҫӑ ветеранӗ пулнӑ. Вӑл Тӗрексен карттине малалла тултарса пынӑ, хӑйсен ӑрӑвӗн карттинче «пушӑ вырӑнсем» пӗрре те хӑварман. Аслӑ поэтӑмӑр ҫинчен эпир унпа чылайччен калаҫса лартӑмӑр. «Ҫемен кукки яла пушӑ алӑпа килмесчӗ. Ытларах вӑл кӗнеке парнелеме юратнӑ. Мӗн пӗчӗкрен мана нумай-нумай кӗнекепе туслаштарчӗ. Анчах хӑшӗсене упраймарӑм, ҫухатрӑм. Ҫухатман пулсан, куккин кӗнекисенчен самаях пысӑк библиотека пулатчӗ», - тетчӗ вӑл. Куккӑшӗ Шупашкартан килсен, пӗр 10-12 киле кӗрсе тухмасӑр каялла кайман. «Унӑн тӑванӗсемпе, пӗлӗшӗсемпе, кашнипе курса калаҫас пысӑк туртӑм пулнӑ», - пӗлтеретчӗ ветеран хӑйӗн куккӑшӗ ҫинчен. Ун ҫинчен сӑмах каярахпа татах та пулӗ.

# ТĔРЕК ЙĂХĔН НЕСĔЛ ЙЫВĂÇÇИ

Тĕрек (Терентий е Трофим Федорович)

- Ваçили Трофимович → Петĕр, Çтаппан, Симун
- Максăм Трофимович → Тимахви, Терентий, Йăван
- Капитон Трофимович → Ĕлĕкçи, Михал, Ваçили(-), Çинави
- Пктя(-)

Петĕр →
- Уçăп → Ваçили(-), Кĕркури
  - Кĕркури → Улатимĕр, Ĕлĕкçи
- Ехим → Мĕкĕте
  - Мĕкĕте → Унеçĕм, Йăван
- Михал → Микула(-), Ĕлĕксантăр, Хĕветĕр, Петĕр
  - Ĕлĕксантăр → Микула, Ĕлĕкçи
  - Хĕветĕр → Георги
  - Петĕр → Улатимĕр
- Ехрем(-)
- Микихвер(-)

Симун →
- Микула(-)
- Сильвестр → Ваçили, Микула, Симун(-)
  - Ваçили ------- Михаил
  - Микула → Кĕркури, Варсань
- Эрхип → Микула, Унтри, Арçут(-), Якку
  - Микула → Ваçили(-), Анатули(-)
  - Унтри → Анатули, Якку
  - Якку → Анатули → Витали
- Якку

Çтаппан →
- Уçăп → Ĕлĕкçи, Сахар(-), Унтри, Михал
  - Ĕлĕкçи → Унеçĕм → Михал (Микула, Юрий, Толя)
  - Михал → Антун(-), Йăван, Микула, Ваçили, Петĕр(-)
- Павăл → Матви, Петĕр, Кĕркури, Максăм
  - Матви → Ваçили
  - Петĕр → Микула, Абрам
  - Кĕркури → Йăван, Аркади, Ĕлĕкçи
  - Максăм → Унтри, Микула
- Йăван

ч-41543
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Тимахви → Василии → Хĕветĕр → Курак

Тимахви → Кирил - Арçут, Петĕр, Якку(-), Михал(-)

Тимахви → Хĕлип → Çеркей → Ваçили, Йăван, Михала

Хĕлип → Данил, Мĕтри(-)

Тимахви → Ĕлĕксантăр(-)

Тимахви → Михал → Çеркей(-)

Терентий Йăван — Петĕр(-), Хĕритун(-)

Василий Капитонович → Унтри - Ехим - Ваçили, Илья, Çеркей

Унтри → Артем(-), Ĕлĕкçи (Илю) → Микула, Анатули

Василий Капитонович → Митрафан

Василий Капитонович → Куçма

Ваçили(-), Йăван → Микула, Çеркей

Митрофан Капитонович → Петĕр → Анатули, Микула, Йăван, Ĕлĕкçи

Митрофан Капитонович → Арçут → Ĕлĕкçи

Куçма Капитонович → Арçут(-), Унтри(-)

Зиновий → Унтри (Унтюк) → Павăл (усрав)

Зиновий → Роман → Йăван - Ĕлĕкçи, Илья, Унтри, Михал, Çеркей

Роман → Микита - Аркади

Роман → Микула(-)

Зиновий → Йăкăнат - Унтри

Зиновий → Куçма(-)

Михал → Хĕлип - Эрхип(-) → Евдоким - Илья, Микула

Хĕлип → Ĕлĕксантăр → Юрий, Валери

Михал → Ехим → Якку - Илья, Унтри

Ехим → Симун - Йăван

Ехим → Йăван(-)

Михал → Çеркей → Йăван - Валери, Витали, Володи

Çеркей → Макçăм - Микула

Çеркей → Ĕлĕксантăр(-)



Г.П.Тряков çемйипе

Халĕ ял историйĕ патне тепĕр хут таврăнар-ха. Пирĕн ялăн планне 1880 çулта тунă. 1865 çулхи документсем тăрăх. тĕслĕхрен, «Именная ведомость селений государственных крестьян Ядринского уезда, с указанием душ, дворов, в каком стане находится каждое селение» текен ĕçрен çакă курăнать: хальхи Пысăк Упакассине 4 каса пайланă. 10 кил (65 çынран тăрать) Пысăк Кушлавăш станне кĕнĕ, 42 кил (250 çын шутланнă) Пĕчĕк Кушлавăш станне, 3-мĕш пайĕ - 40 хуçалăхран (251 çын) Ильдемеш станне, юлашки 20 килтен (132 çынран) тăраканни - Алмандаево станне. Асăннă стансене тата кӳршĕри 3-4 яла та кĕртнĕ. Çавна пула ведомоçсенче, списоксенче «Пысăк Упакасси» тесе уйăрăммăн кăтартманнине кура, ентешсен ячĕсене тупма питĕ кăткăс. Сăмах май каласан,1865 çулта пирĕн ялта пурĕ 112 хуçалăх, Шуркассинче - 32, Шепекечре - 19 кил пулнă. 1806 çулхи документ тăрăх 18-мĕш ĕмĕрĕн 2-мĕш çурринче пирĕн ялта 77 хуçалăх шутланнă. Çапла вара 100 çул хушшинче те ялта 35 кил çеç хутшăннă пек пулса тухать.

1861 çулта Раççейре хресченсен пурнăçĕнче пысăк улшăнусем пулса иртнĕ. Капитализм çулĕ çине тăнă çĕршывра çĕнĕлĕхсем кĕртме хăтланнă: крепостла йĕркене пĕтернĕ хыççăн, земство органĕсем йĕркеленнĕ, суд ĕçне çĕнетнĕ, çар пурнăçне те улшăнусем кĕртнĕ. Анчах чăваш хресченĕн пурнăçĕнче, уйрăмах центртан аяккарах вырнаçнă пирĕн пек ялсене çĕнĕлĕхсемпе улшăнусем çул тупайман. Малтанхи пекех, кунта çĕр улпучĕсем хуçаланнă.

1864 çулта земство учережденийĕсем çинчен калакан уйрăм Положени тухнă. 1865 çулта çулла Етĕрне уесĕнчи земствăсен Аслă пухăвне пуçарма уçă суйлав ирттернĕ. Удел по-

мещикĕсем хушшинче суйлав уйрăммăн иртнĕ. Пирĕн Кушлавăш уйĕнчи çĕрсем те пĕр пек мар. Авалтан ялсем пĕр-пĕрин хушшинче çĕр уйăрнă чух, кӳршĕсене кӳрентерес мар тесе, çĕре пахалăхне кура пайланă. Пĕр-пĕр ялăн хура çĕрсем сахал пулсан, кӳршĕри ялсен çĕрĕнчен касса панă. Япăхрах çĕре пĕр пек пайлама тăрăшнă. Çавна пула пирĕн ялăн çĕрĕсем, улăхсем Çавал леш енчи Уравăш ялĕ таранах пулнă. Вырăс помещикĕсем кунти чăваш хресченĕн йĕркисене пăхăнасшăн пулман. Петр Кольцов помещик çинчен пирĕнтен нумайĕшĕ пĕлеççĕ ĕнтĕ. Апла пулин те, тепĕр хут аса илтерни пăсмĕ, Сĕве тăрăхĕнчен килнĕ помещик тĕрлĕ хуласенчи вырăс таркăнĕсене пухса 18 ĕмĕр варринелле Кушлавăш уйне çитнĕ. 600 теçеттин çĕр кастарса çак дворянин 40 çула яхăн кунти халăхсенчен мăшкăлласа пурăннă, кӳршĕ ялти хресченсене хăйĕн чурисем вырăннех хунă. Çулсерен пиншер витре эрех юхтаракан завод ăна пысăк тупăш панă. Хăй хресченĕсем валли уйрăм ял (Кольцовка) тутарнă, унта чăвашсене кĕртмен. Шăматкунсенче ирсерен Ачча пасарне каякан чăвашсем çине тапăннă, япалисене туртса илнĕ. Кульцав урамĕпе иртсе кайма та кунти çынсем чылайччен хăраса пурăннă. Кольцова нимĕнле влаç та айăпламан. Çавăнпа пулĕ 1745 çултах, вăл кунти çĕрсене касса илме пуçласанах, Кушлавăш хресченĕсем пуртăсемпе, чукмарсемпе, сенĕксемпе хĕçпăшалланса, Кольцова хирĕç тăнă. Пĕрремĕш хутĕнче вĕсем ăна çĕнтернĕ, анчах каярахпа салтаксен пулăшĕвĕпе помещик пăлхава путарнă. Ку пулăм Чăваш çĕршывĕн историне кĕрсе юлнă. Хресчен пурнăçĕ нихăçан та çăмăл пулман. Ун чухне ял çыннине налуксемпе тăнран кăларнă. Кашни çын пуçне тӳлекен налук 70 çул хушшинче 3 хут ӳснĕ (пĕр тенкĕрен 3 тенке çитнĕ). Ун чухне вăл пысăк укça шутланнă. 1 пăт тырă (ыраш) 5 пус тăнă. Шутласа пăхсан, мĕн курăнать: кашни çул хресченĕн 1 арçын пуçне 20 пăт тырăпа тӳлемелле пулнă. Тарçăсен ĕç укçи кунне 3-4 пуса çеç ларнă. Çавăнпа та хăш-пĕр хресченсем çие кĕрĕк те тăхăнса курман, сăхманпах хĕл каçнă.

Ватăлсан Кольцов помещик хăй çĕрĕсене Анорин хушаматлă генерал-аншефа сутать. Ку тăрăхри помещиксем хуш-

шинче Анорин чи хаярри пулнӑ, чӑвашсене ҫӳпӗ вырӑнне те хуман. Кунти халӑх хӑйне курайманнипе-ши, Анорин ҫӗрӗсене Соловьева сутать, Соловьевран С. Ф. Ушакова куҫать. С. Ф. Ушаковпа И.В. Лукашов ҫинчен архиври документсенчен ҫакӑ паллӑ: Ушаков Хусан кӗпӗрнин секретарӗ, пирӗн Етӗрне уесӗнче дворянсен предводителӗ пулнӑ. Земствӑсем йӗркеленӗ вӑхӑтра (1864-65 ҫулсенче) вӑл хӑй Кульцаврра пурӑннӑ. Унӑн хушамачӗпе ытти вырӑнсенче те ҫӗр пулнӑ. Анчах пурӑнма ҫак дворянин темшӗн Кушлавӑш тӑрӑхне суйласа илнӗ: те тавралӑхӗ ӑна ытларах илӗртнӗ, те кунти халӑха пӑхӑнтарма ҫӑмӑлрах пулнӑ-ши? Кульцав обществин 672 теҫеттин ҫӗр пулнӑ, ҫак ҫӗртен 70 теҫеттинне Ушакова Ҫӗрпӳпе Етӗрне уесӗсем хушшинче мировой посредник тивӗҫне пурнӑҫланӑшӑн касса панӑ. (Касса илнӗ тесен тата тӗрӗсрех пулӗ).

Тепӗр пысӑк помещик И.В.Лукашов полковник шутланнӑ. Унӑн аллинче Кульцав ҫӗрӗсен пӗр пайӗ тата Зеленовка (Алманча) ялӗн ҫӗрӗсем – пурӗ 417 теҫеттин. Полковникӗ Хусан хулинче пурӑннӑ, кунта киле-киле ҫеҫ кайнӑ. Вӑл Етӗрне уесӗнче уйрӑмах пысӑк порученисене пурнӑҫлакан чиновник шутланнӑ. Вырӑнти халӑх тӗттӗмлӗхӗпе усӑ курса,1440 ҫынлӑ вулӑсра ҫӳлерех асӑннӑ 2 дворянин уес пухӑвӗнче Кушлавӑш уйӗнчи хресченсен шӑпине татса паракансем пулса тӑраҫҫӗ. 1440 ҫын, ун чухнехи суйлав системине тӗпе хурсан, пурӗ те 43 сасӑ ҫеҫ илме пултарнӑ. Хресченсенчен баллотировка списокӗпе пирӗн вулӑсран 2 хресчен лекнӗ: Матвей Макаров (Ериле йӑхӗнчен) тата Павел Прокопьев. Иккӗмӗш хӑш ялтан пулнине палӑртма май килмерӗ.

Кушлавӑш тӑрӑхӗ илемлӗ ҫӗрте вырнаҫни ҫинчен пӗлетӗр ӗнтӗ. Ҫав вӑхӑтрах кунти сывлӑш таса пулнине те манма юрамасть. Специалистсем ҫирӗплетнӗ тӑрӑх, Улатӑр районӗ хыҫҫӑн атмосфера тасалӑхӗпе Йӗпреҫъен иккӗмӗш вырӑнта мӗн. Пирӗн енчи вӑрмансем чылаях ҫаралчӗҫ пулин те, Кушлавӑш вӑрманӗ ӗлӗкхиллех кунти хӳтлӗхе упрама тӑрӑшать. Ялтан кӑнтӑр еннелле кайса пӑхар-ха. Пирӗнтен тухӑҫарах вырнаҫнӑ Ҫиҫӗмкасси ялӗнчен пуҫласа Ершепуҫне ҫитичченех талкишпех сийлӗ-сийлӗ вӑрман сарӑлса куҫа илӗртет. Пӗр 100-200 ҫул каялла пысӑк вӑрман Тури урам вӗҫне ҫитнӗ. Ун чухне

ку урама, каларăмăр ĕнтĕ, Вырăсла урам (те тӳрĕ, те сарлака пулнăран çапла каланă) тенĕ.

Маларах аса илтĕмĕр-ха, чи малтан йĕркеленнĕ тĕп урам 55 килтен тăнă. Ыттисем пĕри те ун пек пысăк пулман. Тури урамра ĕлĕкрен Тумик тата Тĕрек йăхĕнчи тăвансем пурăннă. Кунтах Никита Ефимович, Осип Степанов, Алексей Капитонович, Семен Васильев (халь Иван Никифоров пурăннă вырăнта), Зиновий Капитонович, Павел Степанов, Михаил Капитонович, Василий Тимофеев (Кучан Хĕветĕр ашшĕ), Сильвестр Семенов, Иван Степанов вырăн тупнă. Пурте вĕсем Тĕрексем. Пурте пĕр-пĕрин çывăхнелле ларма тăрăшнă. Урамăн вăл енчи вĕçĕ Максим Васильевпа (Чĕкеçпе Дунька аслашшĕ пулать вăл) пĕтнĕ. Тепĕр енче Максим Васильева хирĕçле кил – Петр Марковăн (Анатолий Петровăн аслашшĕ) ларнă. Çав тĕлелле 2 кил шаларах вара ял ӳнечи пулнă. Тепре аса илтеретĕп, 1880 çул тĕлне çапла пулнă. Урамăн ку енĕ Егор Степановăн килĕпе вĕçленнĕ. Çуртне Иван Егорович лартнă пулнă, анчах хут çине ашшĕ ячĕпе кĕрсе юлнă. Урам вĕçĕнче Каття таврашĕсем (Ваçили, Антунĕ, Павăлĕ-Палюк тенĕ) пурăннă. Палюкăн ывăлĕ – Хĕлипĕ Хусанта милицире ĕçленĕ.

## ЯРМУК ЙĂХĔ ÇИНЧЕН

Нумаях пулмасть манăн алла Ермолаевсен çемйи çинчен çырни лекрĕ. Унта интереслĕ япаласем нумай. Вĕсен йăхĕ Ярмук (Ермолай) старикрен пуçланнă. Вăл французсемпе çапăçнă вăрçă вăхăтнелле çуралнă, йăрă та вăйпитти каччă пулса ӳснĕ. Анчах 20 çулсенеллех унăн патша çарне каймалла килсе тухнă. Ярмукăн пиччĕшĕ Симук пулнă, анчахрах авланса янăскер, çамрăк арăмпа пурăннă. Ун чухнехи çарта 25 çул службăра тăмалла пулнă. Çамрăк арăмăн киле пĕччен тăрса юлас килмен. Хăй те вăл хăраса тăраканскерех пулман. Ыран упăшкин салтака тухса каймалла. Арăмĕ аллине турчка илет те тӳрех упăшкине тута урлă çапать. Малти шăлĕсем Симукăн пачах юлман. Шăлсăр арçына çара кам илтĕр. Тепĕр кун ял старостипе десятник Симука илме килсен,

кураççĕ: пулас салтакăн малти шăлĕсем çук. Мĕн тумалла? Нумай шутласа тăмаççĕ. Мунчара çăвăнса ларакан Ярмука тытаççĕ те салтака каймалла туса хураççĕ.

Ярмукăн ашшĕ Икмес, кĕçĕн ывăлне ытларах юратнăскер, хăйĕн икĕ хутлă кĕлетне ăна пиллесе хăварать. Симукăн çак кĕлет тăррине Ярмук салтакран килнĕ çĕре çĕнĕрен витсе хумалла пулнă.

Ярмуксене малтан уес центрне - Етĕрне хулине илсе çитереççĕ. Кашнинех 2-шер тенкĕ укçа, улăштарма кĕпе-йĕм панă. Ярмука Хура тинĕс енне илсе кайнă. Салтак нушин вĕçĕ çитсе пынă чух кĕтмен çĕртен Крым вăрçи пуçланать. Вăл 1853-54 çулсенче Турцине хирĕç çеç пынă. 1854 çултан вăрçа, Турци майлă пулса, Англи, Францï тата Сардини çĕршывĕсем хутшăнаççĕ, 1856 çулччен пынă ку вăрçă. Нумай салтаксен пурнăçне вăхăтсăр татнă. Уйрăмах Севастополь хулишĕн хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. 1856 çула кĕрсен Ярмука та урараң вăйлă амантнă, ун хыççăн çапăçусенчи хăюлăхшăн ăна медальсемпе тата Георги хĕресĕпе наградăланă. Пиччĕшĕ Ярмука çартан-вăрçăран малтан лайăх кĕтсе илнĕ. Хăна пуçтарса сăйланă, хăйĕн çамрăк йăрĕпе ĕнерчĕкне парнеленĕ. Ярмук уеса кайса хăй службăра пулни çинчен тата çапăçни çинчен пĕлтернĕ. Уесран каялла килнĕ чух йăрне тем пулать, вилсе выртать.

Пиччĕшĕ çак кунтан ăна питĕ тарăхма пуçлать, Ярмукран кĕлетне туртса илет. Ял халăхне Ярмука хирĕç тăратать, унăн çĕрне те туртса илмелле тăваççĕ.

Ярмук нумай шутласа тăмасть, Хусана губернатор патне тухса каять. Хусанта патшалăх хресченĕсен пурлăхне сыхлас енĕпе ĕçлекен палата пулнă. Губернатор патĕнче шăпах М.А.Корф граф, патшалăх секретарĕ ларнă. Вăл темшĕн Ермолая килĕштерсе пăрахнă, унăн хутне кĕнĕ. Ярмука мĕн чул, ăçта çĕр кирлĕ çавăнта илме пултарни çинчен сургучпа пичет лартса распоряжени парса янă тата вулăса уйрăм указ янă. Часах вăл указ яла та çитнĕ. Ялти хресченсем хăраса ӳкнĕ. Пĕри те пĕри каçсерен хăй патне Ярмука хănana чĕннĕ, хăйĕн çĕрне тĕкĕнмелле мар тума ӳкĕтленĕ. Ярмук ял халăхне кӳрентерме шутламан. Вăл хăйне валли çĕр Шуркасси ай-

ккинче Хурашывпа Йĕкĕс пĕрлешсе Кушлавăша юхса кĕнĕ çĕрте илнĕ. Çĕре йĕркене кĕртсе пĕтĕмпех урпа акать. Çĕрĕ ушахрах вырăна лекнипе пулĕ 1864 çулта (типĕ çул) Ярмукăн урпи питĕ ăнса пулнă. Çав çул ялта унран пуян çын пулман, урпа ăна ура çине тăма чылай пулăшнă. Халĕ те халăхра çав вырăна «Ярмук кукри» тенине илтме пулать.

54 çул çине кайсан тин Ярмук авланса янă, ку вăл 1865 çулта пулнă. Арăмне Уравăшри Коноваловсен пысăк йăхĕнчен илнĕ. Ярмукăн Йăван ятлă ывăлĕпе Ултутпа Пăлаки хĕрĕсем ÿснĕ. Йăванран 3 ывăл: Ваçили, Куçма, Микула тата 3 хĕр: Марье, Матрÿне, Анна.

Ярмукăн хĕрĕ - Ултут, ялта Ерилеев Хĕлипе качча тухнă. Ярмук чее те хăюллă çын пулнă. Кÿршĕре Карп ятлă çын пурăннă, хутран-ситрен лашасем вăрласа сутнă. Пĕррехинче ют сас-чĕве сиссе, Ярмук карта урлă сиксе каçать, витере ют лаша тăнине курах каять. Ку ырра мар. Ял ячĕ каять-çке. Ярмук анкарти хапхине уçса, ăйăра Вĕлтрен çырми тĕпĕпе вăрман хĕрринелле илсе каять, тăлласа ярать. Каялла таврăннă чух кÿршĕсем патне кĕрсе мĕнле ĕç пулса иртнине пĕлтерет. Часах лаша хуçисем çитсе тăраççĕ. Пурте Карп патне каяççĕ. Унта ют ял çыннисем - Туçасем Карпа хĕнесе пĕтернĕ, «Витере лаша пур», - теççĕ. «Тухса пăхăр витене», - тет Ярмук. Тухса пăхаççĕ те – витере ют лаша çук та. Туçа çыннисен ирĕксĕрех нимсĕрех каялла каймалла пулнă, кайран вăрман хĕрринче хăйсен лашине курах каяççĕ. Çапла Ярмук ял чысне упраса хăварнă.

## ТУМИКСЕМ

Малалли сăмах Тумик таврашĕ çинчен. Ку йăх пуçлăхĕ - Тумик старик, вăл 1760-70 çулсенче çуралнă çын. Мĕншĕн ăна ун пек чĕннĕ-ха? Калама йывăр. Вăл халĕ эпĕ пурăнакан кил вырăнĕнче, кивĕ пÿрт тĕлĕнче тĕпленнĕ пулнă. Унăн çурчĕ Вĕлтрен шывĕ еннелле пăхса ларнă. Тумик час-часах вăрмана мăк кăларма çÿренĕ. Çавăнпа Йĕкĕс хĕрринчен хăмăшлăхпа вăрманалла кĕрекен çула «Тумик çулĕ» тенĕ.

Тумик йăхĕ майĕпен 4 пая пайланса кайнă. Пĕрремĕшĕ - Тумикĕн Мĕкĕте ятлă ывăлĕнчен - Илларионовсем, тепри Лазарь йăхĕ, виççĕмĕшĕ - Мироновсем, юлашки вара Куçмаран сарăлнисем. Никита Домиков çамрăклах çĕре кĕнĕ. Унăн 11 çулхи ывăлне Ухванеçе Иван мучăшĕ хăй патне усрама илнĕ. Çитĕнсе çитсен, Иван Лазаревич (мучăшне çапла чĕннĕ) Ухванеçе уйăрса кăларнă, çавăн чухне ăна хăй аллипе ăсталаса тунă пысăк йывăç тирĕк парнеленĕ. Тирĕкĕ паян кунччен упранать. Халĕ вăл музейра. Иван Лазаревичăн (вăл Елизавета Козловăн аслашшĕ пулать) 6 кĕтеслĕ пысăк çурчĕ Вĕлтрен еннелле пăхса ларнă. Вăл шыв арманĕпе лаша арманĕ те тытнă.

Тумик йăхĕнчи çынсен пурин те пекех вăйлă утарсем пулнă. Афанасий Никитин катка-пичке ĕçне ăста пĕлнĕ. Унăн ывăлĕ Лариван ăста сунарçă шутланнă. Вĕсем Алексей Иванович, Архип Павлович, Архип Семенович, Иван Антонович ухутниксем аякри тăрăхсене çитиех упа тытма çӳренĕ. Пĕррехинче Архип Павлович Утиван тăрринчен 2 упа турттарса килсе, ял халăхне питĕ тĕлĕнтернĕ.

Тумик мăнукĕнчен - Куçмаран йăх сарăлса кайнă. Куçмийĕ Хальхи Геннадий Домиков пурăнакан кил вырăнне 1870-72 çулсен тĕлнелле уйрăлса тухнă. Куçман ывăлĕ Матви пулнă, унсăр пуçне вăл тата Степан Андреев аслашшĕне (ăна халăхра Рамушки тенĕ, Роман пулать ĕнтĕ вăл) усрава илсе ӳстернĕ, каярахпа, тăварах вырăн тупса, уйăрса кăларнă. Матви ывăлĕнчен Мĕтрирен: Çеркей, Хĕветĕр,Çемен (ялта Çимукка тенĕ), хĕрĕсем: Ульки, Ултут çуралнă. Ку çемьерен типтерлĕ те ĕçчен çынсем тухнă, кашниех хăйне валли çирĕп хуçалăх çавăрнă, ялта çителĕклĕ пурнăçпа пурăнакан килсем тесе шутланнă. Çавăнпа та пулĕ Домиков Çемене çулла 1933 çулта кулак тесе судпа та айăпланă. Вăл 1910 çулта уйрăм хуçалăх çавăрнă.

Тумиксен тепĕр «турачĕ» - Мироновем тенĕччĕ. Мирон Алексеевич хальхи Элкер урамĕнчи Людмила Александрова вырăнĕнчен, Яков Захаров килĕнчен, уйрăлса тухнă, тăвалла хăпарса, Мария Спиридонова пурăнакан кил вырăнĕнче хуçалăх çавăрнă. Мирун ывăлĕ Мĕтри Октябрьски (Шăхча) урамне тухса ларнă. Вăл ун чухне çĕнĕ урам пулнă, пĕр 1923-24

çулсен тĕлнелле пуçланса кайнă теççĕ ун пирки. Пĕрремĕш килĕ - Никифор Сотниковăн.

Тумик таврашĕнчен Аслă Отечественнăй вăрçă фронтне 9 çын тухса кайнă, çав шутран 6-шĕ таврăнайман. Вĕсене ятпах палăртас килет: пĕртăвансем Василипе Яков Димитриевсем, Константин Илларионов, Алексей Семенов (хыпарсăр çухалнă), Семенпа Дмитрий (таврăнсан сурансенчен тӳрех вилнĕ) Мироновсем.

## ТУМИК ЙĂХĔН ĂРУ ЙЫВĂÇÇИ




Дмитрий Миронов вăрçăччен шкулта ĕçленĕ. Фронтра ăна вăйлă амантнă, вăл яла таврăнсан нумай та пурăнайман, вилсе кайнă. Унăн шăллĕ Çемен, 1919 çулта çуралнăскер, Улатăрти училищĕре машиниста вĕренсе тухнă. 1938 çулта Хĕрлĕ Çара кайнă. Служба пĕтиччен вăрçă пуçланнă, Çемен фронта кайнă, 84 номерлĕ танк батальонĕнче радист пулса тăнă. Семен Миронов сержант Ленинград çывăхĕнчи çапăçура 1943 çулхи январĕн 19-мĕшĕнче хăйĕн машини ăшĕнче çунса вилнĕ. Мироновсен çемйинчен аслă пĕлӳ илнĕ çынсем çителĕклех тухнă. Дмитрий Мироновичăн ывăлĕ - Юрий чылай çул каялла Мускаври М.В.Ломоносов ячĕллĕ университетран

вĕренсе тухнă. Мускавра пысăк органсенче, министерствăра строительство енĕпе ĕçленĕ. Унăн ывăлĕ Игорь Юрьевича хамăр республикăн Экономика министрĕ пулса ĕçлерĕ. Çамрăк министр Мускавра Г.В.Плеханов ячĕллĕ халăх хуçалăх институтне вĕренсе пĕтернĕ.

## ТИМАКСЕМ

Пирĕн яла чи малтанах куçса килнисем Маття урамĕ тĕлне пуçтарăнса ларнă пулсан, Шĕшкĕпуçпе Савкка 18-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче килнĕ пулса тухать. Алмантай Упакассинчен (республикăн çурçĕр енче) килнĕ чăвашсем ялăн асăннă урамĕсене пуçласа янă. Вĕсем пирĕн Упакасси тăрăхĕнче çеç мар, Кушлавăш уйĕн ытти ялĕсенче те тымар янă. Çавăнпа-и, тен, арман е пĕр-пĕр пысăкрах япалана сутмалла пулсан, ытти ялсенчи çынсем те хутшăннă. 1865 çулхи ятран çырнă ведомость çине Упакасси 4 пая пайланса кĕнĕ: пĕри - Пысăк Кушлавăша, тепри - Пĕчĕк Кушлавăша, виççĕмĕшĕ Алмантая, тăваттăмĕшĕ Имĕлтеше кĕнĕ. Ăçтан мĕнле ушкăнласа килнĕ-çавăн пек çырса хунă пулас. Алмантайне Пĕчĕк Упакассинчен 14 кил, Шепекечрен 4 кил, Пысăк Упакассинчен - 20 кил - пурĕ - 38 кил, Имĕлтеше 50 кил - Пысăк Упакассинчен 40 кил, Пĕчĕк Упакассинчен 10 кил кĕнĕ. Пĕчĕк Кушлавăшра 78 кил шутланнă. Пысăк Кушлавăша 205 кил кĕнĕ, кунта Кӳстюмĕр, Ершепуç, Хураçырма тата Пысăк Упакасси (10 кил) ялĕсем кĕнĕ. Асăннă 4 ушкăна стансем тенĕ. Имĕлтешсем ялăн Тури урамне пуçласа яраканĕсем пулнă, мĕншĕн тесен Тĕрек таврашĕсем 1880-90 çулсенелле пĕр çĕрелле пурăннă. «Посемейный список села Ильдемяшево» текен документа Тряковсен пĕтĕм йăхĕ кĕнĕ. Шĕшкĕпуçпе Савкка урамĕсенче пĕтĕмпе пекех Савкка йăхĕнчи çынсем пурăнаççĕ. «Ку йăха кĕменнисем асăннă урамсенче пĕр 10 киле яхăн çеç», çапла каласа параççĕ ватă çынсем. Савкка йăхĕ ялта чи йышлă, чи авалхи йăх шутланать. Ку йăха Ухлик, Тимак таврашĕсем, Исаевсем, Ениковсем, Тимак йышĕнчен тухнă Васильевсемпе Лаврентьевсем кĕреççĕ. Савкка йăхĕнче чаплă

ухутниксем, авалах хутла пӗлнӗ ҫынсем чылай пулнӑ. Паянхи кун тӗлне ҫак йӑхран тухса аслӑ шкулсенче вӗренсе пысӑк пӗлӳ илнӗ ҫынсем те сахал мар.

## ТИМАК ЙӐХӖ




Манӑн кукаҫи Алексей Иванович Еников та хӑйӗн вӑрӑм ӗмӗрӗнче (вӑл 82 ҫул пурӑннӑ) тем те курнӑ. Чылай ҫул хушши вӑл тимӗрҫӗре ӗҫленӗ.

Ҫав вӑхӑтрах вӑл питӗ хӑюллӑ сунарҫӑ пулнӑ. Вӑрмана ҫӳреме юратнӑ, ҫавӑнпах пулӗ хӑйӗн пурнӑҫӗн юлашки ҫулӗсене кукаҫи вӑрманта утар хуралҫинче ирттернӗ. Кукаҫин ӗҫре хытнӑ тӗреклӗ аллисем ачасем валли тетте ӑсталама та ҫыпӑҫуллӑ пулнӑ. Мӗн тӗрлӗ япала туман-тӑр вӑл! Ватӑрах ҫынсем каласа панӑ тӑрӑх вӑл пӗр 20 упа тытнӑ. Пӗр ҫулне ҫеҫ вӑл 6 упана ҫӗнтерме пултарнӑ. Вӑл вӑрмана кашнинчех пӑшалпа ҫӳремен, хӑш чухне упасене кукаҫи пуртӑ тӑршшӗпе ҫапсах тытма пултарнӑ. Чӑнах та, С. Элкер калашле, маттур та хӑюллӑ ҫын пулнӑ Алексей Иванович Еников. Мухтавлӑ ентешӗмӗр хӑйӗн «Упасем» ятлӑ калавӗнче манӑн кукаҫи сӑнарне юратса калӑпланӑ.

Çак Савкка урамĕнчех Çемен Элкер питĕ хисепленĕ çын - Иван Сидорович пурăннă. Ăслă та ĕçченскер, поэтăн асне нумайлăха кĕме пултарнă. Унăн хăй лартса ўстернĕ сачĕ пулнă (халĕ çав вырăнта Валерий Филиппов пурăнать). Иван Сидоровичăн аслă ывăлĕсем хулара вĕреннĕ, офицера тухнă. Симук ятли яла юлнă, кунта пурăннă. Вăл Клавдия Каскановăн ашшĕ пулать, иртнĕ вăрçăра 1941 çулта вилнĕ. Иван Сидорович ĕçленĕ шкул Евгения Сапожникова вырăнĕнче ларнă.

Николай Васильевич Исаев Савкка йăхĕнчен. Унăн кукамăшĕ, Пĕчĕк Упакассинчен пирĕн яла качча килнĕскер, пысăк çемьеллĕ пулнă. Кукамăшĕн пиччĕшĕ - Митрофан Дмитриевич священник пулса Кĕçĕн Явăш чиркĕвĕнче ĕçленĕ. Вăл Иван Яковлев пек чăваш алфавитне тунă, ăна лайăх пĕлнĕ. Унăн ывăлĕ Иван Митрофанович Чĕмпĕрти учительсен шкулĕнче Иван Яковлевпа пĕрле питĕ килĕштерсе, чунне парса ĕçленĕ. Хăй те священник ывăлĕ пулнăскер, питĕ ăслă çын шутланнă.

Иван Митрофанович Хусанти тĕн семинарийĕн пĕрремĕшпе иккĕмĕш класĕсене пĕтернĕ хыççăн, Петербургри придворнăй капеллăна лекет. Унтан вăл чиркўсенчи хорсене ертсе пыракан специалиста-регента вĕренсе тухать. Çамрăк учитель час-часах литературăпа музыка каçĕсем йĕркеленĕ. Хăй вăл сĕрме купăспа питĕ ăста каланă. Вăл тăрăшнипех Чĕмпĕрти шкулта театр уçăлнă, оркестр ĕçĕ лайăхланнă, çĕнĕ инструментсем çителĕклех туяннă. Иван Митрофанович вĕрентнĕ çамрăксем хушшинчен каярахпа чаплă солистсем тухни паллă. Ку шкулта вăл 5 çул ĕçленĕ. Шел, тĕлĕнмелле ăслă-тăнлă çыннăн пурнăçĕ кĕске пулнă, вăл 35-рех ўпке чирĕпе вилсе выртнă. Ăна Чĕмпĕртех пытарнă. И.Я.Яковлев хăйĕн асаилĕвĕсенче Иван Митрофановичăн ĕçĕсене çав тери пысăка хурса хакланă. Сăмах майăн, хамăр ялтан Çеçпĕл Мишшипе пĕрле вĕреннĕ çынсене аса илсе хăварар. Кушлавăш уйĕнчен пĕлĕве малалла тăсас шутпа Василий Матвеевичпа Павел Степанович Шăхасанти учительсем хатĕрлекен шкула çитнĕ. Вĕсене кунта Павел Степановичăн йыснăшĕ Александр Ломоносов священник вырнаçтарнă пулнă. Анчах Василий Матвеевича, те ашшĕ вилнипе, те чирленипе ку шкула вĕренсе пĕтерме май килмен.

Колхозсем тунӑ тапхӑрта 1930-33 ҫулсенче Савкка таврашӗнчен те «кулаксем» тупӑннӑ. Семенпа Никита Сябоскинсене пуян хресченсем тесе айӑпланӑ, сӑлтавсӑрах нуша кӑтартнӑ. Хальхи вӑхӑтра Савкка йӑхӗнчи ҫынсем ялта пӗр 70-80 киле яхӑн пулӗ.

## ЕНЮК ЙӐХӖН НЕСӖЛ ЙЫВӐҪҪИ




## ЛАВРУҪ ТАВРАШӖ (САВККАРАН)



## ÇАПĂÇКИ-САВККА ЙĂХĔН ПАЙĔ




## ЕРИЛЕ ЙĂХĔ



Амăшĕпе ывăлĕсем

Пирĕн ялта анлă сарăлнă йăхсем пирки пуçланă калаçăва малалла тăсăпăр. Ку ретре Ерилеевсем уйрăмах паллă выранта. 1760 çулсем тĕлнелле çуралнă Ериле старик вăрăм та типшĕм кĕлеткеллĕ, кăн-кăвак сухаллă çын пулнă. Кăмăлĕпе тӳлек, çăкăр-тăвартан ытлă-çитлĕ çын пулнă вăл. Хăй ытлашши пысăках мар, лутрарах пӳртре пурăннă. Ерилен тĕп вырăнĕ - Улатимĕр ывăлĕн Ваççук Ерилеевăн çурчĕ тĕлĕнче. Эпĕ архивсенчи документсене çавăркаласа пăхнă май, Ерилеев хушамат Упакассинче кăна пулнине асăрхаса юлтăм.

Ерилен 3 ывăл: Микула, Сергей тата Унтри (ялта Энтрюк

тенĕ) пулнă. Микуларан Ериле йăхĕ ыттисенчен ытларах сарăлса кайни паллă.

1880 çулхи списокра Ерилеевсен хуçалăхĕсем пĕр вырăнтах пулнă-ха. Ӳлĕмрен вара, урамсем çĕнелсе тата йыш хушса пынă май, Ериле тавраше çӳлелле хăпарса, ытти çĕрелле те сарăлнă. Микулан аслă ывăлĕ Макар (Якку Павловичăн ват аслашшĕ) хăйĕн Кириле ятлă ывăлне уйăрса кăларса, Малтикартиш урамне малалла тăсма пулăшать. Кириле вăйлă та тĕреклĕ çын пулнă. Микулан иккĕмĕш ывăлĕ - Михал (е Михалук). Унран 4 ывăл çуралнă: Якур, Виктор, Петюк, Çтаппан (Георгий Ерилеев ашшĕ). Якурăн ывăлĕсем Йăванпа Георгий йăхне малалла тăснă. Викторăн ывăлĕ Васçук иртнĕ вăрçăра паттăрсен вилĕмĕпе пуçне хунă, Микулай йывăр чире пула вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Петюкăн ачисем Соньăпа Васили. Василийĕ киле кайса кĕни паллă. Вăл Николай Ерилеевăн (вăхăтсăр вилнĕ) ашшĕ пулать.

Муççа - Микулан виççĕмĕш ывăлĕ, унран Михал ятлă ывăл çеç юлнă. Михалăн ывăлне Аркадий, хĕрне Варвара (Нина Николаевнăн амăшĕ) тесе чĕннĕ. Микулан 4-мĕш ывăлне Кондрат ят хунă. Унăн ывăлĕ Петюк. Петюкăн 3 ача пулнă. Микули вăрçăри сурансене пула вилнĕ. Михалĕ те çапăçу хирĕнче выртса юлнă.

Микула ывăлĕн - Макарăн - Матви ятлă ачи пулнă. Матвирен Павăл, Павăлран вара 8 ача çуралнă - 3 хĕр тата 5 ывăл: Улатимĕр, Петĕр, Васили, Микулай, Якку. Хĕрĕсенчен пĕри - Петĕр Яичниковăн амăшĕ, тепри, Клавди Кӳстӳмĕре качча тухнă.

Наçтуçĕ Анаткаса качча тухнă. Павăл ывăлĕсен те ачисем йышлă пулнă. Вĕсем пирки халăхра «Турри ывăлĕсенчен кӳрентермен», - тесе каланă.

Ерилен иккĕмĕш ывăлĕнчен - Çеркейран çут тĕнчене Петĕр килнĕ. Петĕрĕн 5 хĕр (тăваттăшĕ çывăхри ялсене качча кайнă, пĕри ялтах юлнă) тата Хĕлиппе Хветюк ятлă ывăлĕсем пулнă. Филипп Петрович Ярмук таврашĕнчен Ултут ятлăскерне арăм тунă. 4 ывăлпа 2 хĕр çуратса ӳстернĕ вĕсем. Асли Павăл Укураинăри Шепетовка çывăхĕнче çапăçса, вăрçăра хыпарсăр çухалнă. Çӳллĕ те патвар кĕлеткеллĕ Васи-

ли, авлансанах ӳпке чирӗпе чирленӗ те тек ураланайман. Юпала качча кайнӑ Крахвине хӗрӗ те ҫамрӑклах ҫӗре кӗнӗ. Тепӗр ывӑлӗ Микулай вӑрҫӑран урасӑр таврӑннӑ. Аслӑ сержант, мирлӗ ӗҫе кӳлӗнсен, ялти ҫыхӑну уйрӑмӗн начальникӗнче тимленӗ. Тепӗр хӗрӗ Ултутти. Хӗлипӗн Петӗр ятлӑ ывӑлӗнчен 5 ывӑл юлнӑ. (Шел, Петӗр хӑй 1941 ҫулта утӑ уйӑхӗнче сасартӑк вилсе кайнӑ).

Ваҫилипе Микулай умлӑн-хыҫлӑнах - пӗри 1942 ҫулта, тепри 1943 ҫулта чирлесе вилнӗ. Юрать-ха унӑн ытти ывӑлӗсем: Владимир, Алексей тата Анатули ура ҫине ҫирӗппӗн тӑма вӑй-хал ҫитернӗ. Пӗчӗклех ашшӗсӗр, пиччӗшӗсемсӗр юлнӑскерсенӗн сахал мар хура-шур курма тивнӗ, анчах та вӗсене нуша-асап авса хуҫайман. Виҫҫӗшӗ те тӑван ялта хӑйсен телейӗсене тупнӑ, кун-ҫулӗсене хура-шурпа ҫыхӑнтарни малалла шанчӑклӑн ярса пусма тӳсӗмлӗхпе чӑтӑмлӑх панӑ вӗсене. Владимир Петровичӑн 5 ачинчен виҫҫӗшӗ аслӑ пӗлӳ илме пултарчӗҫ, иккӗшӗ техникумран вӗренсе тухрӗҫ. Вӗсем пурте Йӗпреҫ тӑрӑхӗнче хисеплӗ те сумлӑ ҫынсем. Владимир Петрович хӑйӗн кӗҫӗн шӑллӗпе Ҫӑка урамӗнче (халӗ ӑна Парк



Ерилеевсен ҫемйи

урамĕ теççĕ) пурăнать. Сăмах май, ку урам колхозсем тунă вăхăталла йĕркеленнĕ. Тĕрĕсрех, 1930 çулта, кăрлачăн 28-мĕш кунĕнче.

Ерилен 3-мĕш ывăлĕ Унтри терĕмĕр. Унăн ывăлĕсенчен, Çтаппанран Алтакки (Евдоким) çуралнă.Тĕлĕнмелле маттур сунарçă пулнă теççĕ ун пирки. Алтаккин 2 ывăлпа 4 хĕр çут тĕнчене килнĕ. Юлашки икĕ хĕрĕ (Аннапа Маня) ялта хăйсен çемйисемпе пурăнаççĕ. Алтаккин ывăлĕсем: Унтрипе Йăкăнат иккĕшĕ те иртнĕ вăрçăра пуçĕсене хунă.

Паянхи куна илсен, ялта Ерилеевсем 20 кил ытла.

## ЕРИЛЕ ЙĂХĔН НЕСĔЛ ЙЫВĂÇÇИ



- Михалук
  - → Якур
    - → Йăван
    - → Георги
  - → Виктор
    - → Ваççук (вăрçăра вилнĕ)
    - → Микула
  - → Петюк
    - → Ваçили
  - → Çтаппан
    - → Георги

Муçça → Михал → Аркади → Борис
- Аркади → Петĕр

Кондрат → Петюк → Микула (вăрçăра аманнă хыççăн вилнĕ)
- Петюк → Михал (вăрçăра вилнĕ)

## ЯРЧИ ЙĂХĔ

Малалла Ярчи йăхĕ çинчен каласа парар. Ярчи старик хальхи Тури урам хыçĕнче хуçалăх çавăрнă, ун анкартийĕ пулнă вырăна 3 пĕве чавнă. Ярчи старикĕн 3 ывăл пулнă: Михала, Хветут, Хĕлип. Урамсем пуçланса кайсан, вăл ывăлĕсене уйăрса кăларнă. Михали хальха Çеркей Иванович Тряков пурăнакан вырăнта çурт лартать (ку вăл 1850 çулсем иртсен пулнă). Хветучĕ унпа юнашар (Çемукка Ульки килĕ вырăнĕнче), Хĕлипĕ,вăл Ярчеев Ваççукăн ват аслашшĕ, çав вырăнтах тĕпленнĕ: 18-мĕш ĕмĕр вĕçнелле паянхи Октябрьски (Шăхча) урамĕн хыçĕнче вăрман сарăлса ларнă. Вĕлтрен çырмин юппинче (Анисимов Николай хыçĕнче) Ярчи старикĕн таврара çук пысăк утар пулнă, авалтан юлнă сăмах тăрăх унта Ярчи старик икçĕре яхăн вĕлле тытнă, имĕш. Ун патне пыл çиме е туянма таçтан та килнĕ. Кам та пулин хăнана килес тăвас пулсан, вăл пылне пысăк чашăкпах лартса панă.

Çемен Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэмăри Пахомкка атаман Ярчи старике çапла каланă пулать: «Кăнтăрла пире йытăпа вĕслетрĕн. Сан патна каçхине пыратпăр. Тăраниччен пыл çитерсен сана каçарма пулĕ». Каланă - тунă. Старик пылне

шеллемен, атаман та ăна малашне тивмен. Хĕлипĕн пĕр ывăл çеç, Микула çуралнă. Микулан вара 6 ывăл ӳснĕ: 4-шĕ яла юлнă. Кĕçĕннисем Петĕрпе (ялта Пăтькă тенĕ) Якурĕ Столыпин вăхăтĕнчи реформăпа килĕшӳллĕн Çĕпĕре çĕнĕ çĕре куçса кайнă. Ялта юлнисем Куçмапа Çĕпритун тăван ялта йăх сарнă. Куçман Макçăм, Михала, Микита ывăлĕсем. Пурте Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннă. Макçăм Куçмич старшина пулса яла Мухтав орденĕпе таврăннă, пĕр вăхăт хушши колхоз председателĕн çумĕнче тăрăшнă. Михала та вăрçăран сывах таврăннă. Пĕр Микитан пурнăçĕ сарăмсăр çапăçура татăлнă. Вăл вăрçăра ефрейтор чинĕпе 124-мĕш стрелковăй дивизире çапăçнă. 1942 çулта Украина çĕрĕ çинче Харьков çывăхĕнче пирĕн çар çухатусем тӳснĕ. Дон шывĕ урлă каçнă чухне Никита Кузьмич вилсе выртнă. Микула ывăлĕн, Çĕпритунăн, 3 арçын ача çуралнă: Ваççук, Якку, Михал. Михалĕ, 1924-мĕш çулта çуралнăскер, вăрçăра 1943 çулта паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Ваççук пичче ялта тĕпленсе пурăнать. Якку пичче çамрăклах районти комсомол комитетĕнче ĕçленĕ, кайран иртнĕ вăрçăра çапăçса пысăк наградăсене тивĕçнĕ. Вăл подполковника çитнĕ.

Йăван ывăлĕсем: - Ваçили (халăхра ăна Ваçилий Ярчейч тенĕ, кӳрши те Ваçли Иванч пулнă пирки), Илья тата Хрисан (вăл вăрçăра вилнĕ). Илья Иванович çемйинче 6 ывăл ӳснĕ, улттăшĕ те фашистла Германие хирĕç çапăçма тухса кайнă, анчах тăваттăшĕ: Левенти, Ваçили, Андриянпа Санюк вăрçăран таврăнайман. Иккĕшĕн çеç: Ĕлĕкçипе Йăванăн телейĕ хăйсемпе пĕрле çӳренĕ, вĕсем яла сывă таврăннă.

Кăштах Ваçили çинче чарăнса тăрăпăр.Ваçили вăйлă пулнине çак пулăм çирĕплетет. Пĕррехинче Дмитрий Миронович, Кĕкури Тимофеевич тата Ваçили тавлашса кайнă: «Кам вăйлăрах?» Ваçили нумай шутласа тăмасть, 1934 çулта колхоза илсе килнĕ «Фордзон» трактора çĕртен пĕр шит çӳлерех çĕклесе кăтартать. Кăна курсан, Кĕркури çывăхра выртакан 6 метрлă пĕренене йăтать те тепĕр вырăна кайса хурать. Дмитрий Миронович, аптранă енне, 100 кг туртакан тарасана йăтса антарать. Ваçили ывăлĕ Йăван ялта тымар янă, тепри, Микула, Çĕпĕрте Бийск хулинче пурăнать. Хветутăн 5 ывăл

çитĕнне́. Ярчеевсем ялта 12 кил, çĕнелсе пыракан йăх. Ман шутпа тепĕр 20-30 çултан вĕсен йышĕ 2 хут ӳсме пултарать. Ярчеевсем колхоз ĕçĕнче активлă тăрăшакан çынсем, вĕсенчен нумайăшĕ хăйсен пурнăçне çĕр ĕçĕпе çыхăнтарнă.

## ЯРЧИ ЙĂХĔН НЕСĔЛĔН ЙЫВĂÇÇИ




## ПОЭТĂН ПĔРРЕМĔШ ЮРАТĂВĔ ÇИНЧЕН

Çемен Элкер «Хурапа шурă» хайлавĕнче хăйĕн пĕрремĕш юратăвне аса илет. Шкулта юлашки çул вĕреннĕ чухне вăл 11 çулхи хĕрачана Вассăна юратса пăрахнă. Сарă çӳçлĕ, кăвак куçлă хытанкарах яштака пӳллĕ çамрăк пике пулас поэт чĕринче чи таса та хĕрӳллĕ туйăмсем çуратнă. Вăл ун патне вĕçĕмсĕр çырусем, сăвăсем çырнă, анчах хирĕç хурав килменни качча чунне тăмаланă, асаплантарнă. Васса Степановна ялăн тепĕр вĕçĕнче, Савкка урамĕнче пурăннă. Унăн çемйи тĕреклĕ хуçалăхпа пурăннă, вăл ашшĕпе амăшĕн пĕртен-пĕр хĕрĕ пулнă. Вăхăт иртнĕçем çав хĕрӳллĕ туйăм майĕпен сĕвĕрĕлсе вăйсăрланса пынă, анчах каярахпа та кашни кур-



Ç.Элкерĕн пĕрремĕш юратăвĕ - Васса (ачапа)

массерен е аса илсен поэтăн чĕрине ăшă юхăм саланнă. Тен, вĕсен чĕрисем пĕрлешме те пултарнă. (Каярахпа Çемен Элкер хĕр хăйне те питĕ юратнине пĕлнĕ.) Пĕрремĕш тĕнче вăрçинчен поэт йывăр сусăрланса килсен, вăл хĕр умне курăнма вăтаннă, ун юратăвне тивĕçлĕ мар, вĕри туйăм вырăнне шеллени çеç юлнă тесе шутланă-ши. Вăл Хусана вĕренме тухса кайнă. Ун хыççăн Васса ялти каччăна качча тухнă. Кам пулнă-ши Элкер юратнă хĕрĕн упăшки? Вăл Малтикартиш урамĕнче çуралса ӳснĕ, вăтам хуçалăхра пурăнакан хресченĕн Уçăп Павловичăн ывăлĕ - Микула пулнă. Хăй вăхăтĕнче, 19-мĕш ĕмĕр вĕçнелле, вĕсен пӳртĕнче ялти шкул вырнаçнă. Микулана каярахпа вăл ял-йышпа яланах сăпайлă та çемçе кăмăллă пулнăран тата хутла лайăх пĕлнишĕн (Кушлавăшри земство училищине вăл «5» паллăсемпе çеç - «Похвальный листпа» пĕтернĕ) ялта ăна Николай Осипович тесе чĕнме пуçланă. Хытанкарах, çӳллех мар кĕлеткеллĕ арçын яланах ĕçре тăрмашнă, лăпкăлăхĕпе уйрăлса тăнă. Унăн ашшĕ йăхне ялта Чакка йăхĕ теççĕ. 18-мĕш ĕмĕрте чухăн хресчен, пăлхавçă пулнă, Чаккан малалли несĕлĕ каярахпа «кулаксен» тавраш-не лекнĕ, вĕсен ачи-пăчине пурне те Çĕпĕре янă. Микула Çĕпĕре лекеймен. «Вăл 1930 çулта кăрлачăн 28-мĕш кунĕнче



Н.О. Осипов

тăван ашшĕ килĕнчен уйрăлса тухса, çĕнĕ вырăнта тепĕр тăкăрлăк (урам) пуçланă», - çапла пĕлтерет хуçалăх уйрăлни çинчен калакан документ. Ăна Çăка урамĕ е Çăка тăкăрлăкĕ тенĕ. Микулапа Васса пĕр-пĕринпе 2-мĕш тĕнче вăрçи пĕтсен уйрăлнă. Васса упăшкине 11 ача çуратса панă (5-шĕ вăхăтсăр çĕре кĕнĕ) 6-шĕ пурнăç çулĕ çине тăма хатĕрленнĕ. Çапла 2 тĕнче вăрçинче пулнă фронтовик-ветеран, 1942 çулта амансан, чылай вăхăт Мордовинчи Торбеевăри эвакогоспитальте сипленнĕ. 1946 çулта 6 ачапа арăмĕсĕр юлнăскер, тепре пĕр ачаллă, вăрçăра упăшкине çухатнă хĕрарăма качча илнĕ. Натиш Вассапа туслă пулнă. Чире кайсан Васса упăшкине хăйĕн кӳршĕ хĕрарăмĕпе пĕрлешме ыйтнă, иккен. Пурнăç тăршшĕнче кам кăна пулса ĕçлемен-ши Николай Осипович: ял Совечĕн секретарĕнче, страхагентра, Етĕрнери педагогика училищи валли вутă хатĕрлеттерме уйăрнă çын, «Победа» колхозăн утарçи, темиçе çул та районти халăх сучĕн заседателĕ пулма суйланă ăна! Кашни ĕçе вăл тĕплĕ те çыпăçуллă тунă. Хăй вăхăтĕнче вăл Çемен Элкерпе, Стихван Шавлипе тата ыттисемпе те çыру çӳретнĕ. 82 çул тултарсан вăл лăпкăн çут тĕнчерен уйрăлнă.

## УТАРСЕМ

Каларăмăр ĕнтĕ, вăрман çĕр çӳл каялла питĕ çывăх пулни çинчен. Çакна кăтартакан паллă-Вăрнар еннелле каякан шоссе сулахай енче упранса юлнă йывăçсем. Çакăнта ĕлĕк питĕ вăйлă çăкалăх пулнă, теççĕ. Тӳрем шăплăхри çăкасем айĕнче, Тумиксен 4 утарĕ вырнаçнă. Вĕсенчен чи пысăкки Никитин Афанасий тытаканни. Унăн утарĕнче 40 вĕллене яхăн пулнă (хут çинче 28 шутланнă). Вĕллесен шучĕпе çынсене налук тӳлеттернĕ. Çавăнпа утар хуçисем вĕсене чылай пĕчĕклетсе çыртарнă. Пыл ун чухне те пысăк тупăш паракан продукци пулнă-çке.

А.Никитин та (Архип Илларионович аслашшĕ) хăйĕн утарĕнчен çулталăкне 180-шар тенкĕ тупăш илме пултарнă (1 пăт ыраш вăл вăхăтра 50 пус пулнă, 1860-70 ç.ç.).



Вĕсем «Социализм» артельте ĕçленĕ (1953 ç.)

Упакасси çыннисен утарĕсем ытларах Йĕкĕс тăрăх, Карăк çырми (карăксем нумай пурăннăран каланă) хĕррипе, хальхи Çăл çырми тăрăх вырнаçса тухнă. Ĕлĕкхи Йĕкĕс тăрăхне хальхипе танлаштарма ниепле те май çук. Питĕ хӳхĕм, илĕртмелле вырăн пулнă кунта. Çăка шăрши сăмсана кăтăклантарнă, пыл хурчĕсем сĕрлени катаран илтĕнсе тăнă. Çав вы-

рӑнта пурӗ 15 утар пулнӑ. Вӗсенчен ытларахӑшне Тури урам ҫыннисем тытнӑ. Тахҫан ӗлӗкрех тавралӑхӗ илемлӗ пулнӑран-ши, те Йӗкӗс леш енче ирӗклӗ ҫӗрсем нумай выртнӑран, ҫак вырӑна тата «ҫуннӑ завод» ҫырми леш енне ялтан уйрӑлса тухакансене пама шутланӑ. Темшӗн-ҫке ку шухӑша кайран пӑрахӑҫланӑ.

Сӑмах май каласан, «ҫуннӑ завод» тесе 1930 ҫулта йӗркеленнӗ «Социализм» артеле калаҫҫӗ. Вӑл артель пурӗ те 24 ҫул ҫеҫ ӗҫленӗ. Катка-пичке тунӑ, тӑкӑн авнӑ, халӑха чӑпта ҫаптарнӑ, курӑс кӑларнӑ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ҫак артель фронт валли ҫуна, кӗреҫе аврисем, вӑрҫӑ техникине чӗркеме чӑпта авраш ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр хатӗрленӗ. Пирӗн ялтан ҫӗршер ҫын ку артельте ӗҫлесе фронта пулӑшнӑ. Артель правленийӗ Тури урамра Семен Домиковӑн 5 кӗтеслӗ пӳртӗнче (ӑна «кулак» тесе туртса илнӗ) вырнаҫнӑ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн завод ҫумне ҫӗнӗ правлени ҫурчӗ ҫавӑрнӑ. 1954 ҫулхи кӗркунне ҫак артель ҫунса кайнӑ. Вӑйлӑ пушар кунти ҫуртсене (бараксене), кантура, заводне веҫех кӗл тунӑ.

«Ҫуннӑ завод» ҫырминчен ял еннелле Ҫӑл ҫырми выртать. Ҫак ҫырмара Каҫмичсен (Кузьмич ятран каланӑ) утарӗсем ларнӑ, пурӗ 5 утар. Ҫӑлне Афанасий Никитин чавнӑ, хӑех пӑхса тӑнӑ. Кайран ӑна Ю.З. Ластухин председательте ӗҫленӗ чухне чулпах ҫавӑрса, ҫӑлне анлӑлатса майлаштарнӑ.

Кунти вӑрмана 1925-27 ҫулсенче касма пуҫланӑ. Вӑрмана хӑртса халӑха валли ирӗклӗ уйсем тума йышӑннӑ. Малтанхи уйсем Йӗкӗс леш енче пулнӑ. 1930 ҫулсенче халӑх ҫӗрӗ ҫине хальхи хырлӑх лартса хӑварнӑ. Ку ӗҫе Йӗпреҫ вӑрманҫисем кӑна мар, Упакасси ҫыннисем те хутшӑннӑ. Хырлӑха Хурашыв енчен лартса килнӗ. Кайран, тепӗр 30 хул иртсен, ҫав тӑрӑхра малтанхи сукмак тӑрӑх хытарнӑ ҫул тума пуҫларӗҫ. Ун пӗр айккипе ем-ешӗл хырсем лартрӗҫ. Йӗпреҫе Вӑрнарпа ҫӗнӗ ҫул ҫыхӑнтарчӗ.

Карӑкҫырми ҫумӗнчи хӳтлӗхре 5-6 утар та пулнӑ. Вӗсене вӑрӑсем тустарни те час-часах пулкаланӑ. Пӗррехинче юланутлӑ вӑрӑсем Элкерсен утарӗсем ҫине тапӑннӑ. Ҫакна сиссен Якрав старикпе Элкер Павӑлӗ лашасемпе, сунарҫӑ пӑшалӗсемпе вӗсем хыҫҫӑн вӗҫтереҫҫӗ. Хура шыв вӗҫне ҫитме

те инçе юлман ĕнтĕ. Винтовкăсенчен персе, вăрăсем Элкер Павăлне (вăл Çемен Васильевич Элкерĕн пиччĕшĕ) вилмеллех амантаççĕ. Якрав старике те питĕ йывăр амантнă, тепĕр эрнерен вăл та вилсе кайнă. Вăрăсене тытма хутшăннă Алексей Герасимовича та алăран амантнă, аллине кайран татмалла килсе тухнă.

## АРМАНСЕМ

Утарсемпе çеç мар, армансемпе те пуян пулнă кунти халăх. Çынсем çил вăйĕпе ĕçлекен армансемсĕр пуçне (пирĕн ялăн çил арманĕ Çĕнĕ урамран Ершепуçне кайнă чухне çулăн сулахай енче ларнă) шыв тата лаша арманĕсем тытнă. Шыв арманне тытса тăма çăмăл пулман, çулсеренех, çуркуннесерен тата-тата кайнă. Пĕрехмай юсаса тăма пысăк чăтăмлăх, вăй, пĕлӳ, укçа кирлĕ пулнă. Йĕкĕс тăрăх çеç 4-5 арман ларнă. Хамăр ял çыннисем çеç мар, кӳршĕри ялсен е аяккарахри çынсем те кунта хăйсен арманĕсене тытнă. Кивĕ мăн çул çинче Захар Осиповичăн арманĕ, унран кăшт аяларах Алексей Ивановичăн (Сумкинсен) арманĕ ĕçленĕ. Малтан Кирлен, Çтаппанăн арманĕсем пулнă. Кушлавăш çинче Семен Назарович хăйĕн арманне 12 çул хушши пĕртте таттармасăр ĕçлеттернĕ. Арман пĕвисенче çăрттансем ĕрчесе кайни çинчен калаççĕ.

Шуркассинчен аялалла Уçăп Павловичăн арманĕ вырăнĕнче малтан Семен Назаровичăн пулнă. Хальхи шкул çывăхнелле Сильвестр Синяковăн шыв арманĕ кăлтăртатнă, тимĕр-тăмăр лавкки вырăнĕнче унăн çил арманĕ хăлаçланнă.

Лаша арманĕ тытакансем те вуннăран иртсе кайнă. Тури урамалла Элкерсен, Кузьма Зиновьевичăн, Илларион Афанасьевичăн (хальхи çул çинче Иван Никифоровпа Иван Ефремов хушшинче - унта ĕлĕк çул тавраш пулман, хупă тытнă), Иван Лазаревичăн Вĕлтрен шывĕ çинче, хальхи кĕпер патнелле шыв арманĕ, айккинерех, çӳлерех лаша арманĕ пулнă.

## ТĔРЛĔ ЕНЧЕН ПАЛЛĂ ÇЫНСЕМ

Упакассинчи вак-тĕвек япаласемпе, какай-тырăпа сутă тăвакансем те пулнă. Сильвестр Синяковпа Исук старик (Тимаковсен йăхĕнчен) халăхра какай пуçтарса Петербург таранах сутма çÿренĕ. Павел Степанович Тряков 10-15 сысна усраса çывăхри хуласене какай тăратнă. Чи вăйлă купса, ăс-тăн енчен çивĕчскер, çав вăхăтра паллă çын -Ухлик Макçăмĕ пулнă. Вăл час-часах таварпа Çĕрпĕве, тĕрлĕ хуласене çÿренĕ. Халăхра ăна хисеплесе Макçăм Романович тесе чĕннĕ. Вăл Японипе Раççей хушшинче 1904-1905 çулсенче пынă вăрçăра вилнĕ. Романăн тепĕр ывăлĕ Тихăнĕ ашшĕн мулне пĕтĕмпех салатнă, теççĕ.

Макçăм Романович пек хут пĕлекен çынсем ялта татах та пулнă. Павел Степанович 1917 çулсем тĕлнелле юнкер пулнă, пĕрремĕш тĕнче вăрçинче çапăçнă, вăл патша çарĕнче унтер-офицер пулнă. Хут пĕлекенсенчен Тури урамра пурăннă Кузьма Яковлевич Сапожников тата Семен Васильевич Элкер пулнă. Кассацисем çырмалла-и, çыру таврашĕ ямалла-и - ялта вĕреннĕ çынсем сахал пулнă пирки ял халăхĕ вĕсем патне ытларах пынă.

## ЛАВККАСЕМ

Çав вăхăтри документсене тишкернĕ май, эпĕ тата çакна та асăрхарăм: ялта лавкка тытакансем сахал мар пулнă ун чухне. Вĕсем халăха тĕрлĕ енчен кÿрсе килнĕ таварсемпе тивĕçтерсе тăнă. Акă, илĕпĕр Мĕтри Сапожникова. Унăн сутă тумалли ятарлă вырăн пулнă, тăпăл-тăпăл çуртра вырнаçнă вăл. Ял çыннисене те, килен-каяна та пĕр вĕçĕмех хăй патне туртнă. Вăл ытларах промышленность таварĕсем сутнă. Ку лавккари пек йышлă тавар ялта тек нихăшĕн те пулман. Коллективизаци тапхăрĕ кĕрлесе çитсен, лавккаçăн çуртне те, пурлăхне те туртса илнĕ. Пачча Симунĕ те сутăç ĕçне самаях ăнтарнă. Çăкăр-кулачсăр пуçне вăл халăха çурта сутса пайта пухнă. Апла пулин те, тулăх пурнăçпа пурăнма мехел



С.М. Тряков лапкаҫӑ (сухаллӑ) 2-мӗш ретре

ҫитерейме Симун. Ялта 30-мӗш ҫулчченех упраннӑ юлашки хура пӳрт Симунӑн пулнӑ, теҫҫӗ. Колхоз йӗркеленӗ вӑхӑтра ӑна пакурсемпех тӗксе йӑвантарни ҫинчен каласа пачӗҫ мана. Чухӑнлӑх палли куҫ умӗнчен тасалтӑр тенӗ-ши? Сергей Михайлович (Максим Сергеевичӑн ашшӗ) апат-ҫимӗҫ тата вак-тӗвек япаласемпе суту-илӳ тӑвакан лавккинчен те ҫынсем татӑлма пӗлмен. Малтикартишӗнчи Степан Михайлович канцеляри таварӗсене кӳрсе килсе сутса тӑнӑ.

Кушлавӑш тӑрӑхне ҫӗрулми 19-мӗш ӗмӗр варринелле тин ҫитнӗ, иккен. Ӑна Чӑваш енче 1830-40 ҫулсенче тин уйрӑм лаптӑксемпе лартса ҫитӗнтерме тытӑннӑ.

Чи малтанхи ал пӑчкине ялта кам тытса курнӑ, тетӗр? Тӗрек ывӑлӗ Кӗпитун мучи! Акӑ, Тури урама пуҫласа ярсан,1850 ҫулта Ухванеҫ Никитин уйрӑлса тухса ҫӗнӗ ҫурт лартма шутланӑ. Кӗпитун мучи ун патне нимене ҫав пӑчкӑна йӑтса пынӑ та.

Пӗрремӗш патефон Уҫӑп Алекҫейчӑн пулнине каласҫӗ (20-мӗш ӗмӗр пуҫламӑшӗнче). Малтан унпа сайра-хутра кӑна,

ытларах мăнкунсенче çеç усă курнă-мĕн. Унăн хĕрĕ Енькка Мĕлĕше качча кайнă чухне патефона мăн урама илтĕнмеллех янă. Туй курма пынисем çав тĕлĕнтермĕш çине ăмсанса та кăсăкланса пăхнă ĕнтĕ.

Ялти пур урамсем те хăçан пуçланса кайни çинчен çыртăмăр ĕнтĕ, анчах пĕрне манса хăварни статья вĕçне тухас умĕн тин палăрчĕ. Çĕнĕ урам (хут çинчи пек каласан, Советски урамĕ) историйĕ çапларах. 1880 çулта туса хатĕрленĕ ял планĕнче Вĕлтрен юханшывăн леш енне çĕр лаптăкĕсем уйăрса хăварнă. Унта Турикаспа Вăтакас çыннисен ят çĕрĕсем пулнă.

Ял планне туса хатĕрличчен маларах Маттял урамĕнче питĕ вăйлă пушар сиксе тухнă. Çакăн хыççăн Уравăш вулăсĕнчи кантур çынни Сергей Александров ыйтнипе Етĕрне уесĕнчен Боголюбов хушаматлă техника яла çĕнĕрен планлама янă пулнă.

Çак пулăмсем хыççăн 1892-95 çулсенче Геннадий Матвеев аслашшĕ - Матви Павлович Вĕлтрен урлă каçса çӳреме кĕпер тунă, юханшывăн тепĕр енче вăл кил-çурт лартнă. Çапла пуçланса кайнă та Çĕнĕ урам. Матви çумнех Лариван Сахарĕ тата Тĕрек йăхĕнчи Петĕрĕн Уçăп ывăлĕ пырса ларнă. Екатерина Сумкина вырăнĕнче Семен Сильвестровăн хĕрĕ Антуни пурăннă. Ун патне Митрахван Петĕрĕ киле пырса кĕнĕ. 1938-39 çулсенче Çĕнĕ урамра вăйлă пушар алхаснă, асăннă çурт хуçисен пурлăхĕсем пĕтĕмпех кĕлпе вĕçсе кайнă. Пушар хыççăн Митрахван Петĕрĕ çак урамран тăварах çĕнĕ çурт çавăрнă. Вĕсем кунтан кайсан, ку вырăна Тимахви Сумкин куçса ларнă. Вăл унччен Шăхча урамĕнче Савелий Федьков (вăл лесникре ĕçленĕ май ялта тĕпленсех пурăнман) килĕнче кĕтес тупнă пулнă. Сумкинсен тĕп вырăнĕ - Роман Сумкин килĕ. Ку килтен Елĕкçи тухса ларнă. Çак килте Пăлакипе Груша пĕртăван хĕрсем пурăннă. Калама çук хитре те илĕртӳллĕ пулнă вĕсем. Семен Васильевич Элкер çамрăк чухне Пăлакипе питĕ туслă пулнине калаççĕ. Темшĕн-çке шăпа вĕсене пĕрле пурăнма çырман. Çамрăклăхри чечен те ăнăçман юрату темине хăйĕн чылай произведенинче хускатнă мухтавлă ентешĕм.

## УПАКАССИНЧИ СУМКИНСЕМ




## ПĔРРЕМĔШ ТĔНЧЕ ВĂРÇИ

Çакă паллă: 38 çĕршывăн ертӳçи каварлашса тата ют мула хапсăнса пуçласа янă ку вăрçа. Унăн синкерлĕ хумĕ Чăваш Енне те вăйлăн пырса çапнă. «Вăрçă тухнă» текен хăрушă сăмахсем ял çыннисене кулянтарсах ӳкернĕ. Епле кулянмăн? Ара, талккишпе пиçсе çитнĕ тырпула уй-хиртен пуçтарса кĕртмен. Арçынсене, туртăм вăйне фронта ăсатма пуçланă. Вăраха тăсăлнă вăрçа чăвашсенчен 100 пин ытла вăйпитти арçын вăрçа хутшăннă, чăваш халăхĕн ĕçлеме пултараканнисенчен 43 проценчĕ алла хĕçпăшал тытса хаяр çапăçу вутне кĕнĕ. Ку çеç те мар-ха, 17 пин ытла чăваша окопсем чавма е хĕçпăшал туса кăларакан заводсене ĕçлеме ăсатнă. Унччен заводсемпе фабрикăсенче 11 сехет çурă ĕçлеттернĕ пулсан, вăрçă çулĕсенче çынсем 13-14 сехет таран вăй хунă.

Вăрçă терчĕ уйрăмах ялсенче пурăнакансене нушалантарнă. Лашасăр тăрса юлнă хресченсем пĕтĕм йывăр ĕçе алă вĕççĕн пурнăçланă. Ун чухне 30 пин лашана вăрçа ăсатнă вĕт. Вăрçă йывăрлăхĕсен çĕклемĕ хĕрарăмсем çине тиеннĕ. Пурнăçĕ вара чăтмалла мар хĕсĕнсе çитнĕ. Кунсăр пуçне тата вăрçă куланайĕ (кун пек парăм та пулнă) юлашки тире сӳнĕ. Налук шучĕпе хресченрен юлашки выльăх-чĕрлĕхе, кĕлетсенчи тырра пуçтара-пуçтара кайнă. Çапла, пур çĕрте те тенĕ пек чухăнлăх хуçаланнă. Выçăллă-тутăллă пурăнакансем



П.С. Степанов унтер-офицер (1916 ç.)

уйсенче тĕштыра тата ытти культурăсене çитĕнтерейми пулнă. Акăнман çĕр лаптăкĕсем нумайланса пынă,унăн лаптăкĕ 21 процентпа танлашнă.

Çав çулсенче Пысăк Упакассинче пурĕ 266 хуçалăх шутланнă, ялта 1350 çын пурăннă. (Кашни хуçалăха вăтамран 5,1 çын тивет.-Ред.). Çак йышран фронта 200 çын ытла тухса кайнă. Архиври документсемпе паллашнă хыççăн, çакă паллă пулчĕ: хăш-пĕр çемьесенчен 3-4-шар арçын вăрçă вутне кĕнĕ. Паллă ентешĕмĕр Ç. Элкер çыравçă ахальтен мар «Вутпа çулăм витĕр» романĕнче хăйсен çемйинчен харăсах виççĕн тан вăрçа тухса кайни çинчен çырса кăтартать. Хăйне, 20 çулхи каччăна, 1915 çулăн пуçламăшĕнче Карпат тăвĕсен çывăхĕнчи çапăçусене кĕме тивнĕ. Хăш-пĕр кунсенче калама çук юнлă çапăçусем пулса иртнĕ. 1915 çулта вырăс çарĕ ытларах чухне каялла чакса пынă. Кашни кун 20-шер çухрăм чакни те пулнă. Салтакăн кунĕн-çĕрĕн окопсемпе траншейăсем чавма тивнĕ. Ĕçе вĕçлесен хӳтлĕхе пăрахса каялла утма тивнĕ.

Çапăçусенче иксĕлми хăюлăхпа хастарлăх кăтартнă пысăкупакассисем те нумайăн вăрçă хирĕнче выртса юлнă.

Акă 1914,1915,1916,1917,1918 çулсенчи ратниксен списокĕ. Сăмахран, Григорий Александров 146-мĕш полкра

хĕсметре тăнă, 1918 çулта чире пула салтак тивĕçĕнчен хăтарнă.

Семен Андреев çапăçăва 1915 çулта кĕнĕ, пĕр тан мар тытăçура йывăр аманнă. Каярахпа, йывăр аманнине чăтса ирттернĕскере, киле янă. Михаил Викторов та çапăçу хирĕнче сусăрланнă, 3-мĕш ушкăнри инвалид каярахпа патшалăх пулăшĕвĕпе усă курса пурăннă. Василий Кондратьев йывăр сурансене пула лазаретра вилсе кайнă... Çухатусем кĕттермен: вăрçăн малтанхи икĕ çулĕнче Упакасси ялне 40 салтак çемйи ячĕпе «хура» хут килнĕ. Тепĕр икĕ çултан тата 30 салтак вăрçă хирĕсенче выртса юлни çинчен хыпар çитнĕ.

Филипп Романов, Захар Яковлев, Федот Гураев, Ефим Тряков... пурĕ 70 салтак яла таврăнман.

Тыткăна лекнисемпе хыпарсăр çухалнисен шучĕ пысăк пулнă. Акă, Илья Трофимов 1914 çулхи чӳк уйăхĕн 10-мĕшĕнчи çапăçу хыççăн хыпарсăр çухалнă.Спиридон Ярчеев шăпи те çавнашкал. Вăл, 1905 çултах хĕсмете тăнăскер, вăрçа Çĕпĕрти стрелковăй полкпа кĕнĕ. 1915 çулхи çурла уйăхĕн 30-мĕшĕнчи тытăçура хыпарсăр çухалнă. Кузьма Яковлев, Çемен Элкер пекех, Австри тыткăнне лекнĕ. Кун пеккисем татах та пур. Хăй вăхăтĕнче Çемен Элкер, каларăмăр ĕнтĕ, «Вутпа çулăм витĕр», «Шурăмпуç килсен» романĕсенче вĕсем пирки аван çутатса панă.

Аваллăх хучĕсем çакна та çирĕплетсе параççĕ: пĕрремĕш тĕнче вăрçинчен тĕрĕс-тĕкел таврăннă ентешĕмĕрсенчен чылайăшĕ иккĕмĕш тĕнче вăрçине те хутшăннă. Акă, Павел Ермаков пĕрремĕш тĕнче вăрçинче сывă тăрса юлнă унтерофицер, иккĕмĕш тĕнче вăрçинче Воронеж хулишĕн пыракан çапăçура пуç хунă. Ефимпа Яков тата Семен Тряковсен шăпи те çапла синкер килсе тухнă.

Пĕрремĕш тĕнче вăрçи çинчен тĕпчесе пĕлмелли нумай. Çак ĕçе çамрăк ăрăва анлăрах явăçтарасчĕ.

# АЙĂПСĂР АЙĂПЛАННИСЕМ

Яла коллективизаци тапхăрĕ çĕмĕрттерсе çитсен, пурнăç, чăнах та, хуранти шыв пек вĕресе тăма пуçланă. Ĕнер кăна чипер пурăннă хресченех кулак тесе айăпланă, унăн пурлăхне туртса илнĕ, хăйне çемйи-мĕнĕпех Çĕпĕре тытса янă. Акă, ман умра - мăн Упакассинчи «кулаксен» списокĕ. Унта 16 хресчене кĕртнĕ. Паллах, вăл тулли мар список. Камсене чи малтан пырса çапнă-ха çав юхăм? Тĕрек таврашĕнчен 7 кил, Сябоськинсем иккĕн, Ефимпа Степан Синяковсем, Михаил Кудрявцевпа Исай Герасимов, Емельян Ярчеевпа Семен Домиков тата Осип Павлов (Чакка йăхĕнчен) ним шутламан туман çĕртен «кулак» пулса тăнă. Мана хама çакă та тĕлĕнтерет: Çемен Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэминче сăнарланă пуянсем вăхăт иртнĕçемĕн чухăнланса юлнă е ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман (вĕсем камсем пулнине ялта пĕлеççĕ), чухăн хресченсем вара кулака куçнине мĕнле ăнлантарса памалла-ха? Паллах, кунта вăл е ку хресчен мĕнлерех вăй-халпа ĕçленине мала хумалла пулĕ. Кун каça тар юхтарса ĕçлекен хăйне пурăнмалăх пурлăхне пухма та, çурт-йĕрне çавăрма та пултарнах ĕнтĕ. Малтан юлхав пулнисенчен хăшĕсем колхозсем тунă тапхăрта самаях ура çине тăма май тупнинчен те тĕлĕнместĕп эпĕ. Вĕсем, колхозсем тума тытăнсанах, пĕрлешӳллĕ хуçалăха çырăнса, ют пуянлăх хуçисем пулса тăнă.

Манăн куç умне Павăл Уçăпĕн сăнарĕ тухса тăрать. Унăн ашшĕ ялта ыттисенчен вуçех уйрăлса тăман çын пулнă. Ывăлĕ вара пĕр вĕçĕмех тĕрмешнĕ, мул-пуянлăх пухассишĕн тăрăшнă. Вăл хăй аллипе лаша тата шыв арманĕ туса лартнă. Кунĕн-çĕрĕн çăнăх, кĕрпе авăртнă вĕсем. Çапла майпа пуçтарнă пурлăха колхоз тунă вăхăтра туртса илнĕ, çемйине Çĕпĕре янă. Сильвестр Синякова та синкер шăпа кĕтсе тăнă иккен. Малтан вăл 12 çул хушши Чĕмпĕр кĕперниччи пĕр уесра тара кĕрĕшсе ĕçлесе тар юхтарнă. Икĕ хутчен çапла тĕрмешсе сахал мар укçа тума пултарнă вăл. Каччă çулне çитсен, Сильвестр пĕр пуянрах çыннăн хĕрне çураçма каять. Пуян хăйĕн шухăшĕнчен пĕр шит те чакмасть: «Хăçан та хă-

çан çĕрпӳртрен тухса, йĕркеллĕ çурт çавăрса лартан, çавăн чухне кăна эс манăн хĕре качча илĕн». Çак сăмахсене чĕри варринех йышăнать каччă. Юлашкинчен вăл пилĕк кĕтеслĕ çурт лартма вăй çитерет, икĕ арман хуçи пулса тăрать.

Унпа пĕртăван Ефим та малтан Шепекечре тарçăра ĕçленĕ. Вăл та укçа-тенкĕллĕ пулса тăрсан, пысăк хуçалăх çавăрса лартать. Çакăн пек тĕрмешни Сильвестршăн та Ефимшăн та ссылкăпа вĕçленнĕ.

Ефим хĕрĕ Ульки каласа панинчен çакă паллă: «1931 çулта аттепе аннене, пиччепе инкене, мана (эпĕ 13 çулта пулнă), 7 çулхи Татьяна, 10 çулхи Анфис йăмăксене пурне те хальхи Екатеринбург облаçне ссылкăна кăларса ячĕç. Ссылкăна яриччен кăшт маларах килти пурлăха: 2 лашапа 2 ĕне, 6 сурăхпа 2 сысна тата çурт-йĕртен: 6 кĕтеслĕ пурăнакан пӳртпе 2 кĕлете, 2 витепе мунчапа лаççа, вырăсла хапхана пирĕнтен туртса илчĕç, çие тăхăнма пĕр тумтир те хăвармарĕç, килтен выльăхсене кăларнă пек хуса кăларса ячĕç», - пысăк кӳренӳпе аса илетчĕ Ольга Ефимовна.

Ачисене çур çул иртнĕ хыççăн куккăшĕ пырса каялла илсе кайнă. Ашшĕпе амăшĕ ссылкăран таврăниччен куккă-



Е.Е. Синяковăн çемйипе тăванĕсем

шĕпе яла килнĕ ачасем килтен киле ыйткаласа ҫӳресе тăранмалла пулнă. Хăйсен килĕ вырăнĕнче нимĕн те хăварман, пушпушă вырăн ҫеҫ юлнă. Вĕсен пӳртĕнчен ялти 7 ҫул вĕренмелли шкул ҫуртне туса хунă. Кулак ачисем тесе вĕсене вĕренме те илмен, малтан 3 ҫул шкула ҫӳренипех ҫырлахмалла пулнă Улькин те. Чун-чĕрене вырнаҫайми тĕрĕсмарлăх хуҫаланнă ҫав ҫулсенче!

Нимсĕр тăрса юлнă ҫынсем яла таврăнсан, ял-йыш тата тăванĕсем пулăшнипе ура ҫине тăнă. Кăшт тăхтасан, колхоза ҫырăннă. Ефим 3 ҫул хушши кĕтӳ кĕтнĕ. Тепĕр хут хуҫалăх ҫавăрма ĕмĕтленнĕ вăл. Анчах та 1937 ҫулта такам элекленипе ялти 4 ҫынна - Ефим Синякова (Егорова), Осип Павловпа Николай Кудрявцева тата Кузьма Сотникова пĕр каҫ тытса кайнă. Ҫул ҫинче вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрнă. Ефим Егоров Архангельск облаҫне лекнĕ. Унпа пĕрле пулнă кӳршĕ ял - Ершепуҫ - ҫынни кайран каласа панă тăрăх, Ефима ҫавăнта вĕлернĕ, 40 ҫынна пĕр шăтăка чиксе хунă. Ҫакăн пек пӳкле вĕҫленнĕ Совет влаҫĕ умĕнче ним айăпа та кĕмен ҫыннăн пурнăҫĕ.

Нумаях пулмасть вĕсен таса ячĕсене таварни ҫинчен хаҫатсенчен пĕлтĕмĕр. Тĕрĕслĕх ҫиеле тухрĕ.

## ПИРĔН ЕНТЕШСЕМ АСЛĂ ВĂРÇĂРА

Манар мар

Вăрçа пур çын та ылханаççĕ:
«Ăçта пăхатăн - тытăçу».
Уроксенче манран ыйтаççĕ:
«Пулать-ши вĕçĕ çапăçун...»
«Ăна пин хут аса илсен те,
Тавăрас çук вилнисене», -
Ман асанне çапла калать те,
Шăлса илет куçĕсене.
Вăрçă çинчен кăна мĕн чухлĕ
Çырса тултарнă! Мĕн тума?
Тек çырмалли юлман та пулĕ -
Темскер хускатрĕ чунăма.
Анчах туятăп ăшăмра та
Пĕрре те лăпкă мар паян.
Вилнĕ салтак умра тăрать пек,
Ыйтать пек: «Эс мана ан ман!»
Тен, çавăнпа асрах тытатăп
Çухалнă паттăрсен ятне.
Вĕсен çул-йĕрĕпе утатăп,
«Çитетĕп» çапăçу хирне:
Ман куç умне тухса тăраççĕ
Юнпа пĕвеннĕ чечексем.
Ют çĕр ытамĕнче выртаççĕ
Упакассин яш каччисем.
Енчен хам тивĕçе мансассăн
Ӳпкелĕç манăн ентешсем.
Хĕр-упраçа савса курмасăр
Çапăçура пуç хунисем.
Ик теçетке çул пуçтаратăп
Сире эп, ятсăр паттăрсем.
Сире юнашарах куратăп:
Тасан çиçеççĕ сăнăрсем.

1941 çул. Июнĕн 22-мĕш кунĕ. Тĕрĕсрех каласан, тул çути тин кăна карăнма пуçланă вăхăт. Çывăхри вăрманта каçса кайсах кайăксем юрă кĕвĕлеççĕ. Мĕнпур тавралăх çемçе ыйхăран вăранма хатĕрленет. Ку шăплăха çил те сас туса пăсма именсе тăрать тейĕн. 335 килтен тăракан Пысăк Упакасси ялĕ те пĕчĕк ача пек ăшă ыйхăра. Ваттисем ĕнер, шăматкун мунчинче çан-çурăмне хурăн милĕкĕпе лайăх каниччен вĕтеленĕ хыççăн, халĕ вырăн çинче ырă канăç тупнă. Яш-кĕрĕм вара анчахрах лăпсăркка хурама айĕнчен кайма ĕлкĕрнĕ. Тен, вĕсенчен чылайăшĕ ыран вырсарникун, Вăрнарта пуçланакан ярмăрккана кайĕ. Эх, çамрăклăх, çамрăклăх! Çи-пуç питĕ яках пулмасассăн та, çăкăр-тăвартан çителĕклех пурăнмасассăн та савăнăçлă вайă-кулăра, илĕртӳллĕ юрă-ташăра, кун каçипе ĕçре тарласа ĕшеннине пăхмасăр, Алтăр-çăлтăр ӳпĕнсе, сывлăмне çĕр çине тăкиччене пĕрле савăнасшăн вăл. Халлĕхе вĕсенчен пĕри те Тăван çĕршывра вăрçă пуçланни çинчен, вăл мирлĕ халăхăн пурнăçне арăш-пирĕш пăтраштарма тытăнни çинчен пĕлмест-ха. Пĕлме пултарайман çав манăн ентешĕмсем çак ырă та лăпкă самант кĕçех улшăнса каясса, хĕвеланăç енчен урнă фашистсем пирĕн çине вут-çулăмпа килсе кĕрессе. Пĕлес пулсан та, мĕнех тума пултарĕччĕç-ши вĕсем?

Манăн 20 çул та тултарма ĕлкĕреймен, ку таранччен хĕре те чуп туса курман яшсене хĕрхенес килет паян. Юрату çулăмĕпе кăварланас вырăнне вĕсен çамрăклăхне вăрçă вучĕ çунтарса кĕл турĕ, çӳçĕсене вăхăтсăр шуратрĕ, чылайăшне ют çĕрте ĕмĕрлĕхех вырттарса хăварчĕ. Вăрçăн ылханлă çулĕсем çамрăклăх чечекне пĕр хĕрхенӳсĕр таптаса ватса нимĕрчĕç.

Вăрçă пуçланнă-пуçланманах, пирĕн тăрăхран çапăçу хирне 340 арçын тухса кайнă. Вĕсем, алла пăшал тытса, тĕрлĕ фронтсенче урса кайнă тăшманпа çапăçнă. Анчах та тан мар пулнă вăйсем. Фашист малтанхи вăхăтра пирĕн салтаксене пуç çĕклеме паман. Шăпах вăрçăн малтанхи çулĕсенче тăкăннă та пирĕн ялтан кайнă çынсем.

Аслă Çĕнтерӳ 60 çул çитнине паллă тунă çулталăкра манăн вĕсен вилĕмсĕр ячĕсене халăх умне кăларас килет. Çамрăк ăрăвăн пĕлмеллех вĕсене.



Вăл Брест крепоçне хӳтĕленĕ (1941 ç.)

Эпĕ тупса палăртнă документсене тĕпе хурсан, çакă курăнать: вăрçă пуçланнă малтанхи çулах пирĕн ялтан фронта кайнă 27 çын пуçне хунă. Ытларахăшĕ халĕ те хыпарсăр çухалнисен йышĕнче.

Кам пĕлмест пулĕ Брест крепоçĕ çинчен!? Чи малтан çак гарнизонра тăракансем фашистсемпе куçа-куçăн тăнă. Пĕчĕк йышлă ушкăна ура çине лартса чĕркуçлентерме вăй-хал çитереймен тăшман. Юлашки пуля пĕтиччен, юлашки юн тумламĕ юхса тухиччен çапăçнă пирĕн паттăр салтаксем. Вĕсем хушшинче 22 çулхи Антон Михайлович Евграфов та пулнă. Акă, пирĕн умра унăн юлашки сăнӳкерчĕкĕ, вăрçă пуçланиччен эрне маларах кăна тутарнăскер. Вăл ăна хăйĕн çывăх тусне Захар Кузьмич Ластухина ярса панă. Лешĕ çырăва илнĕ тĕле хĕвеланăçĕнче вăрçă çулăмĕ хăрушшăн кĕрлеме тытăннă. Антон Евграфова, йывăр аманнăскерне, Гитлер çынçиенĕсем тыткăна илсе кайнă. Унăн çамрăк кун-çулĕ концлагерьте татăлни паллă.

Пирĕн ентешсенчен теприне, Василий Данилович Данилова шăпа пурĕ те 19 çул çеç пурăнма пӳрнĕ. Тула облаçĕнчи Кротово ялĕшĕн пынă хаяр çапăçусенчен пĕринче хăюллă стрелокăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă. Мĕн çинчен шутланăши салтак юлашки самантра? Тен, тăван ялне, çывăх тус-юлташĕсене, ашшĕ-амăшне аса илнĕ пулĕ.

25 çулхи Николай Александрович Евграфова ял-йышра астăваççĕ. Вăрçăччен вăл «Социализм» артелĕн лавккинче приказчикре ĕçленĕ. Вăрçăччен авланса янă, çамрăк арăмĕпе телейлĕ пурнăç тума ĕмĕтленнĕ. Ылханлă та сĕмсĕр вăрçă мĕнпур ĕмĕт-тĕллеве путлантарса лартнă. Коля, чечек пек черченкĕ мăшăрĕпе сывпуллашса, фронта тухса кайнă.

Ленинград облаҫӗнчи Тихвин хулинчен инҫех мар вырнаҫнӑ Липкая Горка ялӗшӗн пынӑ ҫапӑҫура унӑн ҫамрӑклӑхне фашист пульли татнӑ.

1942 ҫул ҫитсе тӑнӑ. Хаяр тӑшман пирӗн ҫӗр ҫине шалтан та шалалла кӗрсе пынӑ, ҫӗршер те пиншер ялсемпе хуласем кӗл пулнӑ, айӑпсӑр ҫынсене фашистсем е тискеррӗн вӗлерсе пӗтернӗ, е концлагерьсене ӑсатнӑ. Тӑван ҫӗршывӑн пур кӗтесӗ пекех, Пысӑк Упакасси ялӗ те тӑтӑшах фронтран килекен «хура хутсене» илнӗ. Манӑн ентешсенчен чылайӑшӗ вӑрҫӑ вут-ҫулӑмӗнчен тухайман, пирӗн ҫутӑ пуласлӑхшӑн тан мар кӗрешӳсенче тытӑҫса, пуҫ хунӑ. Акӑ, 3 ялтан вӑрҫа тухса кайнисенчен 88-шӗ 1942 ҫулта фронтра вилсе выртнӑ. Калама ҫук пысӑк ҫухату. Анчах та айӑпсӑр ҫӗр-аннемӗр тӳсекен йывӑр хуйха нимӗнпе те танлаштарма ҫук. Чӗрӗ юлнисем, маттур та вӑйпитти, хӗрӳ чун-чӗреллӗ ҫамрӑксем аҫтаха пуҫне касса ваклама карах ҫӗкленнӗ.

Емельян Филиппович Ванифатьев вӑрҫа кайиччен Турикасра, халӗ София Элкер хуҫалӑхӗн вырӑнӗнче пурӑннӑ. Ҫемьеллӗскер. Вӑл Вӑрнар-Сергач чугун ҫулӗ ҫинчи милиционер пулнӑ. Паттӑр стрелок, автоматчик 28 ҫултах пуҫне хунӑ. Павел Викторов вара, 21 ҫула тин пуснӑскер, 33-мӗш гварди полкӗнчи ӑста стрелоксенчен пӗри шутланнӑ. «Тӑван яла таврӑнсассӑнах, хам чун-чӗререн юратакан хӗре качча илсе, ҫемье ҫавӑрӑп»,- ыррӑн ӗмӗтленнӗ каччӑ. Анчах та чун тӗпӗнчи ӗмӗт ҫепӗҫ ҫеҫкине ҫурайман. Смоленск ҫывӑхӗнчи Михайловка текен ял патӗнче пынӑ пӗр ҫапӑҫура ҫамрӑкӑн куҫӗсем ӗмӗрлӗхех хупӑннӑ.

Паттӑр ентешсенчен тепри вӑл - 1906 ҫулта ҫуралнӑ Степан Семенович Исаков. 220-мӗш дивизи стрелокӗ.Калинин облаҫӗнчи Белохово ялӗшӗн ҫапӑҫса, тан мар кӗрешӳре пуҫ хунӑ 36 ҫулхи Исаков.

Турикасри Павел Кузьмич Сотников, ҫамрӑклах суту-илӳ ӗҫне ӑнтарнӑскер, вӑрҫӑ умӗн Йӗпреҫри лавккасенчен пӗринче приказчик пулнӑ. Пӑртак аваллӑха кӗрсе, истори чаршавне уҫса пӑхас пулсан, вӗсен йӑхӗ пирки ҫакна каламалла: Павел Кузьмичӑн аслашшӗ иккӗмӗш Александр патшара ларнӑ ҫулсенче хӗсметре (службӑра) тӑнӑ. 25 ҫул хушши салтак

тивĕçне чыслăн пурнăçланă хыççăн, Якку 1860 çулта Кавказ тăрăхĕнчен тăван яла таврăннă. Унăн аллинче кĕтессисене тăпăл-тăпăл тыттарнă йывăç арча пулнă. Киле çитсен, çав арчари хăш-пĕр япалисене Якку, кайран усă курма тесе, урăх çĕре кăларса хунă, килтисене, шалта мĕн юлнине тĕкĕнме хушман. 40 çул хушши упраннă тĕлĕнтермĕш çав арча ку килте. Мĕн пулнă-ха ун ăшĕнче? Çак ыйту вулакана та кăсăклантаратех ĕнтĕ. Кайран, уçсан, арча тĕпĕнче салтак мундирĕпе шăлаварĕсем, атăпа чĕн пиçиххисем тата 3 кĕнеке тупăннă. Вĕсене Якку, асăнмалăх тесе, хăйĕн ачисемпе мăнукĕсене парнелесе хăварасшăн пулнă. Çемен Элкере çак кĕнекесем пурнăçра литература тĕнчине кĕртеççĕ. Якку ывăлĕ, Павăл ашшĕ - Куçма ялта хутла лайăх пĕлекен çынсенчен пĕри пулни паллă. Унăн килĕнче пысăках мар библиотека та пулнă. Ялти хресченсем, кирек мĕн çыртармалла пулсан, Кузьма Яковлевич патне çул тытнă. Шел, ăслă-тăнлă хресченĕн пурнăçĕ кĕтментуман çĕртен, ăнсăртран татăлнă. 1937 çулта Пысăк Упакассинчи 4 çын «халăх тăшманĕсен» йышне лекнĕ. Вĕсенчен пĕри Кузьма Яковлевич Сотников. Унăн ывăлĕ, Павăл, Смоленск тăрăхне хӳтĕлесе, çапăçу хирĕнче яланлăхах выртса юлнă.

Павел Степанович Степановăн пурнăç çулĕ питех те кăсăклă. Хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ вăл, ачаллах пĕлӳ енне туртăм пурри палăрнă унра. Тăван ялпа юнашарах вырнаçнă Кушлавăш шкулне пĕтернĕ хыççăн, Павăл Шăхасанти 2 класлă шкула кайса кĕрет. Унта вырнаçма ăна йыснăшĕ Александр Ломоносов священник пулăшнă. Сăмах май каласан, Ломоносов Пысăк Упакассинчи шкула никĕсленĕ.

Павел Степанова кĕçех патша çарне илеççĕ. Пĕрремĕш тĕнче вăрçи тĕлне вăл унтер-офицер пулса тăрать. Çак тапхăра сăнласа паракан ӳкерчĕк сыхланса юлнă унăн. Павел Степанов, офицер мундирне тăхăннăскер, салтаксем хушшинче ларать. Халĕ çав сăнӳкерчĕк ялти шкул музейĕнче упранать. 1917 çулхи кĕркунне чăваш салтакĕ Петрограда лекет. Вăл, юнкер тумне тăхăннăскер, Хĕллехи Кермене большевиксенчен хӳтĕленĕ çĕре хутшăнать. Революци çĕнтерӳпе вĕçленсен, Степановăн совет влаçĕ хăйне йĕрленипе тарса пытанса пурăнмалла килсе тухать.

Каярахпа, вăл хутла лайăх пĕлекен çын пулнине шута илсе тата хăйĕн малтанхи йăнăшĕсене туйса илнине уçăмлăн пĕлтернĕ хыççăн, ăна дезиртир йышĕнчен кăларнă. Павел Степанов вулăсра писарьте, унтан ялта колхоз председателĕнче ĕçленĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансанах, 46 çулхи арçын алла пăшал тытать. Тепĕр икĕ çултан Пысăк Упакассине вăл хыпарсăр çухалнине пĕлтерекен «хура хут» килет. Вăрçă чарăнни 40 çул çитсен, ялти вăтам шкула Воронеж облаçĕнчи «Шырав» ушкăнĕнчи йĕрлевçĕсенчен çыру килнĕ. Вăл хыпарланă тăрăх, Павел Степанович Степанов асăннă облаçри Семеновские Выселки ятлă яла тăшманран ирĕке кăларнă чухне паттăрсен вилĕмĕпе пуç хунă-мĕн. Чăннипех те чыслă та пархатарлă, ыттисем ăмсанмалли пурнăç, шăпа!

Николай Михайлович Тряков вăрçăчченех çар академийĕнчен вĕренсе тухнăскер, отпусксем вăхăтĕнче яла килсен, хăйĕн тавркурăмлăхĕпе тата тарăн пĕлĕвĕпе ял-йыша тĕлĕнтерни çинчен халĕ те ăшшăн аса илеççĕ. Унăн хулпуççийĕсене генерал пакунĕсем илем кӳнĕ.

Михаил Спиридонович Спиридоновăн пурнăçĕ те 20 çултах татăлнă. Унăн вилтăприйĕ Калинин облаçĕнчи Невольски районĕнчи Песок ятлă ял масарĕнче упранать.



В.Д. Дмитриев вăрçăра вилнĕ

Федор Федорович Анисимов та, Николай Петрович Тряков пекех, Вăрнарти зооветтехникумран вĕренсе тухнă. Ун хыççăн Шупашкарти ял хуçалăх институтне вĕренме кĕнĕ. Диплом илме ĕлкĕреймен, тăшман мирлĕ çĕр çине тапăнса кĕрсенех, вăй питти çамрăк çĕршыва сыхлакансен ретне тăрать, тӳрех танк бригадине лекет, радист ĕçне хăнăхать. Аслă сержант тан мар тытăçусенчен пĕринче вутлă ункăна татса тухайман, вилĕме паттăр туйăмĕпе кĕтсе илнĕ.

Илья Ильич Кузьмичев минометчик вăрçă çулěсенче сахал мар фрица леш тěнчене ăсатнă. Вăл çапăçнă медицина-санитари батальонě Польша çěрне тăшманран ирěке кăларнă. 1945 çулта, вăрçă вěçленес умěн, 34 çулхи Илья Кузьмичев йывăр сурансене тӳсеймесěр, Польшăри Катовицы воеводствине кěрекен Доброво-Гурнич хулинче çут тěнчепе сывпуллашнă.

Николай Павлович Краснова вăрçăра пулемет шанса панă пулнă. Унăн арăмě Анна Сергеевна савнă упăшки çěнтерӳпе таврăнасса тӳсěмсěррěн кěтнě. Анчах та тăван яла çавrăнса çитме шăпа пӳрмен ăна, Николай Краснова Мускав çывăхěнчи хěрӳ те тан мар çапăçура йывăр амантнă. Вăл çар госпиталěнче 1942 çулта вилсе кайнă. Ăна Мускав облаçěнчи Можайск хулинчи пěр масарта пытарнă.

Михаил Семенович Краснов та 22-рех паттăрсен вилěмěпе пуç хунă. Çивěч куçлă наводчик Хěвелтухăç Пруссии çěрě таран çитнě. Вăрçă çěнтерӳпе вěçленес вăхăт çитиччен кăшт маларах пирěн ентеш Эльбинг провинцийěнчи кирпěч завочě çумěнче пынă çапăçура вилěме хăюллăн кěтсе илнě.

Украина çěрě çинчех пирěн тепěр ентеш Алексей Иванович Марчиков пуç хунă. Пулеметчик ун чухне пурě те 20 çулта кăна пулнă. Днепропетровскран аякрах мар вырнаçнă Перноватка станци чăваш ачин ěмěрлěхех тупнă кěтесě пулса тăнă.

28 çулхи Георгий Леонтьевич Никифоров çар министерствин Пушкин ячěллě полкěнче арăслан пек маттур çапăçнă. Эстони çěрě çинче ăна фашист пульли хăваласа çитнě.

Семен Миронович Миронов, 23 çулхи сержант-радист 1943 çулхи январěн 16-мěшěнче юлашки хут çапăçава кěнě. Çамрăк радист çулăм хыпнă машина ăшěнчен тухайман, унтах çунса кайнă.

Нумай-нумай çапăçусене хутшăнса,1945 çулхи майăн 7-мěшěччěнех сывă юлма пултарнă Иуда Максимович Лаврентьев. Аслă çěнтерěве кěтсе илсе пысăк телее ыттисемпе пěрле пайлама шăпа пӳрмен ăна. Вăрçă вěçленесси икě кун юлсан, чăваш салтакне тăшман йăвинче Берлинта хăрушă вилěм сыхласа тăнă.

Хăш-пěр çемьесене вăрçă çил-тăвăлě уйрăмах тустарса,

хуçса-çапса хăварнă. Акă, Марчиковсен йăхĕнчи 3 çемьерен 7 çын тĕрлĕ фронтсенче çапăçса пуç хунă. Анисим Анисимовăн икĕ ывăлĕ те вăрçăран таврăнайман, виççĕмĕшĕ, йывăр сурансене тӳсеймесĕр, фронтран килнĕ хыççăн вилсе выртнă. Ефим Михайлович хăйĕн 3 ывăлне те вăрçăран каялла кĕтсе илеймен.Ярчеев Илья Ивановичăн 4 ывăлĕ хăйсен пурнăçĕсене Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн хунă.

Шуркассинчи Прохор Сорокин вара хăйĕн 5 ывăлне кĕтсе илеймен. Павăл, 29 çулта, ефрейтор пулнă. Стрелок. Хыпарсăр çухалнă. Якур,аслă лейтенант, 1945 çулта Германи çĕрĕ çинче пуç хунă.Вăл тăшманпа сывлăшран кĕрешнĕ, летчик кирек мĕнле çанталăкра та командовани приказне пурнăçлама тӳпене çĕкленнĕ. Степан Мускав çывăхĕнчи çапăçуран тухайман. Прохорăн 3-мĕш ывăлĕ, Микула 1942 çулта хыпарсăр çухалнă. Аслă ывăлĕ, Симун (1903 çулта çуралнă) ăçта, мĕнле вилни те пирĕншĕн паллă мар. Роман Романович Кириллов кил-йышĕнчен 5 вăйпитти арçын тăшманпа çапăçма тухса кайнă, тăваттăшĕ те тĕрлĕ фронтсенче çапăçса, паттăрсен вилĕмĕпе куç хупнă. 5-мĕш ывăлĕ вăрçăран таврăнсан, килте çĕре кĕнĕ. Вĕсенчен пĕри, Микула, разведротăн командирĕ пулнă. Аслă лейтенант Николай Романович 4 орден кавалерĕ. Отечественнăй вăрçăн 2 орденĕпе Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсĕр пуçне Александр Невскийĕн чаплă орденне тивĕçнĕ Шуркасси каччи.

## ВИÇĔ ОРДЕН КАВАЛЕРĔ

Пысăк Упакассинчи Тури урам вĕçнелле ялти ăста пахчаçă-фронтовик Захар Кузьмич Ластухин пурăнатчĕ. Вăл чухăн хресчен çемйинче 1920 çулта çуралнă. Çичĕ класлă шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, вăл Улатăра тухса каять, чукун çул техникумне вĕренме кĕрет. Техникума ăнăçлă пĕтерет, ĕç мастерĕ ятне илет. Анчах хăй профессийĕпе ĕçлеме ĕлкĕреймест, ăна çара илеççĕ. Малтан Рязань, унтан Подольск хулисенче салтак тивĕçне пурнăçлать. 1941 çулта Подольскри артиллери училищине пĕтернĕ хыççăнЛатвинче пĕр çар чаçĕнче батальон командирĕ пулса службăра тăнă.

Анчах...Вăрçă пуçланать. Нимĕç фашисчĕсем 21 çулхи çамрăк каччăн пурнăçне, унăн ĕмĕт-тĕллевĕсене тĕпренрех улăштараççĕ. Вăл кĕçех Карели фронтне лекет, тăшмана хирĕç çапăçăва кĕрет. Хастар çамрăка резерври 173-мĕш полкăн дивизион штабне илнĕ. Çулталăкран Захар Ластухин Шурă тинĕс каналне сыхланă çĕре лекнĕ. Хăй тивĕçне чыслăн пурнăçланă вăл. Шăп çавăн чухне çывăхра çурăлнă снаряд ванчăкĕ ăна хулпуççинчен амантнă. Юрать-ха, суранĕ тарăнах пулман, вăл каллех çапăçăва кĕнĕ. 1943 çулхи çу кунĕсенчен пĕринче вăл иккĕмĕш хут йывăр суранланать. Контузи илнĕ салтакăн чылай вăхăт сипленме тивнĕ. Çак çулах Карели фронтне 4-мĕш Украина фрончĕ туса хунă. Захар Кузьмич Ластухин хăй полкĕнче разведка офицерĕ пулса тăнă. Фронтовик Одер шывĕ урлă каçса, Чехословаки çĕрĕ çине мĕнле кĕнине паянхи кун пек астăвать. Çак çĕр çинчех вăл Аслă Çĕнтерĕве кĕтсе илнĕ. Гитлер çарне çапса аркатнă хыççăн, Захар Кузьмич Львов хули урлă тăван вырăнсенелле çул тытнă. Анчах çар приказĕпе килĕшӳллĕн вĕсен чаçне Инçет Хĕвелтухăçнелле Япони самурайĕсене хирĕç çапăçма янă. «Самурайсемпе çапăçма тӳр килмерĕ, эпир унта çитнĕ çĕре вăрçă чарăннăччĕ ĕнтĕ», - аса илетчĕ ватă салтак.

Иккĕмĕш тĕнче вăрçи пĕтнĕ пулсан та, Захар Ластухин салтак шинельне часах хывайман-ха. 1947 çулччен вăл артиллери чаçĕнче службăра тăнă. З.К.Ластухин капитана çамрăк салтаксене шанса панă. Кăнтăр Сахалинта тата Курил утравĕсем çинче вăл вĕрентӳ ирттернĕ.

Паттăрлăхпа хăюлăхшăн ветеран 3 ордена тивĕçнĕ. Аслă Отечественнăй вăрçăн пĕрремĕшпе иккĕмĕш степеньлĕ орденĕсем, «Хĕрлĕ çăлтăр» орденĕ тата нумай-нумай медальсем фронтовик кăкăрне çутатса тăнă.

# ЭРХИП ПИЧЧЕН АСА ИЛМЕЛЛИ НУМАЙ

Çын пурнăçĕ пĕр тикĕс килмест. Архип Илларионович Илларионов пурнăçĕнче хура тĕтреллĕ çулсем сахал мар пулнă. Типтерлĕ, çирĕп хуçалăхпа пурăннă ашшĕне «кулак» тесе айăпланă. Çуралса ӳснĕ кил-çуртран 1931 çулта хуса кăларса ярсан, Çĕпĕре ссылкăна янă. Çур çул таран Надежинск хули çывăхĕнче вĕсене тĕрлĕрен ĕçсене явăçтарнă. Хăйĕнпе ссылкăра пĕрле пулнă аппăшне вăл яланах аса илет. Эрхип пичче ссылкăран 5-6 уйăхран тарса килме пултарнă. Аппăшĕн, Маринăн, тепĕр çул хушши тайгара вăрман каснă çĕрте нушаланма тивнĕ. Йывăр пулнă çамрăк хĕре арçын ĕçне туртма. Юлашкинчен вăл та чăтайман. çĕрле вагонсем айĕпе хырăмпа шуса чукун çул витĕр тухнă, пысăк нуша курса яла çитнĕ.



А.И. Илларионов

Тăван киле сургучпах питĕрсе илнĕ, кĕме юрамалла мар йышăннă. Çемьен 7 çула яхăн çынсем патĕнче мунчара пурăнма тивнĕ. Аппăшĕ хăйĕн юратнă каччипе, Унтрипе, пĕрлешсе çемье çавăрнă. Эрхип пичче çул çитсен çара кайнă, салтак службине çурçĕрте ирттернĕ. Киле таврăнма ĕмĕтленме пуçланăччĕ, анчах... Вăрçă пуçланни салтак шинельне тепĕр 5 çул та хывма ирĕк паман. Вĕсен чаçĕ Мурманск патĕнчи çапăçусене хутшăннă. Кĕçĕн лейтенанта вăрçăра 3 хутчен амантнă. Вăл 2 хутчен Мурманскра Нева-2 госпитальте сипленнĕ. Унтан каллех Карели фрончĕ, тепĕр хут амантсан Эрхип пиччене Кандалакшăри госпитале выртнă.

1944 çул. Карели фрончĕ. Архип Илларионов старшина автоматчиксен ротипе час-часах разведкăна çӳренĕ. Пĕррехинче, çурла уйăхĕнче, ăна полк штабне чĕнтерсе, офицер-

сен шкулне вӗренме ярасси ҫинчен пӗлтернӗ. Вӑл нумай шутламасӑрах килӗшнӗ. Беломорск хулинче ҫур ҫул ытла вӗренсен, вӗсене Мускав ҫывӑхӗнчи Ростов хулине пухнӑ. Ҫак хулара Эрхип пичче Ҫӗнтерӳ кунне кӗтсе илнӗ.

Анчах киле таврӑнасси пирки шутлама иртерех пулнӑ иккен. Ростовра Эрхип пичче пек салтаксене Инҫет Хӗвелтухӑҫнелле яма хатӗрленӗ. Тепӗр икӗ эрнерен вӗсене поезд ҫине лартса Вятка-Пермь ҫулӗпе ӑсатнӑ. Палӑртнӑ вырӑна салтаксем 24 талӑк хушши кайнӑ. Ханко кӳлли хӗрринче, Монголи чиккинче, Спасск-Дальний ҫар хулинче чарӑннӑ вӗсем. Ҫӗртме уйӑхӗнче Эрхип пиччене Иман хули ҫывӑхӗнчи 715-мӗш стрелковӑй полка практикӑна янӑ (халӗ ку хула Дальнореченск ятлӑ). Вӗсене ҫитес вӑхӑтрах Япони ҫарне хирӗҫ ҫапӑҫма хатӗрленӗ.

Ҫурла уйӑхӗн 9-мӗшӗнче СССР правительстви Япони ҫарне хирӗҫ наступленине кӗнӗ. Эрхип пичче Китай ҫӗрӗ ҫинче вырнаҫнӑ Муданьцзянь тата Нинань хулисене ирӗке кӑларассишӗн пыракан ҫапӑҫӑва хутшӑннӑ. Пӗр эрне хушшинче Япони ҫарне аркатса нумай халӑха пусмӑртан хӑтарнӑ. Мускавра ку ҫӗнтерӳ ячӗпе пысӑк уяв ирттернӗ. Арип Илларионов кӗҫӗн лейтенанта «Паттӑрлӑхшӑн» медальпе наградӑланӑ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн чикӗ хӗрринче хӑварнӑ салтаксене ҫар хуҫалӑхӗн тӗрлӗ ӗҫӗсене явӑҫтарнӑ. 157-мӗш дивизие 371-мӗш туса хунӑ, каярахпа вара вӑл 144-мӗш стрелковӑй дивизи пулса тӑнӑ. 1947 ҫулхи ҫу уйӑхӗнче Архип Илларионов ҫак дивизирен кӗҫӗн лейтенант пулса «Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр», «Отечественнӑй вӑрҫӑн 1 степеньлӗ» орденӗсемпе, «Паттӑрлӑхшӑн» тата ытти медальсемпе Чӑваш ҫӗршывне таврӑннӑ.

Салтак чӗри мӗнле хаваслӑн тапни ҫинчен ҫырма кирлӗши? Ӑна кӗтме кӳршӗ ҫынни Вӑрнар станцине чаплӑ ӑйӑрпа пынӑ.

Ялта ӑна хӑй пекех вӑрҫӑ ҫулӗсемпе утса тухнӑ юлташӗсем, кӳршисемпе пӗлӗш-тӑванӗсем чун-чӗререн кӗтнӗ. Курни-илтнисем ҫинчен пӗр-пӗрне каласа памаллисем питӗ нумай пулнӑ вӗсен. Вӑрҫӑ хирӗсенче выртса юлнӑ юлташӗсен пурнӑҫӗ ҫамрӑклах татӑлни фронтовиксен чунӗсене ыраттарнӑ. Эрхипӗн пиччӗшӗ те, 34 ҫулхи Кӗҫтенкки, вӑрҫӑра вилнӗ.

Вĕсен ятне тăван ялта, тăван колхозра вăй хурса тӳрре кăларма сăмах панă ĕнерхи салтаксем.

Фронтран таврăннă Архип Илларионов ĕçе кӳлĕннĕ: колхоз правленийĕ хушнипе хĕлĕпе вăрман турттарнă. Тепĕр çул ăна Пысăк Упакасси халăхĕ колхоз пуçлăхне суйланă. 31 çула пуснă фронтовик пурăна киле çемье çавăрнă.

1950-мĕш çулта А.Илларионов вăрман хĕрринче вырнаçнă «Социализм» артель пуçлăхĕ пулса тăнă. Шăмă сыпписем питĕ ыратнине пула Эрхип пичче икĕ çул хушши ĕçлеймен, унăн вăхăта вырăн çинче ирттерме тивнĕ. Ура çине тăрсанах ăна бригадир, каярахпа кладовщик ĕçĕсене шанса панă. 1961 çулта Канашри механизаци шкулĕнче укçа тӳлесе шофера вĕреннĕ. Тепĕр çул тырă типĕтмелли машинăпа ĕçленĕ, каярахпа трактор паркĕнче бригадирта, шоферта, стройбригадăра, автомеханикра вăй хунă. Тивĕçлĕ канура та вăл ĕçсĕр ларман. 14 çул хушши инвентаризаци комиссийĕн председателĕ тата эрозие хирĕç кĕрешекен ушкăнăн звеньевойĕ пулса тăрăшнă. Ахальтен мар пулĕ унăн ытти наградăсем хушшинче Мухтав грамотисемпе дипломсем нумай.

## АЛЕКСАНДР НЕВСКИЙ ОРДЕНĔН КАВАЛЕРĔ

Аслă Çĕнтерӳ юбилейне кĕтсе илтĕмĕр. Çавна май, тепĕр паллă ентешĕмĕр, тепĕр паттăр фронтовик çинчен аса илмесĕр хăварма юрамастех пирĕн. Ку вăл Федор Васильевич Елдырев. Пысăк Упакассинче, хресчен çемйинче, пĕрремĕш тĕнче вăрçи умĕн çуралнăскер, пурнăçра хурапа шурра нумай курса ӳснĕ. Çамрăклах вăрман ĕçне кӳлĕннĕ. Малтан «Социализм» артель, унтан колхоз ертӳçисен тилхеписене тытса курнă. Пурнăçри тĕрлĕрен сăлтавсене пула Совет Çарне ăна кăштах тăхтарахпа,1935 çулта илнĕ. Çар службинче тăнă чухнех вăл хăюлăхпа пултарулăх кăтартнăшăн Хисеп грамотисене тивĕçнĕ пулнă.

Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансан Федор Васильевич Елдырева тӳрех артиллери çарне янă, малтан взвод командирне, каярахпа батарея командирĕн пулăшаканĕ пулма

уйăрса лартнă. Каярахпа çар капитанĕ звание илнĕ Елдырев Хĕвеланăç фронтра çĕршывăн тĕп хулине - Мускава - хӳтĕленĕ çĕрте фашистсемпе çапăçнă. Унта паттăрлăх кăтартнăшăн 1942 çулта ăна «За отвагу» медальпе наградăланă. 1943 çулта Белоруссири Могилев хули çывăхĕнче Днепр шывĕ урлă , унтан Гродно хули çывăхĕнче Неман юханшывĕ урлă каçнă. Юнлă çапăçусенчен пĕринче вăл йывăр аманнă. Чылай вăхăт хушши госпитальте сипленнĕ.



А.Невский орденĕн кавалерĕ - Ф.В. Елдыров

1944 çулта хаяр çапăçусем çĕршывăн Хĕвеланăç çĕрĕсем çинче пулса иртеççĕ. Федор Васильевич хăй чаçĕпе Польша çĕрне ирĕке кăларнă çĕре хутшăнать. Ломжа хулине нимĕç фашисчĕсем çирĕп тытса тăнă пулнă. Ку хула, Нарев шывĕ çинче вырнаçнăскер, пысăках мар, анчах унта 16-17 ĕмĕрсенче католиксем лартнă тĕлĕнмелле илемлĕ чиркӳ (костел) пулнă. Польшăн çурçĕр хĕветухăç пайĕнче хĕрӳ те хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Ломжа хулине нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларнă чухне пысăк паттăрлăх кăтартса ыттисене хăйĕн тĕслĕхĕпе хавхалантарса пынăшăн Федор Васильевич Елдырев капитана Александр Невский орденĕпе наградăланă. Ку наградăна пирĕн районта 3 çын кăна тивĕçнĕ, Шуркассинчен Николай Романович Кириллов.

Анчах хăрушă вăрçă пĕтмен-ха. 1945 çулта Федор Васильевич Пруссин хĕвелтухăç пайне фашистсенчен тасатнă çĕре хутшăннă. Кенигсберг хулине ирĕке кăларнă чухне каллех хăюллăхпа тавçăрулăх кăтартнăшăн Ф.В.Елдырева Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă. Çакăнтах вăл Çĕнтерӳ кунне кĕтсе илнĕ. 32 çулхи салтак-фронтовик çемйине таврăнма ăн-

тăлнă. Анчах вăрçă пĕтсен те унăн тепĕр çул хушши Украинăра службăра тăма тивнĕ. 1946 çулхи ака уйăхĕнче Сумы хулинче уншăн вăрçă çулĕ вĕçленнĕ.

Федор Васильевич Елдырев ĕмĕр тăршшĕпех ялта пурăннă, колхозра ĕçленĕ. Хăйĕн мăшăрĕпе, Татьяна Семеновнăпа 5 ача çуратса, пурне те пĕлӳ парса пурнăç çулĕ çине тăратнă.

Федор Васильевич кун-çулĕ 1983 çулта татăлнă. Унтанпа чылай çулсем иртрĕç пулин те, паттăр фронтовикăн ячĕ ял-йыш асĕнче упранать.

## ВАСИЛИЙ НИКОЛАЕВИЧ ЕНИКОВ

Упакасси тăрăхĕнчен вăрçă вăхăтĕнче çĕршывăн пысăк наградине, Ленин орденне тивĕçнĕ ентеш - Еников Василий Николаевич.

1939 çул вĕçĕнче 20 çулхи каччăн çара кайма явап çитнĕ. Орел облаçĕнчи служба Брест крепоçне куçнă. Çулталăк çурă ытларах салтак пурнăçне ас тивсе пăхнă хыççăн, ăна Жабинка станцине (Брестран 25 çухрăм айăккинерех) илсе кайнă. Василий Николаевичăн вăрçăн пĕрремĕш куннех унăн хăрушă сăнне курма тивнĕ. Пин-пин тăшман самолечĕ чикĕ хĕрринчи ялсемпе хуласене аркатнă. Хăйĕн чаçĕпе пĕрле Еникован та Белорусси, Украина çĕрĕ тăрăх каялла чакма тивнĕ. 1941 çул вĕçĕнче фронтовика пĕрремĕш хут амантнă. Сывалса çитеспе каллех çапăçава кĕрсе, паттăр салтак «чĕлхесем» тытма разведкăна çӳренĕ, хăйĕн хăюлăхĕшĕн «Паттăр-



В.Н. Еников - Ленин орденне тивĕçнĕ

лăхшăн» медале тивĕçнĕ. Ăна сержант ятне парса отделени командирне лартнă. Ял хыççăн ял, хула хыççăн хула: Курск, Рыльск, Житомир, Проскурово, Каменецк-Подольскпа Острополь.

Юлашки хулана ирĕке кăларнă чух Еников отделенийĕ Слуцк шывĕ урлă сарнă кĕпере взрывран çăлса хăварнă, фашистсен взводне пĕтерсе тăкнă, вĕсен 12 çыннине хĕçпăшалĕпе пĕрле тыткăна илнĕ. Салтаксене ку паттăрлăхшăн орденсемпе, командирăн паттăрлăхне çĕршывăн пысăк наградипе, Ленин орденĕпе, палăртнă. Каярахпа В. Еников кăкăрĕ çинче Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ йăлкăшнă.

Вăрçă Василий Николаевичшăн Польша çĕрĕ çинче питĕнчен аманнипе пĕтнĕ. Тăван яла паттăрăн 1946 çулта çеç таврăнма май килнĕ. Вăрçă çулĕсенче Ленин орденне тивĕçнисем районĕпе 4 çын çеç.

## ТĔРЕК ТАВРАШĔ АСЛĂ ВĂРÇĂРА

Пысăк çĕнтерĕве нимĕç фашисчĕсенчен çĕнсе илнинче манăн ентешсен тӳпи те пĕчĕк мар. Илер-ха, акă, Тĕрек йăхне. Вăл халĕ ялта 40 çемьене пĕрлештерсе тăрать. Тĕрексем кунта 250 çул каялла тымар янă. Çулран çул йышланса, вăйланса Упакасси тăрăхĕнче тĕпленнĕ. Ĕçчен алăллă, ырă кăмăллă, йăла-йĕркесене пăхăнса, упраса пырса пурнăç çулĕ çинче çирĕп тăракан йăх пулнă тĕрексем.

Тăван çĕршыв çине калама çук йывăр хуйхă, терт йăтănса ансан, ку йăхран 39 çын салтак тумне тăхăнса хаяр та вăйлă тăшманпа çапăçма вăрçа кĕнĕ. Çав шутран 22-шĕ Тăван ял çĕрне, унăн лăс йăмраллă урамĕсене, хăйсен юратнă тăванĕсене урăх курайман, вĕсем çапăçу хирне выртса юлнă. Калама çук пысăк çухату тӳснĕ ку йăхри тăвансем. Халĕ вĕсен ячĕсене аса илсе кăштах каласа парас килет.

Акă, Алексеев Арсентий Кузьмича илер. Ялта Куçма Алексейч ывăлне чăвашла Арçут тесе чĕннĕ. Вăл Вăтакаса кĕрекен урамăн сылтăм енчи 2-мĕш килте çуралса ӳснĕ.

Пĕтĕмпе те 27 çул çеç пурăннă çĕр çинче Арçут. Мĕн çин-

чен шутлама ёлкёрнё-ши çамрăк арçын хăйĕн пурнăçĕн юлашки самантĕнче. Килĕнче юратнă арăмĕ тата каччă шутне кĕрсе пыракан Унтри шăллĕ унран кашни кун пек хыпар кĕтнĕ. Анчах кĕтсе илеймен: 1942 çулхи çурла уйăхĕн вĕçĕнче вăл хыпарсăр çухалнă.

Шăллĕ, Унтри те, пĕр çапăçура 1943 çулхи юпа уйăхĕнче паттăрсен вилĕмĕпе пуç хунă. Куçма Алексеевичăн ăрăвĕ çапла сарăмсăр татăлнă, мĕншĕн тесен унăн урăх ывăл пулман.

Тепĕр çамрăк ентеш - Андреев Алексей Павлович вăрçă пуçланнă чухне 15 çеç тултарнă пулнă. «Ватти-вĕттине яланах ырă суннă, хăйне çынпа кирек-хăçан та сăпайлă тытнă», аса илеççĕ ун пирки ăна астăвакансем. Вăл килĕнчен çамрăклах ФЗО-на вĕренме тухса кайнă. Тен, хăвăртрах алла професси илсе пурнăç çулĕ çине тăма ĕмĕтленнĕ çамрăк каччă. Хăрушă вăрçă çулăмĕнче вăл хăй тата унăн шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсем пĕтĕмпех çунса кайнă.

Архипов Андрей Архипович фронта кайнă чухне 50 çулалла çывхарса пынă. Вăл çўллĕ те тĕреклĕ арçын пулнă. Килĕнче арăмĕсĕр пуçне 4 хĕрĕ: Кулине, Суюк, Татьянпа Ульки тата икĕ ывăлĕ Яккупа Анатули тăрса юлнă. Калама çук йывăр пулнă фронта тухса каякансене!Ултă ачапа: асли Кулине 18-та пулнă, алра - пĕчĕкки. Вĕсене вăрçă нушине чăтса ирттерме мĕн вăй пană-ши? Кил хуçи Андрей Архипович вăрçăччен «Социализм» ятлă артельте ĕçленĕ. 1943 çулта вăл вутлă çапăçура вилнĕ.

Ефимов Яков Ефимович хăйĕн ялти тусĕпе Сотников Григорий Ивановичпа пĕр кунта вăрçа тухса кайнă. Вăл аслă ывăл пулнăран çемье лавне туртассине вăрçăччен хăй çине илнĕ пулнă. Якку ашшĕ, Ефим Михайлович, Пĕрремĕш тĕнче вăрçин ветеранĕ, граждан вăрçинче çĕре кĕнĕ. Упăшкисĕр юлнă тăлăх арăмăн ачисене пĕчченех ура çине тăратмалла пулнă. Юрать-ха Ехимĕн ывăлĕсем ĕç патне маттур пулнă. Сĕмсĕр Гитлер пуçланă вăрçă виçĕ пĕртăванăн: Якку, Çемен, Йăванăн ĕмĕчĕсене пĕр шеллемесĕр татнă. 1941 çулта çурла уйăхĕнче çак çемьене икĕ «хура хут» çитнĕ - Çеменпе Якку вилни çинчен хыпарланă. Аслă лейтенант чинне илнĕ Йăван пичче

Орел облаҫĕнче 1943 ҫулта пынӑ Курск пĕккинчи ҫапӑҫура куҫне ĕмĕрлĕхех хупнӑ.

Сӑмах май каласан, Яккун ҫывӑх тусĕ те, Кĕркури Сотников, 1942 ҫулта вӑрҫӑра хыпарсӑр ҫухалнӑ.

Яккупа Ҫеменĕн тепĕр тӑванĕ, Йӑван, ҫут тĕнчене 1 тĕнче вӑрҫи пуҫланнӑ ҫул килнĕ. Вӑрҫӑччен вӑл Йĕпреҫре «Кооплеспромхозра» шут ĕҫĕпе тӑрӑшнӑ. Арӑмĕ, Хĕветӳҫ, трахсестрара вӑй хунӑ. Ҫарта Иван Ефимович аслӑ лейтенант чинне тивĕҫнĕ. 1943 ҫулта Курск пĕкки патĕнчи пысӑк ҫапӑҫура паттӑрсен вилĕмĕпе ҫут тĕнчерен уйрӑлнӑ. Унӑн ӳтне Орел облаҫĕнчи Вендерево ялĕнчен Короськово ялне тепĕр хут куҫарса пытарнӑ. Виҫĕ тӑванӑн шӑпине вӑрҫӑ ҫапла аркатнӑ.

Михайлов Александр Сергеевич хӑйĕн тепĕр икĕ тӑванĕпе: Макҫӑм тата Йӑван пиччĕшĕсемпе вӑрҫӑ хирне тухса кайнӑ. Ĕлĕксантӑр ҫӑмӑл шӑмшаклӑ маттур каччӑ пулнӑ. Юрраташша юратаканскер, купӑспа ӑста каланӑ. Вӑрнарти техникумра вĕреннĕ пулсан та ĕмĕчĕсемпе ҫар училищинче ӑс пухасшӑн ӑнтӑлнӑ. Вӑл вара техникумра вĕренме пӑрахса Йĕпреҫри пекарньӑра Макҫӑм пиччĕшĕ патне ĕҫлеме кайнӑ. Каярахпа Ĕлĕксантӑр малтан учетчик, унтан ял Совет председателĕ пулса ĕҫлесе пӑхнӑ. Вӑрҫӑ пуҫлансан ӑна тӳрех ҫар училищине вĕренме илеҫҫĕ. 1942 ҫулта чӳк уйӑхĕнче Сталинград патĕнче контрнаступлени пуҫланнӑ. Ĕлĕксантӑра, вӑл разведчик пулнӑ, ҫавӑн чухне ураран хытах амантнӑ. Раштав уйӑхĕнче госпитальте кӑшт ҫеҫ сипленнĕ хыҫҫӑн вӑл яла уксах таврӑннӑ. Килте пĕр ҫул ытларах пурӑнсан фронтовик 1944 ҫулхи ака уйӑхĕнче каллех фронта тухса кайнӑ. Ҫирĕмри каччӑ пирки «Ҫапӑҫура вилнĕ» тесе хыпар килнĕ.

Тĕрек йӑхне тĕпчес ĕҫре Михайлов Макҫӑм Сергейчӑн (вӑл Ĕлĕксантӑр пиччĕшĕ) тӳпи пурри ҫинчен маларах каланӑччĕ. 1942 ҫулхи пуш уйӑхĕнче вӑл та фронта тухса кайнӑ. Унӑн Ржев хули ҫывӑхĕнчи вӑйлӑ ҫапӑҫусене хутшӑнма тивнĕ. Нумай ҫул хушши ҫӑкӑр пĕҫерсе пуян опыт пуҫтарнӑскере фронтра та ҫак ĕҫе шанса панӑ. Ун асĕнче Зайцево тӑвĕ патĕнче кĕрленĕ ҫапӑҫу ӳкерчĕкĕсем паянхи кунччченех юлнӑ. 1943 ҫулхи ҫурла уйӑхĕнче Курск таврашĕнче пулса иртнĕ контрнаступлени патĕнче Макҫӑм пиччен совет салта-



М.С.Михайлов

кĕсене çăкăрпа тивĕçтермелле пулнă. Миçе буханка çăкăр пĕçерсе кăларнă-ши Макçăм пичче хăй аллисемпе?! Вăл тăрăшса пĕçернĕ çăкăрпа çĕршер салтак хăрушă çапăçусене кĕме вăй пухнă. Фронтра та тутлă, кăпăшка çăкăр пĕçерекен пысăк хисепре пулнă. Ара, выçă салтак, салтак мар вĕт! Макçăм пиччен ачалăхĕ çăмăл пулман. Иртнĕ вăхăта час-часах аса илет вăл. Унăн ашшĕне, Çеркей Михалча, «кулак» тесе айăпланă, кил-çуртне, пурлăхне туртса илнĕ. Çавăн хыççăн ашшĕпе амăшĕн тата çемьери 7 ачин мунчана пурăнма куçма тивнĕ. Хăй вăхăтĕнче Çеркей, тăванĕсемпе канашласа пăхнă хыççăн çемьене тăрантарма ял варринче лавкка уçма шутланă. Унта халăха кирлĕ вак-тĕвек сутнă. «Тăвар, краççын, шăрпăк сутлăх илме Шупашкара Ехрем хуçа патне кайкаласа килнисем те пулнă», - аса илет Макçăм пичче. Вăл вăрçăра Киев патĕнчен тăшмана сирнĕ вăхăтра аманнă, тăван яла Çĕнтерӳ хыççăн çур çултан çеç таврăнма пултарнă. Ялта вăл колхозра тăрăшнă, вырмара комбайнпа ĕçленĕ. Макçăм Сергейч чаплă комбайнер пулни çинчен ун чухнехи хаçатсенче çырнă статьясем çирĕплетеççĕ, хисеп грамотисем те нумай унăн. Макçăм пичче çемйи туслă та сăпайлă çынсенчен тăрать, ял çинче вĕсем хисепре. Йăван пиччĕшĕ те фронтран яла йĕркеллех çаврăнса çитнĕ.

Макçăм Сергейча хирĕç унăн тăванĕ Тряков Михаил Осипович пурăннă. Унăн 4 ывăлĕнчен иккĕшĕ: Петĕрпе Антун вăрçăран таврăнайман, тăшманпа çапăçма кайиччен çемье çавăрма та ĕлкĕреймен. Асли, Петĕрĕ ялта трахома чирĕпе кĕрешекен фельдшер пулнă. (Вăл вăхăтра трахома - куç чирĕ уйрăмах ялсенче вăйлă сарăлнă). Шӳтлеме юратанскер, пĕрре çапла каланă иккен: «Трахомăна ăна сăмала шывĕпе те сы-

ватма пулать». Карчăксем пĕр-пĕрин çине кăн пăхнă; те шӳтлет каччă, те чăнласах калать. Петĕрĕн шăллĕ, Антун, вăтам пӳллĕ, çирĕп кăмăллă каччă пулнă. Ăна салтак службине илсе кайсан, тӳрех фронта янă. Антун танкист пулнă ( яла çитнĕ сăнӳкерчĕк çинче вăл танкист формипе ларать). Петĕр пиччĕшĕпе иккĕшĕнне вăрçă пурнăç çиппине татнă, вăхăтсăр çут тĕнчерен уйăрнă.

Пĕртăван Никитинсен шăпи те телейсĕр килсе тухнă. 1942 çулта вĕсем виççĕшĕ те: Ĕлĕкçи, Якур тата Анани сарăмсăр пĕтнĕ. Çак çул Пысăк Упакасси ялне 88 хуйхăллă хыпар - вилни çинчен - çитнĕ. Ку çул вăрçă çулĕсенчи чи йывăр çул пулнă.

Осипов Ваçили Çĕнĕ урамра пуранннă, вăл ялти хисеплĕ çынсенчен пĕри пулнă. Чылай вăхăт хушши Василий Осипович артельте вăй хунă, каярахпа, вăрçа тухса кайиччен «Победа» (пирĕн колхоз ячĕ) колхоза ертсе пынă. Ĕçре кăна мар, обществăллă ĕçре те активлăхĕпе уйрăлса тăнă. Ăна артельте профкома, темиçе хутчен те ял Совет депутатне, икĕ хутчен районти халăх сучĕн заседательне суйланă. 1942 çулта вăл фронта тухса кайнă. Çапăçусенче паттăрлăхпа тавçărулăх кăтартни шкулти музейра упранакан Тав хучĕсенчен паллă. Çĕнтерӳ çулĕнче кăна Германири нумай хуласене ирĕке кăларнă çĕрте Василий Осипович Верховнăй Главнокомандующий приказĕпе нумай хутчен тав сăмахĕсене тивĕçнĕ.

Аслă вăрçă нушине манăн атте (вăл та Тĕрек йăхĕнчен) Анисимов Михаил Анисимович нумай чăтса ирттернĕ. Çăмăл пулман унăн пурнăçĕ. Ашшĕн, Анисим Алексеевич Осиповăн, 1907-1908 çулсенче ялти шкулта учитель пулман пирки (Константин Иванов мăнкун хыççăн паллă мар сăлтавсене пула шкула пыма пăрахнă) ирĕксĕрех Ершепуçне вĕренме çӳреме тивнĕ. Вĕсем тăваттăн: Степан Михайлов, Иван Романов, Анисим Алексеев (асатте) тата Çемен Элкер хăрах куçлă Пальмов учитель урокĕсене кӳршĕ яла çӳренĕ. Экзаменсене Çĕнĕ Мĕлĕшри (Булатăвăри) шкулта тытнă. Асатте Пĕрремĕш тĕнче вăрçинчен аманса килет.

Çемен Элкерпе 1917 çулта иккĕшĕ Хусанти Большая Красная урамра вырнаçнă госпитальте пĕр вăхăт сипленнĕ,

çар курсĕсене çӳренĕ. Анне каланă тăрăх, вĕсем пĕр чашăкран пăтă çисе пурăннă (турилкки шкулти музейра упранать). Ун çине «Казанское военное училище - товарищество Гутман в Казани», - тесе çырнă. Асатте граждан вăрçинчен киле таврăнайман. (Тĕрексенчен Федор Михайлович Тряковпа иккĕшĕ граждан вăрçинче пуç хунисем). Каларăм ĕнтĕ, атте ашшĕнчен пĕчĕкле тăрса юлать. Ялти ШКМ-ра вĕренсе пĕтерсен артельте ĕçлеме пуçланă, вăрçăччен вăрман ĕçĕнче маркировщикра тăрмашнă. 19 çулхи каччă çара, унтан фронта кайнă. Наводчик пулса 469-мĕш стрелоксен полкĕнче çулталăка яхăн фашистсемпе çапăçнă. Сталинград патĕнче хĕрӳ çапăçусем



М.А. Анисимов юлташĕсемпе тыткăнран хăтăлсан (Зеенхаузен)

пуçланнă кунсенче Орел çывăхĕнче пирĕн çарсен пурнăçĕ йывăр пулнă, чылай çар пайĕсем тăшман аллине лекнĕ. Тыткăн шăпи ман аттене те пырса çапнă. Брянск патĕнчен пуçласа пурĕ 7 çар лагерĕнче (Вильно-Теблин-Лагишево-Шавли-Вупперталь-Пенсбург) тыткăнри салтакăн нушине тӳснĕ. Вĕсене вăрман кастарнă, çулсем хăпарттарнă, вокзалсем çĕнетнĕ çĕрте ир пуçласа каççчен ĕçлеттернĕ. Пĕр лагерьтен тепĕр лагере куçнă кунсенче эрне хушши апатсăр тытнă. Тыткăнрисем валли çăкăра йывăç çăнăхĕпе курăка вĕтетсе, улма хуппинчен е çĕрме пуçланă кăшман çеçкисенчен пĕçернĕ яшка çитернĕ. Бараксенче вĕсем йĕпе çĕр çинче е шыв ланкашкисенче выртса тăнă. Германи çĕрĕ çинче тыт-

кăнра пулнă чухне аттепе пĕрле тата 2 чăваш çынни пĕр лагерьте пулнă. Вĕсем Владимир Николаевич Горшковпа Григорий Иванович Базунов (иккĕшĕ те Патăръел районĕнчен). Григорий Базунов тыткăнри нушаллă пурнăç çинчен дневник çырса пынă Ун тăрăх пирĕн салтаксене фашистсем мĕнле терт кăтартнине уççăнрах курма пулать. (Çав дневникрен Базунов тăванĕ Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе кĕнеке пичетлесе кăларнă). 1945 çулхи апрель уйăхĕн 16-мĕш кунĕнче США çарĕсем вĕсене ирĕке кăларсан, тыткăнрисен пурнăçĕ самаях çăмăлланнă, фильтрационный лагерьсенче тĕрĕслев урлă тухсан çеç тыткăна лекнисене тăван килĕсене янă. Атте те Зеенхаузенран (Германирен) Упакассине 1946 çул вĕçĕнче таврăннă, авланнă, аннепе иккĕшĕ 6 ача çуратса пăхса ӳстернĕ. Чылай вăхăт хушши вăл колхозра хурт-хăмăр пăхакан пулса ĕçленĕ. Ман аттенни пек тыткăнрисен йывăр шăпи ентешсенчен нумайăшне пырса тивнĕ.

Тури урамра пурăннă Иван Андреевич Тряковăн пурнăçне те вăрçă татнă. Ун пиччĕшĕ Ваçинк Çемен Элкерĕн çывăх тусĕ пулнă. Ун пирки Элкер «Вутпа çулăм витĕр» романĕнче аса илет. 45 çулалла çывхарнă Йăван пичче колхозра бригадирта тăрăшса ĕçленĕ. Ăста алăллă çын, хуçалăхне çирĕп те йĕркеллĕ тытса пынă. Çавăнпа-и, тен, вĕсене «кулак» тесе айăпласа хуçалăхри хăш-пĕр хуралтăсене колхоз валли туртса илни те пулнă. Çемьере 10 ача çуралнă, анчах 7-шĕ кăштах кун çути курнипех пурнăçран уйрăлнă.

46 çулхи арçын вăрçа кĕнĕ. Унăн фронтран янă çырăвĕ паянхи кун валли упранса юлнă. Кĕске çырусенче салтакăн хуйхине, шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене туйма пулать. «Ку хутĕнче сывах юлатăп,» - тет вăл 1943 çул пуçламăшĕнче янă çырура. Тепĕр çырăвне Йăван пичче чылай вăхăт иртсен çеç çырма пултарнă, уншăн вăл килтисенчен каçару ыйтать: «Эсир манран пĕрмай хут кĕтетĕр пулĕ, ку хут алран тухса кайиччен те темĕн те пулма пултарать. Кунта пурнăç минутпа», - вĕçлет вăл юлашки çырăвне. Ку сăмахсем тăванĕсемшĕн юлашки пил вырăнне пулнă. 48 çулхи фронтовик хыпарсăр çухалнă, шăпи сарăмсăр пĕтнĕ. Арăмĕ 3 пĕчĕк ачапа (кĕçĕнни ашшĕпе уйрăлнă чух çулталăкра çеç пулнă) тăрса юлнă.

Федор Михайлович Тряков 39 çулти вăй питти арçын Мускав патĕнчи хаяр çапăçусене хутшăннă. Тăшман пульли ăна вăйлă амантнă. Вăйсăрланнăскерне суранĕсене сипleме 1851-мĕш номерлĕ эвакогоспитале вырттарнă. Тухтăрсем тем пек тăрăшсан та Хĕветĕр ураланайман. 1942-мĕш çулхи раштавăн 19-мĕшĕнче вăл ĕмĕрлĕхех куçне хупнă. Унăн ӳчĕ Волоколамск районĕнчи 81-мĕш номерлĕ масарта выртать.

Тепĕр ентешĕн Абрам Петрович Тряковăн (политрук заместителĕ пулнă) шăпи те телейлех пулман. Вăл вăрçăччен «Социализм» артельте бухгалтер пулса ĕçленĕ. Унăн ашшĕ Петĕр хамăр ялти Трофим Макаровпа 1904 çулта Раççейпе Япони хушшинчи пынă вăрçăра Порт-Артур крепоçне хӳтĕленĕ. Турă панă телейпе яла сывă таврăннă, тӳрех çанна тавăрса ĕçлеме пуçланă Петĕр пичче. Хăйĕн ĕçченлĕхĕпе, тирпейлĕхĕпе, перекетлĕхĕпе ун çемйи çителĕклĕ пурнăçпа пурăнаканнисен шутĕнче тăнă, çавăншăнах 1930-мĕш çулсенче «кулак» ятне илтнĕ Петр Павлович. Вăрçăра унăн икĕ ывăлĕ вилнĕ. 37 çулхи кĕçĕн ывăлĕ, Абрам, пĕр çапăçура аманнă, 2749-мĕш эвакогоспитальте ĕмĕрлĕхех куçне хупнă. Ăна Тверь çывăхĕнчи Перемки масарĕнче пытарнă. Абрам пиччен 5 ачи тăлăха юлнă. Унăн пиччĕшĕ Николай Петрович ăс-тăн енчен çирĕп аталаннă çамрăк пулнă. Вăл вăрçăччен Мускаври Тимирязев ячĕллĕ академине пĕтерсе аспирантурăра вĕреннĕ. Ăслă ентеш Вăрнарти техникумра вĕренӳ пайĕн ертӳçи пулса ĕçленĕ. Анчах «кулак ывăлне» ура хурас тĕллевлисем, ун çинчен çăхав çырнă. Çавăнпа Николай Петровичăн техникумран кайма тивнĕ. Ашшĕ ывăлне яла илсе килесшĕн тăрăшнă. Ăна яла хăварас тĕллевпе вăрман кăларса пура та пураланă, вăрман хĕрринче çĕр те илнĕ. Анчах куштансем пĕр каçхине пурана çунтарса янă. Кун хыççăн Николай Петрович Мускава тухса кайнă. Аспирантурăран ăна Украинăна Харьковри ял хуçалăх институтне вĕрентме янă. Анчах кунта вăл вырнаçса ĕлкĕреймен - вăрçă пуçланнă. Аслă политрук пĕр тан мар çапăçура вилмеллех аманнă. Унăн çемйи вăрçă кунĕсенче эвакуаципе яла куçса килнĕ, колхозра вăй хунă. Вăрçă пĕтсен унăн арăмĕ ачисемпе каллех Мускава таврăннă.

Пĕр тăван Григорьевсем Йăванпа Ĕлĕкçи иккĕш те фрон-


Иван Григорьев

тран таврăнайман. Асли, Йăван, вăрçăччен тăван ялта бригадирта вăй хунă, çемье çавăрнă. Анчах тем амакне пула, унăн çемйи сарăмсăр пĕтнĕ. Вăрçă пуçланнă çул Ĕлĕкçи шăллĕ 17-ре пулнă. Анчахрах Кульцав шкулне «Похвальный листпа» пĕтернĕскере тăван ялти шкула ачасене вĕрентме шаннă. Физика тата географи урокĕсене те ирттернĕ çамрăк вĕрентекен. 18 çул тултарсан ăна Уральск хулине вĕренме янă. Вăрçа кĕме хатĕрленĕ вырăнтан, Уральскран, вăл хăйĕн ялти тусĕ, Андрей Иванович Романов патне1943 çулта çыру çырать. Унта хăйсене часах фронта илсе кĕресси пирки хыпарлать. Урăх унтан тусĕ çыру илеймен. Вăл çыру шкулти музейра упранать. 18 çулти çамрăк каччă, хăй пурнăçĕнчи чи илемлĕ вăхăтпа - çамрăклăхпа киленсе те ĕлкĕреймен, тен, пĕр хĕре те чуп туса та курман. Вăрçă хирĕнче пуç хунă ентешĕмĕр Украина çĕрĕнче ĕмĕрлĕхех канлĕх тупнă.

Ĕлĕкçин юлташĕ, Унтри çинчен сăмах хускатнăччĕ. 1942 çулхи пуш уйăхĕнче 18 тултарнă каччăна Мускава 4 уйăхлăха авиадесантнике вĕренме янă. Виçĕ хутчен парашютпа сикме ĕлкĕрнĕ Унтри, çакăн хыççăн авиаципе сывпуллашма тивнĕ. Хаяр тăшманăн вăйĕ пысăк пулнă-ха. 1942 çулта, çулла, Гитлер çарĕсем Атăл çине тухаççĕ. Пирĕн çарсене сирсе Кавказалла ăнтăлнă тăшман. Харьковпа Воронеж хулисем патĕнче Хĕрлĕ Çар ушкăнĕсене çĕнтернĕ тăшман çарне çĕнĕ вăй хутшăннă, вĕсен шутĕнче Итали, Румыни тата Венгри салтакĕсем пулнă. Çак пăтăрмахлă саманта лекет те ĕнтĕ Унтри пичче. Пысăк вăрçăра темĕн те пулать. Фронтран таврăнайман ентешсем 200 çын ытла Çĕнтерӳшĕн пирĕнтен вăхăтсăр

уйрӑлса кайрӗҫ. Хӑшӗсен паттӑрлӑхне никам та пӗлмест, вӗсене наградӑсем те, хисеп те тивӗҫмен. Пирӗн ҫарсен синкерлӗ кунсем чылай пулнӑ. Унтри пичче хӑйсем Дон урлӑ мӗнле каҫни ҫинчен виличчен те манаймасть пулӗ. Тӑшман бомбисем пысӑк сиен кӳнӗ, пӗр полкран 100 салтака яхӑн ҫеҫ юлнӑ. Ку вӑл Хлебная станци ҫывӑхӗнче пулса иртнӗ. Нимӗҫсем хӑйсен артиллерине вӑйлӑн ӗҫлеттернӗ. Унтри пичче ҫавӑн чухне икӗ аллине те амантать. Контузи хыҫҫӑн тӑнне ҫухатни чылай вӑхӑта пынӑ. Камышинра вӑл куҫне уҫнӑ, хӑй чӗрӗ юлнишӗн савӑннӑ. Таталнӑ шӑнӑрсене сыпӑнтарма операци сӗтелӗ ҫине выртнӑ. Анчах ҫав вӑхӑтра каллех нимӗҫсем бомбӑсем пӑрахма пуҫлаҫҫӗ. Сурансене васкаса ҫыхкаласан, операци сӗтелӗ ҫинчен вӑхӑтсӑрах анма тивнӗ. Питӗ йывӑр аманнисене пӑрахут ҫине вырнаҫтарнӑ. Унтри пичче валли унта вырӑн тупӑнман. Телейӗ хӑй ҫумӗнчех ҫӳренӗ ҫав унӑн, мӗншӗн тесен ҫав пӑрахута нимӗҫсен бомби лекнӗ, пурне те тӗп тунӑ. Ҫул юппинче вӑл юлташӗсемпе снаряд тиеме каякан машина ҫине ларма май тупать. Унтри пичче ҫӗнӗрен йӗркеленекен чаҫӗпе Хусана, унтан Шупашкара хӑйӗн тепӗр икӗ юлташӗпе килсе ҫитнӗ. Сурансем уҫӑлнипе каллех госпитальте - малтан Шӑхасанта, унтан Канашра сипленме тивет. Ҫав ҫул вӑл яла таврӑннӑ. Пӗр вӑхӑт колхозра агрономра, унтан МТСра вӑй хунӑ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи нуша-терт тӳснишӗн тата хӑюлӑхпа хастарлӑхшӑн вӑл «За отвагу» медале, каярахпа Тӑван ҫӗршыв Аслӑ вӑрҫин 1 степеньлӗ орденне тивӗҫнӗ.



Алексей Григорьев тӑванӗсемпе

Нумай çул каялла шкул ачисенчен эпĕ «Шырав» ушкăн йĕркеленĕччĕ. Ĕç хыççăн каçчен килтен киле çӳресе кашни фронтовик патне çитсе чылай материал пуçтарнăччĕ. Вăрçă ветеранĕсемпе кăна мар, салтак арăмĕсемпе тĕлпулусем йĕркеленĕ. Мария Ивановна Романова (Андрей Иванович амăшĕ) каласа пани паянхи кун та асра.

«Килтен 4-ăн вăрçа тухса кайрĕç. Упăшкана, 46 тултарнăскере те, килте хăвармарĕç. 1942 çулта вăл вăрçа кĕнĕ. Сталинград патĕнчи çапăçура урине тăшман пульли суранланă, каярахпа аллине те амантни çинчен киле çырса ячĕ. Госпитальте сипленĕ хыççăн, ăна Ориенбаума ĕçлеме янă. Унта вăл пăрахутсем тунă, юсанă çĕрте вăрçă вĕçлениччченех пулнă. Эпир килте хĕрарăмсемпе ачасем çеç юлтăмăр. Пурăнма питĕ йывăрччĕ. Ялта арçынсем çук пирки пĕтĕм йывăр ĕçе хамăрăн тумаллаччĕ. Уйрăмах ака ĕçĕ йывăрччĕ. Турта хушшине лашасем çитмен пирки вăкăрсене кӳлеттĕмĕр, анчах вĕсем кутăнлашаччĕç, вырăнтан та хускалмасчĕç, вара выльăх вырăнне хамăр кӳлĕннĕ. Калама çук ывăнаттăмăр. Киле çитсен тата выльăх-чĕрлĕхне, ачи-пăчине тăрантармалла, пăхмалла. Хĕллехи вăхăтра вăрман та кастарнă. Пăрланса ларнă тумтирпе, халран кайнăскерсем, 10-шар çухрăма çурран утса килнĕ. Мĕнле тӳссе ирттернĕ-ши? Урăх ун пек самана ан пултăрччĕ», - çапла вĕçленĕ хăй сăмахне вăрçă нушине тӳснĕ хĕрарăм.

Тряков Иван Романчăн пĕр шăллĕ Никита Романович 1943 çулта Могилев патĕнчи хĕрӳ çапăçура паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Тепĕр шăллĕ, Микула, вăрçăччен «Социализм» артельте маçтăрта вăй хунă. Вăрçă умĕн анчах çемье çавăрнă. Çамрăк арăмĕпе çулталăка кайнă хĕрĕшĕн пурнăçра шанчăклă тĕрек пулма ĕмĕтленнĕ. Анчах хаяр вăрçă чун-чĕрере çунатланнă шухăшсене çунтарса кĕл тунă.

Гварди рядовой Николай Тряков фронтовикăн шăпи те, телейĕ те кĕске пулнă, вăл фронтра хыпарсăр çухалнă. Арăмĕ те хĕрĕ те хăйсен юратнă çыннине киле кĕтсе илеймен. Мĕн чул çынна тăлăха хăварман-ши усал вăрçă?!

Кашни çыннăн пурнăç шăпи хăйне евĕрлĕ. Илер-ха Тряков Андрей Игнатьевича. Унăн амăшĕ - Çемен Элкерĕн ап-



Ç. Элкер тăванĕ - А.И. Тряков

пăшĕ. Унтри ачалăхĕ хăйĕн куккăшĕ çуралса ӳснĕ урамрах иртнĕ. Çемьере вăл пĕртен-пĕр, кĕтнĕ ывăл пулнă, 4 хĕр хушшинче ашшĕ ăна ытларах юратнă, каярахпа ун сăмахне хисепе хума тăрăшнă. Ăçта кăна илсе çитермен пулĕ Андрей Игнатьевича ĕç биографийĕ?! Малтан писарьте, РАЙПОра счетовод, бухгалтер пулса ĕçленĕ. 1940 çултан Унтри пичче Йĕпреç районĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ, Канашри патшалăх банкĕн ĕç укçи фончĕн инспекторĕ, каярахпа Шăмăршăри банка ертсе пыма тивĕçнĕ.

Куçĕ япăх курнă пирки-ши е пысăк явăплă ĕçсене пурнăçлама çын тупайманнипе-ши, 1944 çулччен ăна вăрçа илмен. Асăннă çул вырăнти военкомат урлă ăна Ульяновскри танк полкĕнче çунтармалли-сĕрмелли хатĕрсемпе (ГСМ) ĕçлекен инспектора лартнă. Хуть мĕнле шанса панă ĕçе те Андрей Игнатьевич чунне парса пурнăçланă. Çав çулах кĕркунне Яссо-Кишиневск патĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Нимĕç фашисчĕсем 2-мĕшпе 3-мĕш Украина фрончĕн хăш-пĕр чаçĕсене вăхăтлăха çавăрса илнĕ. Унтри пичче те юлташĕсемпе окруженине лекет. Икĕ эрне хушши вĕсем выçăллă-тутăллă пурăннă, юрать-ха кăнтăрта çав çул панулми нумай пулнă, çак çимĕç вĕсене выçлăхран хăтарнă. Хĕрлĕ Çар чаçĕсемпе Андрей Игнатьевич Венгрипе Германие фаштстсенчен ирĕке кăларнă çĕрте çапăçнă. Каярахпа ун кăкăрне нумай медальсемпе «Отечественнăй вăрçă» орденĕ илем кӳнĕ.

Тăван Йĕпреçре вăл каллех пысăк тимлĕх кирлĕ должноçсенче, ытларах вăрман ĕçĕнче тăрăшнă. Вăрман промышленноç министерстви çумĕнчи институтри курссенче пĕлĕвне

ӳстернӗ Унтри пичче. Вăрман склачӗн пуçлăхӗнче вăл пӗр улшăнмасăр 13 çул хушши вăй хунă, кайран пенсине тухсан тата 7 çул хушши вăл ӗç пăрахман. Пӗтӗмпе Андрей Игнатьевичăн ӗç стажӗ 52 çул. Нумай çул йӗркеллӗ пысăк тимлӗхпе ӗçленӗшӗн правительство енчен вăл чылай грамотăсене тивӗçнӗ.

Çемьере Унтри пиччене ăнланакан, пулăшакан çын - мăшăрӗ Елизавета Ивановна (хӗр чухнехи хушамачӗ Тульская) пулнă. Çӗрпӳ хӗрӗпе Унтри пичче 50 çул хушши пӗр-пӗрне килӗштерсе, юратса пурăннă. Унтри пиччене шăпа вăрăм та пархатарлă кун-çул парнеленӗ.

## САЛТАК ÇЫРНĂ ВИÇКӖТЕСЛӖ ÇЫРУСЕМ... МУЗЕЙРА

Акă, ман умра хаклă ентеш фронтовиксен вăрçă çулăмӗ витӗр тухнă сăваплă çырăвӗсем. Вӗсем тăрăх çав вăхăтри чăтма çук йывăр пурнăçа, ял çыннисен шухăшӗ-ӗмӗчӗсене, чун ыратăвне курма пулать.

Пӗрремӗш çыру. Çыраканӗ Степан Ефремович Краснов. Вăл 1897 çулта Пысăк Упакасси ялӗнче çуралнă. Ку çырăва çырнă чухне вăрçă пуçланман-ха, тепӗр икӗ уйăхран ун хăрушă çулăмӗ Степан Ефремовича ӗнтсе илет. Çтаппан пиччен икӗ çырăвӗ яла çитнӗ. Вăл Куйбышев (Самара) облаçӗнчи Молотов районӗнче çар службинче тăнă. Почта карточкисем çине çырнă йӗркесем кӗске пулин те чи кирлине, килшӗн тунсăхланине, тăвансенчен çырусем кӗтнине пӗлтереççӗ. Çав вăхăтрах çывăх тус-юлташсене ас тунине, манманнине, вӗсемпе çыхăну тытма тăрăшнине пӗлме пулать. Акă, Çтаппан пӗринче хăй патне Архип Алексеев пырса кайни çинчен çырать. Ырри çинчен ӗмӗтленекен, шанакан çамрăксем инкек пирки шухăшламан та тейӗн çав. Анчах тепӗр 2 çултан 33 çулхи Эрхип Тверь облаçӗнчи 104-мӗш номерлӗ эвакогоспитальте, çапăçура илнӗ пысăк сурансене пула, вилет. 1943 çулта инçетри Наумово ялӗнчи масарта унăн ӳчӗ канлӗх тупать.

Çтаппан пиччен тепĕр çырăвĕнче Эрхип хăйĕн юлташĕнчен Илле Кузьмичевран посылка кĕтнине çырнă. Çырура асăннă çав ентешĕн шăпи те сарăмсăр татăлнă. Çĕнтерӳ сулĕ çитнĕ. Тăшмана Польша çĕрĕ çинчен тасатса Германие хăваланă. Паттăр минометчик, Илле, киле таврăнасси çинчен ĕмĕтленнĕ пулĕ, анчах вăрçă вĕçленес умĕнхи çапăçура вăйлă аманнă. Унăн пурнăçĕ те медицинăпа санитари батальонĕнче йывăр сурансене пула ют кĕтесре татăлать. Котовицки воеводствинче Домбров-Гурнич ялĕнче вăл ĕмĕрлĕхех куçне хупнă.

Юлашки çыруне Степан Ефремович 1942 çулхи нарăс уйăхĕн 26-мĕшĕнче Владимир хулинчен çырнă. Вăл питĕ кĕске. Çар цензури витĕр тухнă çырура нимĕнех те çыраймăн. Çырури пĕр йĕрке шухăша ярать: «Çăва тухайăпăр-ши.» Тепĕр виçĕ уйăх иртсен, вăл 467-мĕш номерлĕ сывлăха сиплекен батальонта (тепĕр майлă ОМСБ) сурансенчен вилсе каять.



В.С.Краснов - вăрçăра вилнĕ

Унăн ывăлĕн Валерьянăн та 10 яхăн çыру килте арча тĕпĕнче упранса юлнă. Хăй çапăçура çĕре кĕнĕ. Вăл çырусене пĕр тикĕс почеркпа, илемлĕ çырнă. Анчах çав вăхăтри условисенче таса хут вырăнне мĕн ал айĕнче пулнă, çавăнпа усă курнă. Валерьян та çапăçура пуçне хунă.

Çырусен тепĕр пуххинче 4 çыру.

Вĕсене Çĕнĕ Урам каччи (Пысăк Упакассинчен) Якку Димитриев Солнечногорск хулинчен хăйĕн çамрăк арăмĕ патне янă. Чуна хумхантаракан вăрăм çырусем. Сталин репрессине пула 1937-38 çулсенче Хĕрлĕ Çарта командирсем самаях чакнă. Çирĕмрен анчах иртнĕ çамрăкăн çар чаçĕн

çумĕнче йĕркеленĕ «Выстрел» ятлă курсра вĕренме тӳр килнĕ. 1940 çулхи чӳк уйăхĕнче илнĕ аттестат çине Косякин генерал-майор алă пуснă. Çар ăсталăхне вĕренсе алла илсен, вăл минометчиксен взвочĕн командирĕ пулса тăнă, ăна асăннă Солнечногорск хули çывăхĕнче зырнаçнă çар чаçне янă. Шăпах çав вăхăталла вăл тăван çемйи патне çыру çырса янă та ĕнтĕ. Чӳкĕн 29-мĕшĕнче вăл: «Хальхи вăхăтра эпĕ командирта ĕçлетĕп», - тет хăйĕн Пăлаки ятлă çамрăк арăмне. Ку çырура хăйĕн патне ялти юлташĕ Çемен Миронов пырса кайни çинчен хыпарлать. Ун урлă килне çамрăк командир хăйне тивĕçнĕ пайран 2 кг сахăр, 2 кг маннăй кĕрпи тата çыру парса яни çинчен пĕлтерет. Якку пичче хăйĕн çулталăкри пĕчĕк ывăлне, Микулана тата савнă мăшăрне манмасть. Ашшĕн кучченеçĕ вĕсене питĕ кирлине ăнланать . Çав вăхăтрах, вăл малалла çырура Çемен ирĕклĕ, юптарса калаçма пултарнине, кăштах хăйĕнчен хушма юратнине асăрхаттарать, арăмне юлташăн сăмахне пĕтĕмпех ĕненмелле маррине çырать.



Яккупа Пăлаки Дмитриевсем (1940 ç.)

Иккĕмĕш çырăвне Якку пичче 1941 çулхи кăрлачăн 19-мĕшĕнче çырать. Ку çырура вăл колхозри улшăнусем пирки пĕлесшĕн: колхоз пуçлăхне мĕншĕн улăштарни çинчен, малтанхи председателе, Гурий Максимовича мĕншĕн кăларма пултарнине ыйтать. Ун вырăнне Никита Кузьмича суйлани интереслентерет. Çакăнта асăннă ентешĕмĕрсен пурнăçĕсем те вăрçăра татăлнă, вĕсем

иккӗшӗ те, фронта кайнӑскерсем, тӑван тӑрӑха текех таврӑнайман. Ҫамрӑклӑх юратупа пуян. Акӑ, Якку патне мӑшӑрӗ ҫырнӑ йӗркесем: «Яша, эпӗ сана хамӑн чӗре тапма чарӑниччен те юратма пӑрахас ҫук», - тени уйрӑмах командира килӗшнӗ. Вӑл та арӑмне «Пӑлаки эпӗ те сана нихӑҫан та манас ҫук», - тет. Килшӗн, ҫемьешӗн, ывӑлӗшӗн тунсӑхласа ҫитнӗскер вӑл арӑмне йӑпатса: «Ку хӗле кӑҫсан, тепӗр хӗл ҫеҫ юлать иксӗмӗрӗн уйрӑм пурӑнасси. Малалла яланах пӗрле пулӑпӑр», - ӗмӗтленет, тупа тӑвать юратупа тулнӑ чӗре.

Ака уйӑхӗн варринелле ҫырнӑ виҫҫӗмӗш ҫырура хӑйӗн пурнӑҫӗ ҫинчен пӗлтерет, ҫавӑнтах ялтан, ҫемьерен чылайранпа хыпар илменни пирки пӑшӑрханать: «Манса кайрӑн-ши эсӗ мана, Пӑлаки?» - ыйтать вӑл ҫырура. Килти йывӑрлӑхсем ҫинчен ним пытармасӑр пӗлтерме ыйтать. «Вӑрмана хӑвалаҫҫӗ-и? Патшалӑх налукӗсемпе хӗсмеҫҫӗ-и? Парса татнӑ-и?»

Ку таранччен упранса юлнӑ юлашки 4-мӗш ҫырӑвне Якку пичче вӑрҫӑ пуҫланиччен икӗ эрне маларах ҫеҫ ҫырнӑ. Те чунӗ сиснипе, хура хут ҫине ҫакӑн пек йӗркесем шӑрҫаланнӑ: «Анчах ҫартан таврӑннӑ салтаксене каялла пуҫтарса илсе каймарӗҫ-и-ха? Йӑкӑнат Зинович Унтрине икӗ уйӑхлӑха киле курма янӑ, тенӗ эсӗ ҫырура. Вӑл чирлипе килнӗ пулӗ, пире халӗ нимӗнле отпуск та парасшӑн мар», - тет вӑл ҫырӑвӗнче. Яков Димитриевичӑн ҫырӑвӗсем музейра ҫаксем кӑна упранаҫҫӗ, ыттисем сыхланса юлайман. Анчах паянхи кунччен упранса юлнисем тӑрӑх та ҫав вӑхӑтри пурнӑҫ тӗсне, ҫынсен шухӑшкӑмӑлӗсене пӗлме пулӑшать. Ҫемье умӗнчи тивӗҫе манманни, ялтан аякра пулсан та килти улшӑнусемпе, хыпарсемпе интересленни, тус-юлташсемпе кӑмӑллӑ пулни - вӑт мӗн тӗп вырӑнта фронтовиксен ҫырӑвӗнче.

Яков Димитриевич Димитриев лейтенант та Упакасси тӑрӑхӗнчен вӑрҫа кайса пуҫ хунӑ 202 ентешӗмӗр шутӗнче. «Хӗрӳ ҫапӑҫура вилнӗ», - тесе ҫырнӑ «Астӑвӑм» кӗнекинче ун ҫинчен. Вӑл ун чухне 25-ре ҫеҫ пулнӑ.

Перасковья Ядрицова ячӗпе яла фронтран ҫитнӗ тепӗр ҫыру. Ӑна упӑшки ҫырса янӑ. Маття урамӗнче пурӑннӑ Ядрицов Спиридон 1942-мӗш ҫулта, ҫу уйӑхӗн 28-мӗшӗнче ҫапла ҫырать: «Эпӗ вӑрҫа кӗни 5 кун ҫитрӗ, халлӗхе аманман-ха.

Ман юлташсенчен пĕри урараан аманчĕ, тепри ҫавăнтах вилсе выртрĕ. Эпир халĕ Старые Руссы патĕнче тăратпăр», - тет вăл. Вĕсенчен пĕр ҫухрăмрах тăшмансем ҫирĕпленсе ларни, каҫсерен нимĕҫсен юррисем е ӳсĕр ҫын, е кашкăр уланă пек илтĕнни ҫинчен тĕлĕнсе пĕлтерет Ҫĕпритун. «Уйăх каялла Кардышов Ваҫилине курса калаҫрăм, хамăрăн ял ҫинчен аса илсе калаҫрăмăр. Ку вăрҫăран киле таврăнсан, ҫĕнĕрен ҫуралнă пекех туйăнĕччĕ мана», - тесе вĕҫлет фронтовик хăйĕн кĕске ҫырăвне. Ĕмĕт пурнăҫланайман,1317-мĕш стрелковăй полкри автоматчик вăрҫă хирĕнчен таврăнайман. 33 ҫулхи ентеш Спиридон Данилович 1943 ҫулхи чӳк уйăхĕн вĕҫĕнче хыпарсăр ҫухалнă.

Ман умра Кӳстӳмĕр каччи Никита Петрович Петров хăйĕн аслă аппăшĕпе йыснăшĕ патне ҫырнă ҫырусем. Пысăк Упакассинчи паллă та хисеплĕ ҫынна, Николай Осиповича, качча тухнă Никита аппăшĕ - Надиш. Кӳстӳмĕр ачи фин вăрҫинчен киле сывă таврăннă. Ялта мирлĕ пурнăҫпа ҫулталăк ытларах пурăнсан, 1941 ҫултах унăн, тата хаяртарах, хăрушăрах тепĕр вăрҫа кĕмелле пулнă. Ҫӳллĕ те тăлпанскер ыттисен хушшинче хăйĕн пысăк вăйĕпе палăрса тăнă. 5 пус укҫана алпа хуҫлатнă, лаша таканне ним мар авнă. Гитарăпа тата купăспа ăста калама пултарнă. 1941-мĕш ҫулхи ҫурла уйăхĕн 2-мĕшĕнче ҫырнă ҫырăвĕнче вăл Карели фронтĕнче ҫапăҫнă чухне аманни ҫинчен пĕлтерет. Тăшман пульли унăн сылтăм ура лаппине витĕр кĕрсе, шăтарса тухнă. Ҫавна пула Никита Петровича Петрозаводскри госпитале сывалма ырнаҫтарнă. «Анчах кунта нумай вăхăт тытмассине малтанах пĕлтерсе хучĕҫ, каллех вăрҫа кĕмелле. Эпĕ 1939 ҫулта финсенчен ҫĕнсе илнĕ хамăрăн ҫĕнĕ границăри кӳлĕ хĕрринче амантăм», - тет Никита (Мĕкĕте). Фронтри салтак ялти ҫынсем мĕн калаҫнипе тата хаҫатсем вăрҫă ҫинчен мĕн ҫырнипе кăсăкланать. Юлашкинчен, ҫырăва вĕҫленĕ май, вăл ҫапăҫусем питĕ вирлĕ пыни ҫинчен, икĕ енчен те ҫухатусем чылай пулни ҫинчен пĕлтерет. «Ку хутĕнче пуҫ чĕрех пока», - тесе вĕҫлет хăй ҫырăвне. Унăн юлашки кунĕсем Псков ҫывăхĕнчи Дно станцийĕ ҫывăхĕнче вĕҫленнĕ. Нимĕҫсем патне тыткăна лекнĕ юлташĕсемпе Никита тарса хăтăлать. Партизансем пат-

не çитсен, вăл кĕçех пысăках мар ушкăнăн командирĕ пулса тăрать. Ун çинчен таврари ялсенче кăна мар, фашистсен хӳрешкисем те пĕлнĕ. Пĕррехинче пĕр сутăнчăк кăтартнипе, ăна тăшман ярса илнĕ. Дно станцийĕнче пурăнакан Зинаида Осипова хăй куçĕсемпе мĕн курнине Кӳстӳмĕр ялне çитернĕ, пысăк, хулăн çыру çырса янă. Нимĕç фашисчĕсенчен чăваш каччин нумай тискерлĕхпе асап тӳсмелле пулнă. Хĕнесе амантса пĕтернĕ хыççăн Никитăна лаша çуни хыçне çыхса лартса, юр тăрăх сĕтĕрнĕ. Шурă юр юнлă йĕрпе сăрланнă. Тыткăна илнĕ чăваш каччине фашистсем сивĕ хурал пӳртĕнче тытнă хыççăн аллине кĕреçе тыттарса хăйне валли шăтăк алттарнă. Кĕпи-тумтирне хывса илсе, çара уран хăварса Никита Петровича пĕтĕм халăх умĕнче персе пăрахнă. 1965 çулта Кӳстюмĕрте паттăрсене асăнса обелиск уçнă, ун ячĕ чи малта çуталса тăрать.



Фронтовиксен ушкăнĕ (1986 ç.)

Музейра Маттяурамĕнче çуралса ӳснĕ Николай Васильевич Бисяков 1942 çулхи пуш уйăхĕн 12-мĕшĕнче хăйĕн аппăшĕ патне янă çыру пур. Киле юлнă шăллĕне купăс илсе пама шантарнă, сăмахне пурнăçлайман, çемьере тăтăшах укçа çитсе пыман, ачан ĕмĕтне пурнăçлама май килмен. Фронтовик çакăншăн пăшăрханса çапла çырать: «Манăн килте мĕн пур тата 2 сехете сутăр, çитмесен костюма та ан шеллĕр. Ку-

пăсне илсе парăр. Эпĕ пĕрех киле çитеес çук», - тет Николай Васильевич хăй каялла çаврăнса таврăнасса шанмасăр.

Анчах шăпи унăн телейлĕ пулнă. Вăрçă хирĕнчен вăл яла сывах таврăнса çитнĕ. Тепĕр çыруне вăл 1946 çулта çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче Германирен çырать: «Ют çĕр маншăн кичем те тискер, инçет çĕртен киле çитме 2-3 чикĕ урлă каçмалла. 6-мĕш çул ĕнтĕ хамăр тăрăхри чи илемлĕ вырăна, вăхăта кураймастăп, кунтан хăçан илсе тухассине те пĕлместĕп, çавăнпа та çырса яраймастăп», - тунсăхласа, кулянса хыпарлать салтак. Чи çамрăк çулсем, уйрăмах юлашки уйăхсем, уссăр иртнĕ пек туйăнать Бисякова. «Пурăнма йывăр-и, камсем кӳрентереççĕ?» - кăсăкланать Николай Васильевич юлашки йĕркесенче. Музейра упранакан çырусен хуçисенчен пĕр вăл çеç яла сывă таврăннă.

Вăрçăра çапăçнă ытти ентешсен кун-çулĕ пирки, шел пулин те, эпир хальлĕхе сахал пĕлетпĕр-ха. Кун çинчен калакан материалсене пухса, вĕсемпе ял çыннисене паллаштарасси кашнин тивĕçĕ. «Вĕсем хыпарсăр çухалнă» текен сăмахсем чĕрене канăç памасăр ыраттарса тăраççĕ. Пирĕн паттăрсен ячĕсене ятранах пĕлмелле. Вĕсем Тăван çĕршыв историне кĕрсе юлма тивĕç.

## ВĔСЕМ ЯЛ СОВЕТĔНЧЕ ĔÇЛЕНĔ

1917 çулхи Октябрьти революци хыççăн ялсенче советсем ĕçлеме пуçланă.

Пирĕн ял Совечĕн тытăмĕнче хăй вăхăтĕнче çак çынсем ĕçленине палăртмалла: Павел Степанович Степановпа Николай Осипович Осипов 20-мĕш ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче. Вăрçă пуçланас умĕн пĕр вăхăт унта Александр Сергеевич Михайловăн ĕçлеме тивнĕ.

Вăрçă хыççăн чылай вăхăт хушши вунă çул ытла ял Совётне Александр Филиппович Филиппов ертсе пынă, ун хыççăн 1961 çултан пуçласа 18 çул хушши пĕр улшăнмасăр Таисия Ильинична Степанова çак ĕçе йĕркелесе пынă. Антон Григорьевич Шордеев хăйĕн пурнăçĕн юлашки 10 çулне ял

совет ĕçне парăнса, тăрăшуллă ĕçленине палăртмасăр иртме çук. Нина Николаевна Яковлева 6 çул хушши самана улшăннă вăхăтра (ял Совечĕ вырăнне ял администрацийĕсем пулса кайнă), вăйне парса ĕçлерĕ. Юлашки 10 çула яхăн çак йывăр лава Елена Васильевна Петрова кӳлĕнсе ăнăçлăн туртса пычĕ, ял халăхĕпе пĕр чĕлхе тупса ĕçлеме нумай вăй хучĕ. Кăçалхи суйлавра Упакасси халăхĕ çак йывăр лава туртма Нина Михайлова Антоновнăна шанса пачĕ.

## ШКУЛ ИСТОРИЙĔНЧЕН

1874 çулччен ку таврара шкулсем пулман. Кӳршĕ ялта, Кушлавăшра, чиркӳ çумĕнче шкул уçăлсан, пирĕн ял ачисем вĕренме унта çӳренĕ. Чиркӳ священникĕ Александр Ломоносов пĕтĕм вĕренӳ ĕçне хăй тĕрĕслесе тăнă. 1889 çул вĕçĕнче Ершепуçĕнче тата Çĕнĕ Мĕлĕшре «грамота шкулĕсем» уçăлнă. 1894 çулта Мĕлĕшри (Нюшинче) шкул хупăнсан вăл хăйĕн документчĕсемпех Пысăк Упакассине куçать. Çав çулсенче учительте малтан Максим Гаврилов (запасри салтак), каярахпа Лев Григорьев (пирĕн шкулта), Гурий Захаров ĕçленĕ. Вĕренекенсен шучĕ шкулĕпе те 18-20 ача çеç пухăннă. Çемен Эл-



Хресчен çамрăкĕсен шкулĕ 1933 ç. - уçăлнă çул.
З.Д.Дмитриев - директор



Шкулти оркестр. 1934 ç.

кер «Кушлавăш уйĕ» очеркĕнче çапла çырнă: «Çав вăхăтра шкултан ютшăннипе унăн уссине ăнланманнисем питĕ нумай пулнă-ха. Ун пеккисем ачисене вĕренме яман. Çапах та çав вăхăтран тытăнса чăваш халăхне ĕмĕртен ĕмĕре хупласа тăнă тĕттĕмлĕх чаршавĕ çурăлса кайнă темелле. Тĕттĕм чăваш хушшине те культура çути ӳкет. Çамрăксенчен чылайăшĕн çырулăха вĕренес, кĕнекесене юратас кăмăлĕ вăранать.»

19-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче 20-мĕш ĕмĕре кĕрсен ентешсенче çуралнă çĕнĕ туртăмсене поэт тĕрĕс хак панă.

Шкулсем ялти хресченсен пӳрчĕсенче вырнаçнă. Пӳрчĕсем тăвăр та тĕттĕм пулнă. Кил хуçисем: Осип Павлов, Борис Васильев (Трофимов), Никифор Алексеев, Николай Кудрявцев. Гурий Захаров учитель ачасен ăсĕнче ырă йĕр хăварнă, вăл вĕсене тарăн пĕлӳ парассишĕн ырми-канми ĕçленĕ, вĕренекенсем те ăна чунтан юратнă. Бĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыракансем: Егор Васильев, Кузьма Сотников, Илья Кураков, Егор Ярчеев, Павел Степанов. 1917-мĕш çулта ялта пуçламăш шкул уçăлнă.

1920 çулта ялти шкула Çемен Элкер ĕçлеме килнĕ. 1921-



Çемен Элкер Упакассинче шкул ачисемпе

мĕш, выçлăх çул, шкулта ют çĕршывсенчен килекен пулăшупа апат çитерме пуçланă, 4 çул вĕренмелли шкула мăн çынсем те çÿренĕ, вĕренекенсен йышĕ çĕре те çитнĕ.

1930-32 çулсенче Упакассинче 7 çул вĕренмелли шкулта 7 учитель вĕрентнĕ, шкул çирĕп хуçалăхпа пурăнакан хресченсенчен туртса илнĕ çуртсенче çĕнĕлле ĕçлеме тăрăшнă. 1933 çулта ялта ШКМ (школа крестьянской молодежи) ĕçе пуçăннă.

Шкултан 10 учитель ытла фронта тухса кайнă, 8 учителĕн пурнăçне тăшман татнă. Вăрçăра пуç хунă вĕрентекенсем: П.И. Иванов, С. Альдемасов, М. Афанасьев, С. Алексеев, И. Михайлов, А.Г. Григорьев, П.С. Семенов (Упакасси шкулĕнче струнный оркестр йĕркелесе янă, халăх хушшинче кăна мар тĕп хула таран концертсемпе çÿренĕ, ун пирки фотоÿкерчĕк пур), З.Д. Шмелев (вăрçăччен шкул директорĕнче вăй хунă). Дмитрий Миронович Миронов учитель фронтран амански тавăрăнсан, кĕске вăхăтранах килĕнче вилсе кайнă.

Вăрçă пĕтсен фронтовик-учительсем шкулсене таврăннă. Пирĕн шкула П.А. Бойков (историпе), Н.А. Алексеев (шкул



Паянхи шкул

директорĕнче нумай çул тăрăшнă), Н.И. Иванов (географипе ĕç урокĕсене ертсе пынă, 60-мĕш çулсем хыççăн вăл тата вĕренекенсем тăрăшнипе шкул пахчинче ӳстернĕ пахча-çимĕçсем Мускава ВДНХ-на тăратма тивĕçнĕ.Чылай çул хушши Евдокия Ивановна Фэдькова Çемен Элкерпе çырусемпе çыхăну тытнă. Поэтăн хăш-пĕр япалисене музей валли упраса пурăннă, шкул историне малалла çырса панă. Ачасене сăвă-калав çырма хăнăхтарнă, литература хаçачĕсем кăларнă çĕре явăçтарнă. П.Н. Кузнецов (физикăпа), П.Н. Нестеров (вырăс чĕлхипе), А.И. Иванов (математикăпа), М.М. Ионов (физкультурăпа) - çак фронтовиксем ачасене çирĕп пĕлӳ нумай пама вăй хунă.Çавăн пекех М.И. Никитина, А.М. Иванова, А.Ф. Алексеева, А.Р. Ионова, М.Д. Димитриева, А.К., Е.А. Димитриевсем ырă ята тивĕçлĕ. Александр Кузьмич Димитриев вĕрентекен çав вăхăтри нумай ача чун-чĕринче çутă йĕр хăварчĕ, вĕсене пурнăçра ырă ĕçсем тума хавхалантарса пыракан ырă тĕслĕх вырăнне юлчĕ.

1960 çулта 7 çул вĕренмелли шкултан 8 çул вĕренмелли, 1965 çулта вăтам шкул пулса тăнă. 1967 çултан пуçласа тăван шкул чăваш халăх поэчĕн Çемен Элкер ячĕпе ĕçлет. 1978-мĕш çулччен шкул тĕрлĕ çуртсенче вырнаçнă пулнă.

Асăннă çултан тин Упакасси ачисем нумай çулсем кĕтнĕ 3 хутлă çĕнĕ çуртра ăс-тăн пухма пуçланă.

Хальхи вăхăтра тăван шкулта С.В.Элкер ячĕпе хисепленсе тăракан тата Вăрçăпа Çар музейĕсем ĕçлеççĕ.

Кунтан вĕренсе тухнă çамрăксем çĕршывăн тĕрлĕ кĕтессисенче хăйсен тавракурăмĕпе, ĕçĕпе палăрса тăраççĕ. Николай Михайлович Тряков - Хĕрлĕ çарта генерал чинне çитнĕ, М.Я. Сябуков - полковник, Саратоври çар академийĕнче ĕçленĕ, И.Н. Николаев полковник, юстици советникĕ, прокурор, Ю.Г. Степанов - Волгоградри трактор завочĕн тĕп инженер-конструкторĕ, А.М. Ионов - потребительсен правинехӳтĕлекен комитечĕн ертӳçи, пĕр тăван Николаевсем - ученăйсем тата ытти те.

## ЭЛКЕР ÇУТНĂ ÇĂЛТĂР

Вăрманлă, уй-хирлĕ Упакасси тăрăхĕ çĕршывăн чи пысăк наградине Ленин орденĕпе Социализмла Ĕç Геройĕ ята тивĕçнĕ Антон Григоьевич Шордеевпа мăнаçланса хăпартланма пултарать. Вăл чăннипех те Элкер çутнă çăлтăр пулса тăрать.



А.Г. Шордеев - Социализмла Ĕç Геройĕ

А.Г. Шордеев ĕмĕр тăршшĕпе хăйĕн тăван тăрăхĕнче - «Трудовик» колхозра ĕçленĕ, кĕтӳ ачинчен тытăнса, хуçалăхпа ял администраци пуçлăхĕсем пулса чылай вăхăт хушши ырми-канми вăй хунă. Пирĕн паллă ентешĕн ĕçне пичетре те тивĕçлĕ хак панă, ун ĕçченлĕхне, тăрăшуллăхĕпе палăртса хунă çулĕнчен пăрăнманнине палăртнă.



Ял пухăвĕ

Илер-ха, тĕслĕхрен, Л. Таллеров çыравçăн «Тарлă çăкăр» очеркĕнчи йĕркесене («Тăххăрмĕш пилĕкçуллăх çыннисем» кĕнекерен) «5 сехетчен çывăракан хресчен - хресчен мар, теме юрататать Антон Григоьевич. Хăй вăл те çĕрлех тăрать, те çывăрмасть те. Тухăç сенкерленнĕ кăна-ха, анчах бригадир Шуркасси урамĕпе утать ĕнтĕ. Йăлтăртатакан сывлăм çинче ура йĕррисем укăлча патĕнченех тăсăлса килеççĕ те пĕр пӳрт умĕнчен теприн умне пăрăна-пăрăна кĕреççĕ. Сывлăм типнĕ çĕре шуркассисем утă çулса ыврăннипе кăштах канса илнĕ, çавасем каллех чашлатма пуçланă, çав вăхăтра ытти бригадăсем тин çеç утă çулма хире тухнă».

Бригадир маттуррине кура, ĕçĕ те ăнса пырать, ĕçлес кăмăла та хăпарать. Кун пек çирĕп çынна бригадăна кăна мар, пĕтĕм хуçалăха шанса пама пулать.

Вăл хăйĕнчен те, ял халăхĕнчен те витĕмлĕ ыйтать, бригадăна мала кăларчĕ пулсан, колхоза та çӳле çĕклĕ, колхозниксене çăкăр-тăварлă тăвĕ.

А.Г.Шордеев колхоза ертсе пыма пуçличчен «Трудовик» колхоз республикăра та, районта та чи кайра пыракан хуçалăхсенчен пĕри пулнă. Пăхар-ха ун чухнехи статистикăна: 7ц

тырă, 40 ц çĕрулми, ĕç кунĕ пуçне 3 пус укçа та çур кило тырă. Ытти колхоз çыннисен умĕнче кун пирки çăвар уçма та вăтанмалла.

Антон Григорьевича хуçалăх пуçлăхне суйласан, вăл чи малтан ĕç дисциплинине хытарассине тимленĕ. Пĕлнĕ вăл, унсăрăн ĕç тухăçне ÿстереймĕн, нимĕнле çитĕнÿ те тăваймăн. Çакна ăша хывса кашни бригадăна çитсе, çынсене пухса уçăмлă калаçусем нумай хутчен ирттернĕ. Малĕмĕтлĕ, хастар ертÿçĕне халăх хисеплерĕ, шанчĕ, унран тĕслĕх илсе ĕнерхинчен паян лайăхрах, ыран тата маттуртарах ĕçлеме тăрăшрĕ. Колхозра тислĕк çителĕксĕррине кура ялсенче пĕтĕм ял-йышпа, шкул ачисене явăçтарса, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл пуçтарса уйсен пахалăхне пуянлатнă. Ĕçлекен çынна хавхалантарма пĕлнĕ çĕнĕ председатель. «Тепĕр çул вăйлă тыр-пул пуçтарсан, халăха кÿрентермĕп»,- шантарнă Антон Григорьевич. Пуçĕнче унăн çĕнĕ шухăшсем çуралнă: вăрман делянкисем илсе фермăсене, кĕлетсене çĕнетмелле. Вăрманта пуртă-пăчкă сасси янраса тăнă, фермăсенче аслисемсĕр пуçне шкул ачисем те уроксем хыççăн пулăшма çÿренĕ, концертсем лартса выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсене савăнтарнă. Çапла 5 çул иртсе кайнă.

Пĕтĕмлетÿсем таврари хуçалăхсене тĕлĕнтерсе янă: кашни гектартан 25ц тырă, 180ц çĕрулми, 600ц выльăх кăшманне туса илме пултарнă колхоз. Ку çеç-и? 1967 çулхи статистика кăтартăвĕсем 1961 çулпа танлаштарсан: 294 ĕне-выльăх вырăнне пин пуç ытла, сыснасен шучĕ 7-8 хут; патшалăха сутакан продукци 5 хут, ĕç тухăçлăхĕ 2 хут, хуçалăхăн пĕтĕм тупăшĕ 4 хут ÿснĕ.

Юмахри пек, ĕненмелле мар, анчах статистика кăтартăвĕсем тĕкĕр çинчи пек, вĕсене пытараймăн.

Ĕçне кура - хисепĕ, телейĕ, савăнăçĕ .Ялсенчи ятлă ĕçченсемпе пĕрлех А.Шордеев та умлă-хыçлăнах ВДНХ выставкинче кĕмĕлпе ылтăн медалĕсене тивĕçет. Çавăнпа пĕрлех ун çумне Чăваш тата ял хуçалăх министерстви, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотисемпе дипломĕсем хутшăнса пыраççĕ.

Социализмла ăмăртура мала тухнăшăн 70-мĕш çулсен-

че «Трудовик» колхозăн ĕçченĕсем наградăсене, грамотăсене çĕнсе илнĕ. 1970 çулта ЦК КПСС-ăн, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн, СССР Совет Министерствипе ВЦСПС-ăн Хисеп Грамотине (В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнипе панă) тивĕçнĕ.

Çав вăхăтрах СССР «Ял хуçалăх Министерствин, кайран ВЦСПС-ăн» куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕ 1970, 1971 çулсемшĕн пирĕн колхозах лекнĕ. Вырăнти производствă резервисене пĕлсе усă курнишĕн 1972 çулта СССР ял хуçалăх Министерстви тата ЦК профсоюзăн Хисеп Грамоти тăван ял çыннисене татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума хавхалантарнă.

Анатолий Миронов «Эпир çĕр çыннисем» («Çĕнтерӳшĕн» хаçатран) статйинче çакна асăнать: «Пĕчĕкрен çитмен пурнăç йывăрлăхне тӳссе ирттерме, çакăнпа пĕрлех ăна çĕнтерме тивнĕ ăна. Пĕрмай калатчĕ: «Ирĕн-каçăн хирте тăрăшаттăм, вăрманта кĕтӳ пăхаттăм, киле таврăнсан ыранхи кун пирки çунатланса мĕн тумаллине палăртса хураттăм».

Хуçалăх ертӳçин çулăмлă хастарлăхĕ ыттисен чĕринче те малтанхинчен тăрăшарах ĕçлеме хĕлхем хăпартнă. Пур енлĕ ĕçре те Шордеевăн шанчăклă пулăшаканĕсем пулнă, вĕсем те хăйсен ертӳçинчен юласшăн пулман, çавăнпах та пулĕ правительство енчен тĕрлĕ орденсене тивĕçнĕ. Сăмахран, Владимир Ильич Герасимов - Ленин орденĕпе Октябрь Революцин орденне. Вăл 7 класс пĕтернĕ хыççăн ашшĕпе Дубравнăйĕнче вăрман енĕпе приемщикра, унтан 14 çул хушши Йĕпреçри леспромхозра тăрăшнă. 1958 çулта колхоза таврăнсан, завхозра, сĕт-çу фермине ертсе пынă, тепĕр вăхăтран колхоз ертӳçин çумĕнче ĕçленĕ. Парторг пулнă май, яланах çынсене хавхалантарса, колхоз председательне пулăшса пынă.



В.И. Герасимов

Ленин орденĕпе Октябрь революцин орденне тивĕçнĕ ен-

тешсенчен тепри Упакассинче çуралса ӳссе Шуркасси каччипе çемье çавăрнă Ксения Димитриевна Прохорова. Ялти шкула пĕтерсен, вăл Йĕпреçе трактористсен курсне вĕренме çӳренĕ. Йывăр вăхăтсенче çамрăк хĕр тракторпа арçынсенчен юлман. Антон Григорьевича председателе суйласан бригадир пулса ĕçленĕ тăрăшуллă та хастар хĕрарăмăн ĕçне правительство пысăк хак панă.



К.Д. Прохорова

Мария Димитриевна Краснова нумай çул хушши сысна ферминче вăй хунă. Кашни амаран нумайрах сысна çури илессипе хăйпе пĕрле ĕçлекен Мария Алексеевна Анисимовăна тата Клавдия Никитична Тазюковăна ăмăртăва чĕннĕ. Пĕр-пĕринчен юласшăн пулмасăр, пĕтĕм хĕрӳлĕхне парса ĕçленĕ хастар хĕрарăмсем. Колхозра, районта Хисеп хăми çинче, район хаçачĕн страницисенче вĕсене час-часах курма пулнă. Мария Димитриевна Краснова ăмăртура çĕнтерсе Октябрь Революципе «Хисеп Палли» орденсене тивĕçнĕ. Ĕне сăвакан Галина Антоновна Римская 3-мĕш степеньлĕ «Ĕç Мухтавĕ» орденне, трактор бригадин бригадирĕ Георгий Дмитриевич Миронов «Хисеп Палли» орденне, Иван Андреевич Еников тракторист «Халăхсен Туслăхĕн» орденне, Галина Семеновна Миронова доярка «Хисеп палли» орденне, Евдокия Федоровна Анисимова «Хисеп Палли» орденне çĕнсе илнĕ.



М.Д. Краснова

Чун-чĕре хĕлхемĕпе, кăмăл-туртăмĕпе ĕçе кӳлĕннĕ Ан-

тон Григорьевич. Пĕр вырăнта тăма юратман ертӳçĕ. Ытти хуçалăхсене, ют çĕршывсене кайса тупса килнĕ çĕнĕлĕхсемпе хамăр колхозра усă курма тăрăшнă Шордеев. Çавна пулах-и, тен, колхоз 35ц тĕш-тырă, 250ц çĕрулми туса илме пултарнă, выльăх-чĕрлĕхпе те 1966-67 çулхинчен кăтартусем тата чылай ӳснĕ.



М.А. Анисимова - манăн анне

Ĕçне кура - мухтавĕ. 1970 çулта ăна Ленин орденĕпе наградăланă. Нумай та вăхăт иртмен унăн кăкăрĕ çинче Ылтăн Çăлтăр, унтан каллех Ленин орденĕ йăлкăшнă.

А.Г.Шордеев обществăллă ĕçре те хăйĕн хастарлăхĕпе палăрса тăнă. Вăл темиçе созыв хушши ЧАССР Верховнăй, район тата ял совечĕн депутачĕ пулса, сессире ял хуçалăхне тĕреклетес тесен мĕнле ĕçсем туса ирттермелли пирки канашсем панă. Юлашки 10 çулне вăл Пысăк Упакасси ял Советне ертсе пырас ĕçре вăйне шеллемесĕр ĕçленĕ. Вăл тăрăшнипе яла çитме асфальтлă çул сарăлчĕ, çĕнĕ складсем, ферма çурчĕсем, колхоз правленийĕ, магазинсемпе пекарня тата 3 хутлă капăр шкул ӳссе ларчĕ. Чăнах та ырă йĕр хăварчĕ Антон Григорьевич Упакасси тăрăхĕнче. Çĕршыв унăн пысăк та курăмлă ĕçне-хĕлне тивĕçлĕ хакланă. Ăна Чăваш АССР-ĕн Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхăн Хисеп Кĕнекине кĕртнĕ.



И.А. Еников - паллă тракторист пулнă

# ПИРĔН ЕНТЕШСЕМ - УЧЕНĂЙСЕМ

Пирĕн ентешсем ĕçпе кăна мар ăс-тăн енчен те маттур çынсем. Çемен Элкер акса хăварнă вăрлăх лайăх çĕр çине ӳксе çирĕп те шанчăклă хунавсем пачĕ. Паянхи кун тĕлне тăван ял сăпкинче çуралса, унăн урамĕсенче выляса ӳснĕ, кунти шкулта вĕренсе çителĕклĕ пĕлӳ илсе, тарăнрах ăс пухма аслă шкулсем пĕтерсе, наука тĕлĕшĕнчен самаях пысăк утăм тунă ентешсем чылай. Вĕсем çĕршывăн нумай кĕтесĕсенче тĕрлĕ енлĕ професси шайне ӳстерсе пысăк ученăйсем пулса ĕçлеççĕ.

Пурин çинчен те аса илме май килмĕ, анчах Малтикартишĕнчи пĕр çемьере çуралса ӳснĕ тăвансем Ваçилипе Анатули Николаевсем пирки каласа хăварас килет. Иккĕшĕ те малтан ялти шкулта пĕлӳ илнĕ. Анатули 6 клас вĕренсе пĕтернĕ хыççăн Кӳкеçри интернатра, кайран Пенза хулинче приборсем тăвакансене вĕрентекен техникумра, унтан çав хуларах



А.Н. Николаев - техника наукисен кандидачĕ



В.Н. Николаев - профессор, техника наукисен докторĕ

асăннă специальноçпе аслă шкул пĕтернĕ. 1972-77 çулсенче çамрăк ентеш Ленинградри А.Ф. Можайский ячĕпе хисепленсе тăракан Военно-инженарнăй академин курсанчĕ, ку академие ăнăçлă пĕтернĕ хыççăн, Оборона министерствин наукăпа тĕпчев тата тĕрĕслев институтĕнче лабораторин пуçлăхне çитнĕ. Подполковник хальхи вăхăтра пенсире пулсан та пĕр пысăк предприятире тĕп инженер пулса ĕçлет. Анатолий Николаевич чылай наградăсене тивĕçнĕ, техника наукисен кандидачĕ, 60 наукăллă ĕçĕн, 5 изобретенин авторĕ.

Унăн шăллĕ, Василий Николаевич, ялти шкулта 8 клас вĕреннĕ. Уроксем хыççăн вăл тĕрлĕ мероприятисене активлă хутшăннă. Уйрăмах Ваçça клубри сцена çинчен Çемен Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэмăри: «Кушлавăш текен 12 ял уйĕ» йĕркесен пысăк пуххине сулмаклăн, чĕрене тивмелле, пĕтĕм ял-йыш тĕлĕнмелле пăхмасăр калани паянхи кун нумайĕшĕн асĕнче юлнă. Ашшĕсĕр ӳснĕскерне, Хусанти Суворов училищине вĕренме илнĕ. Малалли пурнăç çулĕ вĕсен иккĕшĕн те пĕр пек выртнă. Можайски ячĕпе тăракан Çар академине ăнăçлă пĕтернĕ хыççăн иккĕш те Оборона министерствин пĕр наукăпа тĕпчев институтĕнчех вăй хунă. Василий Николаевич Управлени пуçлăхне çитме хевте çитернĕ. Полковник, техника наукисен докторĕ, çав вăхăтрах Раççей Правительствин наукăпа техника облаçĕнчи лауреачĕ. Ун кăкăрĕ çинче 9 медаль йăлкăшать. 160 наукăллă ĕç, 12 изобретени тума ăс, тавçăрулăх çитернĕ ентеш - профессор. Унăн пултарулăхне кура ăна Раççей Федерацин Наукăпа вĕрентӳн министерствин Аслă аттестаци комиссин Эксперт Канашĕн членне, институтри диссертаци совечĕн пуçлăхне суйланă. Чăнахах та мăнаçланма, мухтанма пултаратпăр эпир кун пек пысăк тӳпене хăпарма вăй, ăс çитернĕ ентешсемпе. Чыс та мухтав вĕсене!

# ÇĔНĔЛĔХ ÇĔНТЕРСЕ ПЫРАТЬ

Пурнăç, юханшыв пек, пĕр вырăнтах тăмасть, шав малаллах шăвать. Пĕр йĕрке вырăнне тепĕр тĕрлĕ система кăларса тăратать. Анчах социализмра пурăнаттăмăр, сисмерĕмĕр капитализм урапи çине куçрăмăр. Пачах урăхла, тӳнтерле тесен те йăнăш пулмасть. Тĕп идеологине пăхăнса истори урокĕсенче ачасене социализмăн лайăх енĕсене çеç, капитализмăн вара - япăххисене уçса пама тăрăшнă. Çулсерен, 1917-мĕш çултан пуçласа, хамăра та харпăр хăй тĕллĕн, уйрăм çын суту-илӳ туни килĕшӳллĕ мар пулăм, пĕтĕмпех халăхăн, пĕрлĕхлĕ пуянлăх, ĕç пулмалла, тенĕ - çакă пирĕншĕн тĕп закон пулнă та. 15 çул каялла пирĕн пурнăçа рынок йĕркисем вирхĕнсе кĕрсен, нумайăшĕ аптраса ӳкрĕмĕр, çухалса каяканнисем те нумай пулчĕç. Каярахпа тин рынок системинче те лайăх енсем пуррине хамăр çинче туйма пуçларăмăр. Тавçăруллăраххисем нумай шутласа тăмарĕç, çĕнĕ йĕркесемпе, указ постановленисемпе килĕшӳллĕн хăйсем тăрăшнипе ĕçе, пурнăçне çĕнĕлле йĕркелерĕç, предпринимательсем пулса тăчĕç. Çутçанталăк панă пултарулăхпа, çемьере туптанă ĕç мелĕпе тата хăйсен пуçарулăхĕпе йĕркеллĕ ĕçлесе кайрĕç.

Пирĕн тăрăхра та кун пек çынсем сахал мар. 10 çула яхăн каялла Йĕпреç поселокĕн хĕрринче «Килти сĕтел-пукан» фабрики ĕçлеме пуçларĕ. Ăна пуçарса яраканни тата пĕлсе ăнăçлă ертсе пыраканни - Николай Андреевич Корнилов - хамăр ентеш. Унăн ĕçĕпе коллективĕ çинчен нумай калама пулать. Патшалăх умĕнчи налуксене вăхăтра тӳлесе тăни тата ĕçлекенсене тивĕçлĕ ĕç укçипе хавхалантарма тăрăшни çак предприятине ыттисенчен лайăххипе уйăрса тăрать. Конкурентсем нумайланнипе ĕç йĕркине тĕпрен улăштарма та тивет паянхи кун. Пĕр продукци вырăнне тепĕр продукци кăларма пуçласси нумай вăй, укçа-тенкĕ тата ертӳçинчен пысăк тавçăрулăхпа чăтăмлăх ыйтаççĕ. Николай Андреевич ĕçне хакласа хаçатсенче пĕрре мар палăртнă. Çав вăхăтрах вăл паллă спонсор шутланса тăрать (кун пирки районти учительсен конференцийĕнче те темиçе çын та ырă сăмахсемпе асăнчĕç). Шкулти

Çар музейне уçма тата çак кĕнекене кăларма та вăл чылай пулăшрĕ.

Пĕр тăван Ярчеевсене, Çеркейпе Петĕре те палăртса хăварас килет. Вăрман ĕçĕнче е ял хуçалăх ĕçĕнче пуçланă ĕçе ăнтарса пыраççĕ пиччĕшĕпе шăллĕ. Пĕтĕм халăха час-часах укçасăр концертсемпе савăнтарма та манмаççĕ вĕсем.

Вăрман енĕпех предпринимательсем: Алексей Ерилеев, Геннадий Петров, Вячеслав Ерилеев, Геннадий Лермонтов (Шуркассинчен). Халăхран сĕт-çу пухассипе, вăхăтра кирлĕ çĕре çитерсе парас енпе Евгений Самарин ăнăçлă ĕçлет. Упакассинче райпон тĕп лавкки çумĕнче икĕ мини-киоск суту-илӳ тума пуçлани те халăхшăн усăллă, кирлĕ пулăм. Лавккасене хамăр ентешсемех, Шĕпекеч каччисем: Саша Леонтьевпа Николай Васильев уçрĕç. Анчахрах тепĕр магазин уçма хатĕрленсе Петровсен çемйи никĕс ярса хăварчĕ. Çапла Упакасси тăрăхĕ çĕнĕ пулăмсемпе пуянланса, çĕнелсе пырать.

Кун пек ырă ĕçсене тума пултаракан хастар та ӳркенмен çынсем татах та тупăнасса шанаççĕ упакассисем.

## ЮРАТНĂ ПОЭТĂМĂРА, ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРЕ

Çăлтăрсем те пурте çутатмаççĕ,
Хăшĕ тĕлкĕшет пĕр хăйшĕн çеç.
Сӳрĕк вăййине çынсем туймаççĕ,
Çутине сапмаççĕ пит инçе.
Сăвăçсен шăпиййĕ те çаплах-тăр:
Пĕри улăп, тепри мĕскĕн чун.
Улăп сăвăçпа тĕнче мухтантăр,
Мĕскĕн сăвăç кирлĕ мар ку чух.
Çулăмлă чĕре, Çемен Элкерĕм,
Тайма пуç тăван халăхунтан.
Эс Кушлавăш тăрăхне çĕклерĕн,
Тав тăватпăр çĕкленсе чунтан.
Сăвăçсем вилсессĕн те вилмеççĕ,
Вĕсен ячĕ юлĕ ĕмĕре.
Элкер, чăн та, çутă çăлтăр теççĕ,
Апла çунтăр çӳллĕ тӳперех.

Эсĕ пирĕнтен уйрăлни кĕçех 40 çул çитет. Упакасси çыннисем, вĕсем çеç-и, пĕтĕм Кушлавăш тăрăхĕнчи халăх Сан ятупа чăннипех мухтанать, Сана чĕрере тытса ас туса тăрать, Эс çырса хăварнă кĕнекесене юратса вулать.

Сан кĕнекӳсенче манми вырăнсем, çывăх сăнарсем çĕнĕрен вăй илеççĕ, пире Санпа çыхăнтараççĕ. Творчествăллă ĕçре, хаклă поэтăмăр, Эсĕ ялан хăвăн хĕрӳлĕхӳпе, тавçăрулăхупа уйрăлса тăнă, лăпланса пурăнма пултарайман, «хурçă карапла» шав малалла ишнĕ. Аллунтан хутпа кăранташ кайма пĕлмен, пуçăнта, чĕрӳре çĕнĕ шухăшсем, ĕмĕтсем иксĕлмен. Пурнăç тăршшĕпех тĕрлĕрен йывăрлăхсемпе кĕрешсе çĕнтерсе пынă Эсĕ. Çаксем пĕтĕмпех Сана пысăк калăплă произведенисем çырса хăварма пулăшса тăнă.

Юратнă поэтăмăр, тăван халăх шăпи Саншăн яланах çывăх пулнă, пурнăçри тӳнтерле хăш-пĕр енсем чĕрӳне самай хумхантарнă. Санăн «Пурнăçра икĕ япала кирлĕ» хайлаври йĕркесене ентешсемпе пĕрле пăхса тухар-ха: «Мухтавлăхра пурăнас тесен пурнăçра 2 япала кирлĕ: пĕри пурлăхшăн

тăрăшни, тепри ăслăлăхшăн тăрăшни пулать... Çапла пирĕн чăваш хресченсем: пурлăхшăн тăрăшнипе тĕнчере мĕн-мĕн пуррине те, мĕн пулнине пĕлмеççĕ, пĕлесшĕн те хыпмаççĕ, çырура ăслăлăха вĕренсе, ун урлă çут тĕнчене курасшăн та мар... Çапла эпир ку тĕнчере хамăрăн пурлăхшăн анчах пурăнсан, пурăнма пулать-и вара вăл?!... Эпĕ ку сăмахсене усал сунса мар, чăваш халăхне пурне те тăван вырăнне хурса, ырă сунса калатăп». Çĕр çывăрмасăр ирттернĕ Çемен Элкер çак шухăшсемпе.

Паянхи куншăн уйрăмах çак йĕркесем питĕ вырăнлă, тесе шутлатăп эпĕ. Çĕнĕ капитализм йĕркипе пурăнма пуçласан çамрăксен туртăмĕ ăс-тăн тĕнчинчен ытларах укçа енне куçрĕ. Чун апачĕ çинчен мансах ӳтпĕве илемлетесси, лăплантарасси çинчен çеç шутлама пуçларăмăр. Эпĕ те, Çемен пичче, Сан пекех, пур çамрăка та ку сăмахсемпе айăплассшăн мар. Ыррине, илемлĕхе ăша хывакансем яш-кĕрĕм хушшинче сахал мар. Çавах та ку енĕпе пирĕн пăшăрханмалли нумай. Эс калашле «Мĕншĕн пырпала хырăм-



Çемен Элкер 1950 ç.

шăн тăрăшсах пуҫа ҫĕклесе ҫут ҫанталăка йĕри-тавра пăхма та» ершейместпĕр-ши эпир? Чăваш республикинче пĕтĕмпе 1700 ытла ял. Вĕсен шутĕнче пысăккисем те, пĕчĕккисем те пур. Кашнин хăйĕн пурнăҫĕ, ҫитĕнĕвĕ, уйрăмлăхĕ. Ялсем ҫĕнелсе илемленни куҫ умĕнче. Анчах ялти ҫынсен чунĕсем ҫĕнелсе лайăхланаҫҫĕ-ши? Эпир пĕчĕк чух ҫитĕнсе ҫитнисен ҫăварĕнчен усал сăмах тухнине илтмен. Халĕ, шел пулин те, темиҫĕ хутлă сăмахсене калакансене ытлашши шырамах та кирлĕ мар. Авалрах пирĕн тăван-хурăнташсем ҫулталăкне пĕрре е икĕ хутчен ҫеҫ хăна пуҫтарса ĕҫнĕ пулсан, халĕ вара автан пуссан та, пуснă автана икĕ кун «ҫăватпăр». Ялта эрех чури пулса тăнă ҫынсем нумайланса кайрĕҫ. Кун пекех пурăнсан, мĕн пулĕ-ши Упакасси ялĕнчен? Ҫавăн пирки те асăрхаттарман-ши Эсĕ пире, тăван поэтăмăр, ăс-тăн, чун пуянлăхĕ пирки сăмах пуҫарсан? Мĕн каланă пулăттăн-ши Эсĕ ман ентешсене паянхи кун?

Сана уйрăмах яш-кĕрĕм хăйĕн пушă вăхăтне мĕнлеирттерни чылай шухăшлаттарнă. Тен, ҫавăнпах вĕсене тăван тавралăх илемне курччăр, ăнланччăр, ăша хывччăр тесе, ун историйĕпе кăсăкланччăр тесе тăван ял ҫинчен чылай ăслă йĕркесем хăвартăн. Ҫапла майпа хăвăч ҫамрăк ентешӳсене пурнăҫра йăнăш утăм тăвассинчен асăрхаттарасшăн пултăнши? Эсĕ туптанă ăс-тăн, чун-чĕре пуянлăхне паян упрама, хаклама пĕлетпĕр-ши эпир?

1961 ҫулта ака вĕҫĕнче Эсĕ Василий Иванович Хурамал патне янă ҫырура ҫапла ҫыратăн: «Халĕ эпĕ «Пĕр ял историйĕ» ятлă очерк ҫырма хатăрленетĕп, материалсем те чылай пухрăм. Ку темăпа роман е пысăк повесть ҫырсан питĕ аван пулĕччĕ, анчах халĕ вĕсене ҫырма вăй-хал ҫитеймест пулмалла ĕнтĕ». Хăй пурнăҫĕн юлашки ҫулĕсенче вăл пĕрехмай шухăшсенче тăван вырăнсене, таврăннă, хăй ас тăвакан, хисеплекен ҫынсене аса илнĕ. В.Г.Родионов академик (вăл Хура Ҫырмаран) тăрăшнипе Ху ҫырса хăварнă дневник тата Хăвăн хăш-пĕр халиччен пичетленмен хайлавусем тăрăх 100 ҫулхи юбилейӳ тĕлне «Хурапа шурă» ятлă кĕнеке тухрĕ. Ку пулăм, Ҫемен Элкер, Санăн ĕмĕтӳсене чылай пурнăҫлама пулăшрĕ. Ҫак хамăн пĕчĕк кĕнекене кăларассишĕн тăрăшнă чух-

не эпӗ: «Поэтӑмӑр мӗн калanӑ пулӗччӗ-ши?» - тесе пӗрре мар шутланӑ. Пӗртак та пулин ун шухӑшӗсене пурнӑҫларӑм пулсан, хама чӑнахах та телейлӗ ҫын теме пултарӑттӑм.

Юратнӑ ентешӗмӗр, Санӑн яту халӑхра пурӑнать. Паянхи кун та Чӑваш ҫӗршывӗнче Эсӗ ҫӑлтӑр евӗр ялкӑшса ҫунатӑн. Урамсем, скверсемпе шкулсем, музейсем Сан ятупа хисепленсе тӑраҫҫӗ. Эсӗ ҫак ҫӗр ҫинче ырӑ ят хӑвартӑн. Сана хӑй сӑпкинче утюкка сиктерсе пурнӑҫӑн аслӑ ҫулӗ ҫине кӑларнӑ Мӑн Упакасси ҫулран ҫул ҫӗнелсе пыни куҫ умӗнче. Ҫавӑнпа та вӑл пире ҫак ҫӗр ҫинче чи илемлӗ, чи ӑшӑ кӗтес пек туйӑнать.

Малашлӑхра та вӑрӑм, пархатарлӑ кун-ҫул пултӑрччӗ сана, тӑван ялӑм!



# УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА

1.Ревизские сказки. Посемейные и рекрутские списки. Планы селений 1878-1894,Ф.65, Д32.

2.Журналы приговоров. Ведомости. Дело о сборе географических сведений по Ядринскому уезду. Ф.3,1731-178, Д261.

3.Количество школ и учащихся. Мобилизация на войну в 1914 г. Списки крестьян.Ф.16, 1865-1918,Д2070

4.Уездные по воинской повинности.Ф312,оп.1,1874-1918,Д4346.

5.Церкви. Справочная книга Казанской епархии.Фондов всего 182,1744-1936,Д3336.

6.Метрические книги Ядринского уезда Байсубаковской волости, д.Б-Абакасы.Ф557,1863-1918,Д.355.

7.Краткий отчет о состоянии церковно-приходских школ грамоты Казанской епархии за 1891-92гг.Д1350.

8.Списки населенных пунктов Российской империи (Казанская губерния) АПБ,1806.

9.Сборник материалов по Казанской губернии.

10.Населенные пункты Чувашской АССР 1917-81гг.Справочник. Чувашское книжное издательство, Чебоксары,1981.

11.Çемен Элкер «Хурапа шурă». Тĕрлĕ вăхăтра çырнисем. Чăваш кĕнеке издательстви,1994,с.151-201,с.362-364.

12.Çемен Элкер. Çырнисене пухса кăларни. 3-мĕш том,-Чăваш кĕнеке издательстви,1962.

13.Çемен Элкер. Çырнисене пухса кăларни. 5-мĕш том,1964,с.284.

14.Çемен Элкер «Хĕн-хур айĕнче».

15.А.К.Магницкий-исследователь культуры и быта чувашей. Чебоксары,1989.

## ТУПМАЛЛИ


Тăван ял 4
Ум сăмах 5
Тăван ял историйĕ 6
Тĕрек таврашĕ 12
Ярмук йăхĕ çинчен 22
Тумиксем 24
Тимаксем 27
Ериле йăхĕ 31
Ярчи йăхĕ 35
Поэтăн пĕрремĕш юратăвĕ 37
Утарсем 40
Армансем 42
Тĕрлĕ енчен паллă çынсем 43
Лавккасем 43
Пĕрремĕш тĕнче вăрçи 46
Айăпсăр айăпланнисем 49
Пирĕн ентешсем Аслă вăрçăра 52
Виçĕ орден кавалерĕ 59
Эрхип пиччен аса илмелли нумай 61
А.Невский орденĕн кавалерĕ 63
В.Н.Еников 65
Тĕрек таврашĕ Аслă вăрçăра 66
Салтак çырнă виçкĕтеслĕ çырусем...музейра 78
Вĕсем ял Советĕнче ĕçленĕ 84
Шкул историйĕнчен 85
Элкер çутнă çăлтăр 89
Пирĕн ентешсем ученăйсем 95
Çĕнĕлĕх çĕнтерсе пырать 97
Юратнă поэтăмăра, хаклă ентешĕмĕре 99
Усă курнă литература 103



